А 86
Ч-46371

Т. В. Артемьева
С. Г. Михайлова

# Чăваш ача садĕнче тăватă çулхи ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарасси



Национальная библиотека ЧР
4-046371

Обязат
Б74.1
А86

Раççей Федерацийĕн вĕренÿпе ăслăлăх министерстви

Федерацин аслă професси пĕлĕвĕ паракан
патшалăх бюджет вĕренÿ учрежденийĕ
«И. Я. Яковлев ячĕллĕ чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

**Т. В. Артемьева**
**С. Г. Михайлова**

# Чăваш ача садĕнче тăватă çулхи ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарасси

Шупашкар
2014

УДК 373.2.036(470.344) (075.8)
ББК 74.100.544.1(2 Рос.Чув)я73
А 862

Артемьева, Т. В. Литературное образование детей четвертого года жизни в чувашском национальном детском саду : учебно-методическое пособие / Т. В. Артемьева, С. Г. Михайлова. – Чебоксары : Чуваш. гос. пед. ун-т, 2014. – 143 с.

Печатается по решению ученого совета ФГБОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева» (протокол № 5 от 29.11.2013 г.).

Допущено Министерством образования и молодежной политики Чувашской Республики в качестве учебно-методического пособия для дошкольных образовательных учреждений

Рецензенты:

Иванова Н. В., кандидат педагогических наук, доцент кафедры теории и методики дошкольного образования и домоведения ФГБОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева»;

Егорова Л. Г., воспитатель МБДОУ «Детский сад № 46» г. Чебоксары.

В учебно-методическом пособии рассматриваются вопросы литературного образования детей четвертого года жизни. Раскрываются методические аспекты педагогической деятельности воспитателя, приведены конспекты непосредственно образовательной деятельности.

Предназначено для специалистов дошкольного образования, студентов.

4-4637

© Артемьева Т. В., Михайлова С. Г., 2014
© ФГБОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева», 2014

Национальная библиотека Чувашской Республики

## Умĕн калани

Обществăра тĕрлĕ улшăну пулса иртет. Вĕсем вĕрентӳ ыйтăвĕсене те тӳррĕмĕнех пырса тивеççĕ. Кĕçĕн çулхи ачасене вĕрентес, ăс парас ĕç пирки те çакнах каламалла. Халиччен çак ĕçре пĕлӳ, ăслай парассине пĕрремĕш вырăна хунă пулсан халĕ сапăрлав ыйтăвĕсем мала тухаççĕ. Ачасене кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен аталантарасси пĕлтерĕшлĕ. Сапăрлав ĕçĕнче вара ӳнер витĕмĕ питех те пысăкки куçкĕрет. Вăл кăмăл-туйăма хускатать, чуна уçать.

Илемлĕ литература – ӳнер искусствин пĕр тĕсĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ пĕчĕк пепке пуласлăхĕшĕн самай пысăк. Ача садĕнче ачасен литература аталанăвĕн никĕсĕ хывăнать. Çавăнпа пĕчĕккисемпе ĕçленĕ чухне вĕсене кĕнекепе кăсăклантарассине, илемлĕ литература хайлавĕсене туйăмлă итлеме-йышăнма хăнăхтарассине уйрăмах тимлемелле.

Ку тĕлĕшпе воспитатель-педагога пулăшма тивĕçлĕ вĕренӳ хатĕрĕсем те çителĕклĕ пулмалла. Шел пулин те, паянхи куна ача сачĕсем валли ятарласа хатĕрленĕ çакăн йышши вĕрентӳ пособийĕсем сахалрах, кĕнеке çӳлĕкĕсем пушăрах.

Сĕнекен пособие чăваш ача сачĕсенче тăватă çулхи ачасемпе ĕçлеме тесе калăпланă. Унта ку çулхи ачасен литература аталăнăвне йĕркелесе ярас ĕç меслетлĕхне, занятисен йĕркине çырса кăтартнă.

Пособи чăваш ача сачĕсенче кĕçĕн çулхи ачасемпе ĕçлекен педагогсемшĕн тивĕçлĕ пулăшу пуласса шанас килет.

Кĕнекепе ĕçленĕ май çуралнă шухăшсене авторсем патне çитерсен аван пулнă пулĕччĕ.

Авторсем.

## Ачасен литература аталăнăвне тĕрĕслесси

Хальхи тапхăрта виçĕ-тăватă çулхи ачасен литература аталăнăвне тĕрĕслеме сĕнекен ятарлă методика тупма йывăр. Çапах та çак тĕллевпе А. И. Максаковăн аслă ушкăнри ачасен чĕлхе пултарулăхне тĕрĕслеме йĕркеленĕ системăри „Ӳнер тата пуплев ĕçĕ-хĕлĕ" текен пайне илме пулать пулĕ. Паллах, хаклавне 5-6 çулхи ачасем валли калăпланине шута илсе ăна кирлĕ çулхисен аталăнăвĕпе шайлаштарса улăштармалла.

Эпир те асăннă авторăн методикинчи ĕçсене кĕçĕннисен литература аталăнăвĕн задачисене тĕпе хурса улăштартăмăр. Диагностика содержанине çак ăслайсемпе хăнăхусене тĕрĕслесси кĕчĕ:

– ачасем илемлĕ хайлавсене пĕлни (юмахсем, калавсем, сăвăсем);

– илемлĕ хайлавсене вĕсен сыпăкĕсенчен палласа илни;

– хайлава тимлĕ итлеме, тишкерме пĕлни;

– инсценировкăсене, хайлав тăрăх йĕркеленĕ вăйăсене хутшăнни;

– кĕнекене пĕтĕмĕшле мĕнле йышăнни.

Тĕрĕслеве çапла йĕркелеме пулать тетпĕр.

Пĕрремĕш ĕçпе килĕшӳллĕн ачаран вăл мĕнле юмах, калав е сăвă пĕлнине ыйтмалла.

Хуравĕсене çапла хакламалла:

1) программăра палăртнинчен те ытларах пĕлет (а);
2) программăра палăртнă чухлĕ пĕлет (б);
3) программăра кăтартнă хăш-пĕр хайлавсене пĕлмест (в).

Баллсене çакăн пек пама пулать:

1) *а* ушкăн – 3 балл (çӳллĕ шай),
2) *б* ушкăн – 2 балла (вăтам шай),
3) *в* ушкăн – 1 (çителĕксĕр шай).

Ытти тăвată ĕçе те çак йĕркепех хаклама пулать.

Иккĕмĕш ĕç валли ачасене халиччен паллаштарнă хайлавсен сыпăкĕсене илмелле. Тĕслĕхрен, „Параппан" (У. Мишши), „Эпĕ ӳкĕнни" (И. Яковлев), „Çăмха" (Н. Ыдарай):

1. „...*Атте паян пасартан*
*Илсе килчĕ параппан*..." (У. Мишши „Параппан");

2. «...*Кĕркури ăнсăртран манăн пӳрт пеккине ишсе пăрахрĕ. Унщăн эпĕ Кĕркурие çиленнтĕм те ăна хăма татăкĕпе пуçĕнчен*

*пат! тутартăм. Кĕркури йĕре пуçларĕ. Анне илтрĕ те: „Мĕншĕн тиврĕн. Хăвна тивсессĕн аван пулĕ-и? Авă ĕнтĕ вăл киле каять; кампа выльăн вăл кайсассăн?" – терĕ»* (И. Яковлев „Эпĕ ўкĕнни");

3. „*...Кун чухлĕ курса çўренипе çитет пулĕ», – тет вăл хайĕн ăшĕнче. Çапла шухăшласа илет те каялла çăмхаланса ватă асаннен кивĕ арчине кĕрех выртать...*" (Н. Ыдарай „Çăмха").

Воспитатель çак сыпăксене вулать е калать, унтан ачасене малалла тăсма сĕнет, вĕсем мĕнле хайлавсенчен пулнине ыйтать.

Хаклав виçи: ача хайлава хăех аса илет (а), йăнăшсем ярать (б), воспитатель пулăшнипе çеç аса илет (в).

Виççĕмĕш ĕç валли (хайлава мĕнле ăнланнине, тишкерме пĕлнине тĕрĕслесси) Ю. Смирновăн „*Чип-чип*" калавне илме пулать.

Воспитатель калава вуласа парать, ыйтусене хуравлама ыйтать. Ыйтăвĕсене палăртнă чухне çакна асра тытмалла: ача хайлава мĕнле йышăнни; унти ĕç-пуç мĕнле аталанса пынине курни; персонажсен хăтланăвĕсене курма-хаклама пултарни; хайлаври хăш-хăш самантa куç умне кăларса тăратма пултарни.

Тĕслĕхрен, асăннă хайлав тăрăх çакăн пек ыйтусем пама пулать: *Сана ку калав килĕшрĕ-и? Калав кам çинчен? Калавра мĕн пулса иртет? Нина мĕншĕн йĕрсе ярас вĕçнех çитрĕ? Асламăшĕн чăххисем чăнах та япăх-и, вĕсем чăннипех Нинăна кўрентересшĕн-и? Эсĕ Нина çинчен мĕн калăн?*

Протоколне çакăн пек çырма пулать: ача хайлава туллин те тарăн ăнланать, тишкерме пултарать (а), ăнланма, тишкерме йывăрланса тăрать (б), аслисем пулăшнипе кăна хуравлать (в).

Тăваттăмĕш ĕçе сăнав евĕрлĕ ирттермелле. Эрне тăршшĕпе ачасен хутшăнăвĕсене, вăййисене сăнамалла. Вĕсем хайлаври сюжетсене, персонажсене хăйсен вăййисене кĕртеççĕ-и, çак темăпа çыхăннă вăйăсем йĕркелеççĕ-и?

Протокалта çакна палăртмалла: вăйăсене хастар хутшăнать, хăй тĕллĕн йĕркелеме пултарать (а), хутшăнать, анчах та сайра, хăй тĕллĕн йĕркелемест (б), кун пек вăйăсене хутшăнмасть, хăй те йĕркелемест (в).

Эрне хушши пыракан сăнав вăхăтĕнче пиллĕкмĕш ĕçе те ирттермелле. Вăл çакна палăртассипе çыхăннă: ача кĕнеке юрататъ (час-часах алла илет, ўкерчĕкĕсене тимлет, вуласа пама ыйтать) (а), кĕнекепе хушăран çеç интересленет (б), кĕнеке пурри-çукки ачашăн пур пĕрех (в).

Ачасен литература аталăнăвĕн шайне пĕтĕмĕшле палăртма кашни ĕçпе пухнă баллсене хушмалла. Пилĕк ĕçпе ача чи нумаййи 15 балл, чи сахалли – 5 балл пухма пултарать. Çавăнпа та вĕсен аталанăвĕн виçĕ шайне çапла уйăрăпăр:

1) çӳллĕ шай – 13-15 балл;
2) вăтам шай – 9-12 балл;
3) çителĕксĕр –5-8 балл.

**Кĕçĕн çулхи ачасене литературăпа паллаштарас меслетлĕх**

Ачасене литературăпа паллаштарас ĕçри тĕп ыйтусенчен пĕри – ун шалашне, вулав-итлев картине палăртасси.

Ачасене паллаштармалли хайлавсен шутне калавсем, юмахсем, сăвăсем, сăвăлла юмахсем, тупмалли юмахсем, сăпка юррисем, чĕнӳ-йыхрав сăввисем тата ытти те кĕмелле. Тема тĕлĕшĕнчен вĕсем тĕрлĕ енлĕ пулмалла: ача-пăча пурнăçĕ, вĕсен вăййи-кулли, теттесем, аслисен ĕçĕ-хĕлĕ, çут çанталăк, чĕр чун тата йывăç-курăк тĕнчи. Хайлавсене суйланă чухне ку çулхи ачасем ытларах фольклор, сăвă енне туртăннинине шута илмелле.

Ача сачĕсен хальхи программисенче „литература вулавĕпе" эрнере пĕр заняти ирттерме палăртнă. Паллах, ку çителĕксĕр. Аслисен кашни кун ачасене вуласа е каласа пама вăхăт тупмалла. Çакă ачасен режимĕнче яланах пĕр вăхăтра иртсен татах та аван пулĕччĕ. Калăпăр, çывăрса тăнă хыççăн. Ку ĕçе темипе содержани тĕлĕшĕнчен илсен *заняти-ĕçлĕ калаçу* теме пулать.

Кĕçĕн ушкăнра литературăпа паллаштарас тĕлĕшпе Л.М. Гурович çак задачăсене палăртать:

– ачасене кĕнекепе кăсăклантарасси, тимлĕ итлеме вĕрентесси;

– ачасен кулленхи пурнăçне пуянлатасси, илемлĕ литературăна йышăнма-ăнланма кирлĕ опыта йĕркелесси;

– хайлавра пулса иртекен пулăмсен çыхăнăвне курма вĕрентесси;

– сăнарсен хăтланăшĕсене сăнама, хаклама вĕрентесси;

– ачана хайлавсене ăшă кăмăл-туйăмпа итлеме хăнăхтарса пырасси;

– ачасене автор сăмахпа ӳкерсе панă сăнлăхсене курма (иллюстраци урлă, хăйĕн опытне тĕпе хурса), иллюстрацисене сăнама вĕрентесси.

Чăваш Республикинче тĕпе хурса ĕçлекен программăра („Программа образования ребенка-дошкольника") палăртнă задачăсем халь асăннисене хирĕçлемеççĕ. Çак программăпа килĕшӳллĕн ачан:

„...илемлĕ литературăри сăнарлăх хатĕрĕсемпе киленме, хайлав шухăшне ăнкарма пултармалла, унăн содержанине план тăрăх аслин ыйтăвĕсем пулăшнипе йĕркипе каласа пама пĕлмелле.

Сюжет, тытăм тата текст шалашĕнчи çыхăнусем çинчен ансат пĕлӳсем калăпламалла, сăнарсен уйрăмах курăмлă хăтланăвĕсене

палӑртма, вӗсене хак пама вӗренмелле. Илемлӗ хайлавсене итленӗ май пулӑмсемпе тата геройсене куҫ умне кӑларса пама, вӗсем ҫинчен кӗнекери ӳкерчӗксем пулӑшнипе икӗ-виҫӗ предложенипе каласа кӑтартма пултармалла.

Пӗчӗкҫӗ йӑпатмӑшсене, сӑвӑсене палӑртуллӑ каласа пама пӗлмелле".

Кунсӑр пуҫсӑр О. С. Ушаковӑпа Н. В. Гавриш тата ҫакна асра тытма сӗнеҫҫӗ. Кашни занятирех тӗрлӗ задача лартмалла: ачана хайлава кӑмӑл-туйӑмлӑ йышӑнма хӑнӑхтарасси; сӑнарлӑх мелӗсене курма вӗрентесси; ҫав хатӗрсене хӑйӗн пултарулӑхӗнче усӑ курма хӑнӑхтарасси.

Кӗҫӗн ушкӑнра юмахӑн, ун сыпӑкӗсен модельне калӑплама та вӗрентмелле. Модель хайлав содержанине ӑнланма пулӑшать. Ҫаврака ҫумне хӑлхасем ӳкерсе хурсан ача ҫак сӑнарта мулкача курать, вӑл сиксе тилӗрен тарнине ӑнланать. Модель калӑплани сӑмахпа ӳкернӗ-сӑнланӑ пулӑмсене куҫкӗрет кӑтарта май парать.

Кашни занятинчех ачасен пултарулӑхне аталантаракан ӗҫсем сӗнмелле. Ку вӑл вӗсен пуплевне сӑмах, граматика, фонетика тӗлӗшӗнчен аталантарма пулӑшакан хӑнӑхтарусем. Ачасем вӗсене пурнӑҫланӑ май танлаштарусемпе эпитетсене, синонимсемпе антонимсене тупса палӑртаҫҫӗ. Панӑ сӑмах патне рифма тупма, вӑл е ку йӗркесене тӗрлӗ хӑвӑртлӑхпа, сасса улӑштарса (хытӑ е хуллен) тӗрлӗ интонаципе калама хӑнӑхаҫҫӗ.

Хайлав тӑрӑх пуҫарнӑ калаҫура ачасене хӑйсен шухӑшне уҫса пама, тӗрлӗ хускану, ӳкерчӗксем урлӑ туйӑмсене палӑртма хистемелле. Содержанипе килӗшӳллӗ кӗвӗ итлени те выранлӑ. Тӗрӗс суйласа илнӗ кӗвӗ ачасене хайлава тимлесе итлеме, туйӑмлӑ йышӑнма хатӗрлет.

Воспитателӗн кашни занятине тӗплӗн хатӗрленмелле.

Итлемелли хайлава суйласа илесси – питех те пӗлтерӗшлӗ ӗҫ. Воспитателӗн ӑна тӗрлӗ енлӗ тишкерсе суйласа илмелле – теми ачасемшӗн кӑсӑклӑ-и, тӗп шухӑшне ӑнланма пултарӗҫ-и, сӑнарсен характерӗсемпе хутшӑнӑвӗсем уҫӑмлӑ-и, автор усӑ курнӑ илемлӗх мелӗсене ачасем евӗрлеме пултарӗҫ-и? Ҫапла суйласа илсе ачасене чи лайӑх хайлавсемпе, чи лайӑх кӗнекесемпе ҫеҫ паллаштармалла.

Калаҫусемпе педагогӑн ачасене литература хайлавне тарӑнрах ӑнланса, туйса илме пулӑшмалла. Кашни тӗлпулу умӗн аталантару задачисене палӑртмалла. Хайлав сюжетне, хайлавӑн чӗлхипе стильне тишкернӗ май мӗне тимлемеллине шутламалла – хӑш

сăмахсемпе йĕркесене ачасене калаттармалла, ăçта мĕн ăнлантармалла, мĕнле ыйту памалла; хăш самантсене мĕнле интонаципе вуламалла, епле хусканусемпе мĕне палăртма май пур, мĕнле кăтарту хатĕрĕсемпе (тетте, картина, ӳкерчĕк, иллюстраци) усă курмалла.

Хайлав содержанине, тĕп шухăшне ачана епле ăнлантармаллине те воспитателĕн тĕплĕн шутламалла.

Тăваттăри ачасем хайлаври ĕç-пуç епле аталанса пынине йĕрлесе пыма вĕренеççĕ, сăвăри ритма тăнлама хăнăхса пыраççĕ. Кунпа пĕрлех хайлаври тĕп геройсене палăртма, вĕсен хăтланăшĕсене сăнлама хаклама та вĕренсе пымалла. Ачасен хăйсен пуплевĕнче хайлаври сăнарсен калаçăвне те евĕрлеме пултармалла. Иллюстрацисемпе ĕçлеме вĕрентесси те пĕлтерĕшлĕ. Ачасене вĕсем тăрăх хайлавсене уйăрса, суйласа илме хăнăхтармалла.

Хайлавсемпе ĕçленĕ май вĕсен илемлĕх тĕнчине, композицине уçса пама тăрăшмалла. Тĕслĕхрен, *„Панулми"* (В. Давыдов-Анатри), *„Шапа"* (А. Ильин) сăвăсем итлеттернĕ май уçăмлă, уççăн курăнакан рифмпа ритм вылянăвне кăтарма меллĕ.

Кĕнекепе паллашнă май ачасем хăйсем хайлава ăнланма вĕренсе пынине туйса илни те питĕ паха.

Кашни хайлав хăйне евĕрлĕ. Пĕри рифмăпа пуян, теприн содержанийĕ тыткăнлать, виççĕмĕшĕн ритм вылявĕ малти вырăнта. Кашни заняти задачисене палăртнă чухне çаксене пурне шута илни питех те аван.

Кунсăр пуçне ачасен аталăнăвне те шута илмелле. Тĕслĕхрен, хайлавра 3-4 сăнар пулсан кĕçĕн ушкăнри ача хăй тĕллĕн унти ĕç-пуç йĕркине палăртма йывăрланать. Çавăнпа ку задачăна *„Мулкач, тилĕ тата автан"* юмахпа паллаштарнă чухне лартатпăр, Ю. Силэмĕн «*Кантăка кам тĕрленĕ?*» калава вуланă май вара аса илместпĕр.

Кашни занятире палăртакан задачăсем пирки асăнăччĕ ĕнтĕ. Тепĕр пĕлтерĕшлĕ ĕç вăл – ачана занятире тĕл пулнă сăнарсене, илемлĕх мелĕсене харпăрлама, хăйĕн вăййисене куçарма пулăшасси.

Çак тĕллевпе занятире хайлавăн мĕнле те пулин сыпăкне выляттарма пулать. Драматизацие воспитатель хăй йĕркелет. Кайран вара пĕтĕм хайлава аса илсе вăйăра кăтарма ачасене хăйсене явăçтарать.

Занятие тăвată пайран йĕркелеме пулать: 1) кӳртĕм калаçу;

2) воспитатель хайлава кăтартуллă вуласа пани; 3) текста тишкерни; 4) пĕтĕмлетӳ.

Кӳртĕм калаçăвăн тĕллевĕ – ачасене хайлава йышăнма хатĕрлесси. Вăл 1 – 3 минута пырать. Ун содержанийĕ хайлавăн хăйне евĕрлĕхĕнчен, ачасен опытĕнчен, вĕренӳ тапхăрĕнчен килет. Кунта иллюстрацисемпе теттесем пăхма, хайлавра сăнланă ĕçсем çинчен ачасем мĕн пĕлнине асăмлаттарма пулать (*Ас тăватăр-и, ăçта кайнăччĕ, мĕн курнăччĕ? Иртнĕ занятире мĕн çинчен калаçнăччĕ-ха?* тата ыт те). Тĕслĕхрен, Ю. Васнецовăн *„Хĕр ачапа упа"*, юмахне сăнлакан иллюстраци тăрăх ачасенче çак ыйтусене сĕнетпĕр: *„Ӳкерчĕк çинче кама куратăр?", „Хĕр ача ăçта?", „Вăл мĕн шухăшлать-ши?", „Ку ӳкерчĕк мĕнле юмаха аса илтерет?", „Вăрманта çухалса кайнă хĕр ача çинчен калакан юмаха аса илĕр-ха".*

Калаçу хыççăн воспитатель ачасне заняти тĕллевĕпе паллаштарать: *„Халĕ сире хĕр ачапа упасем çинчен юмах каласа парăп. Ку хутĕнче калаçу пĕр хĕр ачапа* ***виçĕ упа*** *çинчен пулĕ. Ку вăл вырăс халăх юмахĕ – „Виçĕ упа".*

В. Давыдов-Анатрин *„Упа"* сăввине вуласа париччен педагог ачасене урамра мĕнле вылянине аса илме ыйтать: мĕнле вылярăмăр, юртан мĕн турăмăр?

Хăшпĕр чух воспитатель тӳрех, заняти пуçламăшĕнчех, ачасене çĕнĕ кĕнекепе паллаштарасси çинчен пĕлтерет. Çав кĕнекепе киленме май парать – ӳкерчĕксене кăтартать, кĕнеке мĕн çинчен пулнине тавçăрса илме сĕнет.

Ачасене кĕнеке хуплашкисене сăнаттарса та кăсăклантарса яма пулать. Тĕслĕхрен, воспитатель ачасене П. Эйзинăн *„Упа керменĕ"*, (иллюстрацийĕ И. Е. Калентьевăн), юмах кĕнекин хуплашкинчи ӳкерчĕке кăтартать, ыйтусем парать, çапла пĕтĕмлетет: *„Упа мĕншĕн чӳречерен пăхса ларнине çак кĕнекене вуласан пĕлĕпĕр".*

Кӳртĕм калаçура хайлав сыпăкне те усă курма пулать. Тĕслĕхрен, *„Çулçăсем"* сăвва вуличчен воспитатель ачасене кĕрхи çулçăсене сăнама сĕнет: *„Нумай пулмасть çулçăсем мĕн тĕслĕччĕ? Халĕ вара мĕн тĕслĕ?")*. Педагог ачасен хуравĕсене анлăлатса (*Çапла, тин çеç çулçăсем симĕс тĕслĕччĕ. Халĕ вара мĕн тĕсли кăна çук?!*) хайлаври сăмахсене хушса хурать: *Пулса тăнă симĕсрен,/ Хĕрлĕ, сарă та кĕрен.*

В. Давыдова-Анатрин *„Илтĕм эп кушак валли"* сăввипе

паллашатарассине тетте-кушак кӑтартнинчен пуҫлама пулать. Малтан воспитатель ҫак чӗр чуна сӑнлать, унӑн вӑрӑм хӳрине кӑтартать. Чӗр чун ҫӑмӗ-тумӗ ҫинчен калаҫать. Калаҫӑва ҫапла вӗҫлет: „Кушака тум тир тӑхӑнтарасси мӗнпе вӗҫленнине халӗ вулас сӑвӑран пӗлӗпӗр" – В. Давыдов-Анатри *„Илтӗм эп кушак валли"*.

Занятин тӗп пайӗ хайлава итленинчен пуҫланать. Вӑл 10 – 14 минута тӑсӑлма пултарать. Тӗллевӗ – ачасене хайлава тарӑнрах, туллинрех ӑнланма пулӑшасси.

Воспитателӗн питӗ тимлӗ пулмалла. Ачасен кӑмӑлне пӑсасран асӑрханмалла. Ыйтусем тӑрӑх хайлав сыпӑкӗсене асӑмлама пулӑшмалла. Ачашӑн хуравлама васкамалла мар, ӑна хӑйне шухӑшлама хистемелле. Вӑл хӑй ӳсӗмне курса хавхалантӑр.

Занятин ку тапхӑрӗнче тӗрлӗ мелпе усӑ курма пулать: ӑнлантарни, ыйтусене хуравлаттарни, хӑнӑхтарусем, дидактика вӑййисем, сыпӑксене вулани, сыпӑксене выляни, сюжета йӗрлени.

Ачасен ӗҫӗ тӗрлӗ енлӗ пултӑр, вӗсем ан ывӑнччӗр тесен, асӑннӑ мелсене пӗлсе ылмаштарса пымалла. Калӑпӑр, ачасем малтан педагог ӑнлантарнине итлеҫҫӗ, ӳкерчӗксене сӑнаҫҫӗ, хайлавпа ҫыхӑннӑ хусканусем тӑваҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ тата ытти те. Ҫакӑн пек ӗҫлени ачасен тимлӗхне сӳнме памӗ, занятире вара вӗсен кӑмӑлӗ те савӑк пулӗ.

Ӑнлантарни ачасем вӑл е ку ӗҫе ятарласа тимлеттерме кирлӗ. Уйрӑмах ӗҫе пуҫласа пурнӑҫлаҫҫӗ пулсан. Тӗслӗхрен, ачасене кӗнекери ӳкерчӗксем тӑрӑх ун содержанине ӑнкарма вӗрентес тӗллевпе воспитатель ҫапла ӑнлантарать: *„Малтан кӗнекери ӳкерчӗксене пурне те пӑхса тухар. Кунта кама (мӗне) ытларах тӗл пулатпӑр?"*. Е тата ачасене сӑвӑн ритмне кӑтартасшӑн пулсан (В. Давыдов-Анатрин *„Пан улми"* тата А. Ильинан *„Шапа"* сӑввисем тӑрӑх): *„Сӑвӑри йӗркесене вуланӑ май пӳрнесене выляттарма пулать. Пӑхӑр-ха мӗнле тӑватӑп"* (вулать те пӳрнисемпе вылятать): *Натали / Сан валли / Илсе килтӗм / Панулми: / Чи хӗрли, чи тутли – / Анис улма / Текенни.*

Тепӗр хут вуланӑ чухне хусканӑвӗсене ачасем тӑваҫҫӗ.

Ӑнлантарни хайлаври персонажсене сӑнланӑ чухне те питӗ кирлӗ. Тӗслӗхрен *„Мулкач,тилӗ тата автан"* юмаха итленӗ хыҫҫӑн воспитатель ачасене ҫакӑн пек ыйтусем парать: *„Мулкача пулӑшма пулнӑ чӗр чунсене пурне те аса илӗр. Вӗсенчен хӑшӗ чи пӗчӗкки? Чи пысӑкки? Аса илӗр-ха, чӗр чунсем пӳрт патне епле ҫывхарнӑ, тилле мӗн каланӑ? Автан вара мӗнпе пынӑ, мӗн*

*каланă?"* Унтан çапла ăнланатарать: *„Автан чĕр чунсенчен чи пĕчĕкки, анчах та вăл тилле хăваласа яма пултарчĕ. Мĕншĕн тесен вăл хăюллă, тавçăруллă, маттур".*

Ăнлантарни ачасен ĕç-хĕлне пĕтĕмлетнĕ чухне те вырăнлă. Тĕслĕхрен, ачасем Давыдов-Анатрин *„Ӳссен эсĕ кам пулан?"* кĕнеки тăрăх Т. И. Немцевăн ӳкерчĕкĕсене пăхаççĕ. Воспитатель: *„Ку ӳкерчĕксене сăнаса мĕн пĕлтĕмĕр-ха?* – тесе ыйтать те ачасен хуравне кĕтмесĕрех малалла саспа шухăшласа каять: *Пĕр ӳкерчĕкĕнче хĕр ачана ӳкерсе хунă. Вăл кровать çумĕнче тăрать. Тепринче ..., виççĕмĕшĕнче вара ... апла пулсан ку кĕнеке ачасем çинчен, вĕсен вăйăи-кулли çинчен. Тĕплĕнрех пĕлес тесен кĕнекине вулас пулать".*

Анлă сарăлнă, тăтăш ускуракан мелсенчен пĕри вăл – ыйтухурав. Ыйту ачан шухăшлавне хута ярса, ăна кирлĕ пек йĕркелесе пыма май паракан мел. Ыйтусенчен пĕрисем ачасем хайлава мĕнле ăнланинне уçăмлама пулăшаççĕ, теприсем – хайлав мĕнле кăмăлтуйăм çуратнине кăтартаççĕ, виççĕмĕшĕсем – ачасене хайлаври сăнарлăх мелĕсене курма вĕренсе пыраççĕ тата ытти те.

Ыйтусене хуравлама тăрăшнă май ача хăш чух ас тăвăмĕ çине тайăнать, тепрехинче ăна ытларах шухăшлавĕ е шухăш вĕçевĕ пулăшать. Ыйтусемпе ĕçленĕ чухне ача вĕсене хăй тĕллĕнех хуравлама пултарни-пултарманнине пĕлсе тăни те пĕлтерĕшлĕ.

Хайлавра пулса иртекен ĕçсен аталанăвне курма, сăнарсене ас туса юлма пулăшакан ыйтусене ку çулхи ачасем çăмăллăнах хуравлаççĕ. Тĕслĕхрен, *„Автан инкеке лексен чăх камран пулăшу ыйтрĕ? Çуркуннен çулне аса илĕр. Хĕветут мĕнле чĕр чунсене касса кăларчĕ?"* тата ытти те. Ку ыйтусене хуравланă май ачан шухăшлавĕ те аталанать, хайлава пĕтĕмĕшле аса илме те май пулать.

Воспитателĕн ачаран хурава „туртса" кăлармалла мар. Ăна хуравне туллин йĕркелеме пулăшмалла. Ыйтупа хурав хушшинче ытла пысăк тăхтав пулмалла мар. Ача чăрманса тăрсан педагогăн ăна хуравне пĕрле шухăшласа шырама хистемелле. Тĕслĕхрен, ыйту хыççăн хайлаври кирлĕ сыпăка тепре вуласа ыйтăвне тепĕр хут парсан та юрать. Çапла, *„Пукане юмахĕнчи"* пуканен кутăнрах кăмăлне уçса пама воспитатель ачасене вăл чĕр чунсемпе мĕнле калаçнине аса илме сĕнет. Унтан кирлĕ сыпăксене вуласа парать: *„Тытасса тытăп та, сан юрру-ташшу епле-çке. Юрласа-ташласа кăтарт эппин", „Кай, сана тытса пулмастех. Ачам санран*

*хăрасах ÿкĕ". „Ай сан юрру хитре-çке. Татах юрласа кăтарт-ха".* Юмахри пур диалогри пуканен хуравĕсене аса илтерни ачана хăйĕн хуравне тĕрĕс йĕркелеме пулăшать. Кун пек чух юмах тексчĕ ачашăн тĕрев пулать.

Тепĕр чухне воспитатель ачасене тĕрĕс хурав патне хушма ыйтусем парса илсе пырать. Тĕслĕхрен, *„Упапа хĕр ача"* юмахри хĕр ачан тавçăрулăхне кăтартма воспитатель çапла ыйтать: *„Хĕр ача тавçăруллă пулни ăçтан курăнать?"* Çийĕнчех хушса хурать: *„Аса илĕр-ха, упа хĕр ачана мĕн каларĕ? Хĕр ача карçинккана упана систермесĕр епле кĕрсе ларма пултарчĕ?" „Упа çул çинче карçинккана ан уçтăр тесе вăл мĕн шутласа тупрĕ?"*

Пĕчĕккисемпе ĕçленĕ чухне курăмлă материал усă курни самай пулăшать. Калăпăр, *„Мулкач, тилĕ тата автан"* юмахпа паллаштарнă май чĕр чунсенчен хăшĕ чи пысăккине, вăйлине палăртма теттесем пулăшĕç.

Сюжетлă ÿкерчĕксемпе усă курни, кĕнеке хуплашки сăнлани те вырăнлă. Курăмлă мелсем ачан хуравне туллирех калăплама пулăшаççĕ.

Пĕчĕккисемпе ĕçленĕ чухне воспитатель тĕслĕхĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Малтан ачасем хăйсем тĕллĕн хуравлама тăрăшса пăхаççĕ. Унтан воспитатель ачасен хуравне хаклать те пĕтĕмлетсе калать. Калăпăр, *„Пукане юмахĕ"* тăрăх *„Чĕр чунсем пуканене мĕнле юрласа-ташласа пачĕç-ха?"* ыйту çине хуравласа пĕр ачи курак мĕн тунине аса илме пултарать, тепри – çерçи мĕнле юрланине тата ытти те. Воспитатель ачасене мухтаса çапла пĕтĕмлетет: *„Маттурсем, кашниех мĕнле те пулин чĕр чун çинчен аса илме пултарчĕ. Пурин çинчен те пĕрле çапла калама пулать. Итлĕр."* Кун хыççăн воспитатель хăйĕн хурав-тĕслĕхне ачасене асăмлаттарать. Çапла пĕчĕккĕн ачасем самай кăткăс ыйтусене хуравалама хăнăхса пыраççĕ.

Ачасен хуравĕсене хакласси пирки çакна калас пулать. Хаклав яланах конкретлă пулмалла, хакланă чухне заняти тĕллевĕсемпе задачисене шута илмелле.

Тĕслĕхрен, занятире автанăн хăюлăхне (*„Мулкач, тилĕ тата автан"* юмах) кăтартасшăн. Юмаха палăртуллă каласа панă хыççăн ачасенчен çапла ыйтатпăр: *„Сире ытларах кам килĕшрĕ?Мĕншĕн?"* Тен кама та пулсан тилĕ килĕшрĕ пулсан, воспитатель çапла калама пултарать: *„Çапла, тилĕ хитре чĕр чун. Ун хÿри вăрăм, кăпăшка, хитре. Анчах та юмахра тилĕ мулкача кÿрентерчĕ – хăй килĕнчен*

*хăвалаласа кăларса ячĕ. Ку вара лайăх-и? Çук, тилĕ хăтланăшĕ сана килĕшессе ĕненес килмест".*

Текстпа ĕçленĕ май вăйă мелĕсемпе (игровые приемы) вырăнлă усă курмалла. Вăййа тĕрлĕрен йĕркелеме пулать.

Тĕслĕхрен, *„Çакна кам (мĕн) калать?"* вăйăра ачан вăл е ку сăмахсене хайлавра персонажсенчен хăшĕ каланине пĕлмелле:

*– Ан çи мана, катăк тута, эпĕ сана юрă юрласа кăтартăп* (йăва).

*– Ну, çу-ук, текех мана улталаймĕç! – тенĕ. – Çынсем хăйсене майлă туччăр. Эпĕ вара малтан апатланăп, кайран çăвăнăп* (кушак).

*– Эй, хураскер, пăрăн, çул пар мана! – Ак тата! Сана çул парăп-и!* (така).

Тепĕр вăйă: *„Ку хайлава пĕлетĕн-и?"* Текста палласа илни – аса хывас ĕçĕн пĕрремĕш утăмĕ. Çакăн пек вăйă, ачасене хайлавсенчи ĕç-пуçа вăййăсене куçарма пулăшаççĕ.

*„Кам тимлĕрех?"* вăйă вара хайлаври контраслăрах сыпăксене вуласа парассипе, вĕсене ӳкерчĕксемпе шайлаштарассипе çыхăннă. Вăйă умĕн воспитатель ӳкерчĕксенче сăнланă кашни сюжета ача мĕнле ăнланнине тĕрĕслет.

Унтан хайлаври икĕ-виçĕ сыпăка вуласа парать, ачасем ӳкерчĕксенчен вуланине сăнлаканнине суйласа илсе кăтартаççĕ.

Тĕслĕхрен, *„Пукане юмахĕпе"* паллашсан ачасем икĕ ӳкерчĕк сăнаççĕ – пĕринче пукане хаваслă, хитре, тепринче – йĕрет, эрешсене çухатнă. Воспитатель çак сыпăксене вулать: 1) *„Акă пырать пукане çулпа"*, 2) *„Çапла вара вăл тарçă тупаймасăрах макра-макра киле таврăнать"*. Ачасем кирлĕ ӳкерчĕксене тупса кăтартаççĕ.

*„Кам тимлĕрех?"* вăйă ачасен ăсра сăнарлас пултарулăхне (воображение) аталантарма пулăшать, вĕсене хайлав чĕлхине тимлеме, сăнарлăхне туйма хăнăхтарса пырать.

Пĕчĕкксем сăвăлла хайлавсене ытларах юратаççĕ. Вĕсене рифм, ритм илĕртет.

Рифмăна курма вĕрентекен мелсен пĕри вăл – ачасене сăввăн йĕркине вĕçлеме сĕнни. Тĕслĕхрен, воспитатель çапла пуçлать: *„Вăл – асамçă кĕркунне – Хуравларĕ ман...* Ачасем каласа пĕтереççĕ – *„анне"*. Воспитатель рифмă-сăмахсене тепĕр хут каласа илет: *„Кĕркунне – анне"*.

Е тата: *„Шурă юрĕ çурĕ, çурĕ, / Таврана шап-шурă ...* ачасем

пурте пĕрле вĕçлеççĕ – *„турĕ”*. Воспитатель каллех кирлĕ сăмахсене уйăрса калать : *„çурĕ – турĕ”*.

Ритмăсене курма вĕрентме *„Пĕрле ту”* вăйă пулăшма пултарать. Ку вăййа выляма уçăмлă, рифмăллă, хусканусем тума меллĕ сăвă суйламалла. Калăпăр, В. Давыдов-Анатрин *„Упа” сăвви.* Воспитатель сăвва вулать, ачасем упан хусканăвĕсене кăтартаççĕ:

*Упа, упа, утаман,*
*Ăна тунă шур юртан,*
*Ăна тунă пит аван*
*Пĕчĕк ача сар Иван.*

Занятин тĕп пайĕнче пĕр икĕ – виçĕ минут хушшинче хайлавăн пĕр-пĕр сыпăкне выляса илме те пулать. Кун пек чухне кашни ача валли валеçсе памалли материал ал айĕнче пулмалла: теттесем, хайлавра калакан ытти атрибут, персонажсен картонран касса кăларнă ĕмĕлкисем тата ыти те.

Валеçсе париччен ачасене çак персонажсене, вĕсен сăмахĕсене, хусканăвĕсене аса илтермелле.

Занятин çак пайне вĕçлесе воспитатель çапла пĕтĕмлетме пултарать: *„Эпир халь çак теттесемпе мĕнле выляма май пуррине куртăмăр. Вĕсене хамăр теттесен кĕтесне хурăпăр. Кайран хăвăр тĕллĕн çакăн пек выляса пăхăр.”*

Занятин юлашки пайĕ питĕ кĕске – пĕр минутран ытла мар пулать. Воспитатель çапла пĕтĕмлетӳ тăвать: *„Паян эпир мĕнле кĕнекепе паллашрăмăр? Кам (мĕн) çинчен ку кĕнеке? Мĕн кăсăклă пулчĕ? Мĕне ас туса юлтăр?”*

Малтанласа воспитатель хăй кăна пĕтĕмлетет. Каярахпа ачасене те явăçтарма пуçлать. Паллах, ачасен хуравĕсем малтан кĕске пулĕç. Майĕпен вĕсем ансат пĕтĕмлетӳсем калăплама та пултарĕç.

Заняти вăхăчĕн чи пысăк тӳпи хайлав тексчĕпе ĕçлессипе çыхăнать. Воспитатель ку ĕçре тĕрлĕ мелсемпе усă курать.

Илемлĕ хайлава йышăнасси, ăнланасси ансат мар. Çак механизм самай кăткăс. Хайлава ăнланса илесси ачан пурнăç опытĕнчен нумай килет. Чылай чухне вуласа е каласа паракан хайлавсенчи ĕç-пуç ачасен пурнăçĕнче пулман пулăмсемпе, япаласемпе çыхăннă. Ачасем хайлава тĕрĕс ăнланччĕр тесен, вĕсене кĕнекепе тĕл пулма ятарласа хатĕрлес пулать.

Хатĕрлев тĕрлĕ енлĕ пулма пулмалла – сăнавсем ирттерни (наблюдение), иллюстрацисене пĕрле пăхни, тĕрлĕ калаçу тата ытти

те. Ĕçе мĕнле йĕркелесси ачасен пĕлӳ шайĕнчен, ача сачĕнчи майсенчен килет.

Калăпăр, Н. Васанккан „*Качака*" сăввине вуличчен ачасене çăм арласа ларакан хĕр арăм ӳкерчĕкне кăтартма пулать. „*Кĕнчеле*" сăмаха мĕнле ăнланнине тĕрĕслемлле. Ӳкерчĕке сăнанă май кĕнчелери çăм вĕçне качака сухалĕпе танлаштарни те вырăнлă.

Мелсене суйласси хайлав уйрăмлăхĕсенчен килет. Çут çанталăк çинчен калакан сăвăсемпе паллаштарас умĕн уçăлса çӳренĕ чухне сăнавсем, вăйăсем, калаçусем ирттерсен аван.

Ачасене илемлĕ хайлавсемпе паллаштарасси ача садĕнчи вĕрентӳ-аталантару процессĕпе пĕтĕмĕшле тачă çыхăнса тăмалла. Çак кунхи, эрнери, уйăхри задачăсене, ачасен ĕç-хĕлне, çулталăк вăхăтне шута илмелле.

Пĕрремĕш юр çусан ачасене чӳрече патне чĕнетпĕр Е. Афанасьевăн „*Юр*"сăввине вулатпăр, урама тухма сĕнетпĕр*: Сĕн юр ӳкрĕ, / Хăрпăк юр. / Пирĕн таврара / Шап-шур. / Вăл чĕнет-çке урама: / – Ачасем, / Тухăр йĕр хывма!*

Тепрехинче, меллĕ самантра А. Галкинăн „*Çитрĕç сивĕсем*"сăввине вулатпăр*: Çитрĕç сивĕсем, / Шăнчĕç пĕвесем. / Мамăк пек шап-шур / Ӳкрĕ кăпăш юр. / Выртрĕ çĕр вара / Çывăрма тинех, / Сивĕ çапасран / Тăлăп витĕнсех.*

Хĕлле урамра выляна чух, ачасем юртан мĕн тума пулнине аса илеççĕ (юр кĕлетки, тăвайкки, юр чăмарркки...). Воспитатель вĕсене пĕчĕк ача сар Иван мĕн тунине аса илме ыйтать. Хăех сăвва аса илме пулăшать: *Упа, упа, утаман, / Ăна тунă шур юртан, / Ăна тунă пит аван / Пĕчĕк ача сар Иван.* (В. Давыдов-Анатри „*Упа")*

Хĕл кунĕсенче тĕлĕнмелли нумай. Акă раштав сиввисенче шап-шурă пас тытнă йывăç-тĕмĕсем юмахри пек лараççĕ. Х. Çеменĕн „*Хĕллехи вăрман*"сăвви аса килет*: „Çаппа çара йывăççем / Шавламасăр лараççĕ. / Пас айĕнчи туратсем / Темле мăннăн курнаççĕ".*

Ачасене хайлавсене итленĕ май çуралакан шухăш-кăмăлĕсене хăйсен ӳкерчĕкĕсенче сăнлама сĕнсен аван: „Эсĕ хĕле мĕншĕн юрататăн?", „Сана мĕн ытларах килĕшет?"

Ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе кайăксем валли сырăшсем туса çаксан вĕсен кашни кунах çунатлă тусĕсене сăнама, вĕсене апат пама май пулать. Воспитатель ачасене А. Галкинăн „*Кайăксен кĕреки"* сăввине вуласа парать: *Пĕчĕкçеç сĕтелĕн / Кĕреки пит селĕм: / Тăп тулли тĕпренчĕк, / Калăн, тыр кĕлечĕ.*

Сивĕ хĕл хыççăн çуркунне çитет. Çут çанталăк чĕрĕлет, ешерме пуçлать. Çуркунне çулталăкăн тĕлĕнмелле вăхăчĕ. Тĕмĕсем айĕнче юр та кайса пĕтмен-ха, тӳремсенче вара пĕрремĕш курăк ешерет.

Çакă пурте ачасене хавхалантарать, кăмăл-туйăмне çĕклет. Воспитатель ачасене вĕсен кăмăлĕпе килĕшӳллĕн сăвăсем вуласа парать: *Çурхи çил вĕрет / Ашă кăнтăртан / Сар хĕвел кĕрет / Уçă кантăкран. / Хĕвелпе вылять / Пĕчĕк Марине. / Тутинче кулать / Çутă çуркунне.* (*„Çурхи çил”* Н. Теветкел). Е тата: *Хĕвел хĕртет куллен, / Хуралчĕ тăвайкки. / Ӳпне выртать иккен / Кирукăн çунашки. / Тăрать вăл тунсăхпа / Тăвайккине пăхса. / Тинех çунашкапа / Анаймăн ярăнса.* (*„Хуралчĕ тăвайкки”* Н. Теветкел).

Ачасене пĕчĕкрен çут çанталăка юратма, упрама вĕрентсе пымалла. Çак ĕç куллен пулса пымалла. Ĕçре ватттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсемпе анлă усă курсан лайăх: *„Сиччĕ виç те пĕрре кас” „Ĕç çынна илем кӳрет”, Ĕç апат ыйтмасть, вăл хăй тăрантарать”, „Ĕçе пуçăнсан вĕçне çитер”, „Ĕçчен алă валли ĕç тупăнать”, „”Ĕççĕр пурнăç илемĕ çук”, „Ĕçлекен атăпа, ĕçлемен çăпатапа”.*

Тупмалли юмахсене те манса хăвармалла мар. Акă урама тухсан ачасенчен çапла ыйтма пулать: *„Асатте хапха уçать, асанне çăмхи тухать” (хĕвел). „Пат-пат! шăпăрлан, / Паттăрпа вăл пĕртăван: / Сăмсасăр та пултарать - / Тарăн шăтăк шăтарать” (тумлам). „Чĕмсĕр пичче сан умра / Пин алă ун, пĕр ура” (йывăç). „Хĕл мучи ăста иккен – / Кĕперĕсем кĕмĕлтен” (пăр).*

Кĕнеке ачасен çывăх тусĕ пултăр тесен воспитателĕн кунран кун тăрăшмалла. Кашни тĕл пулу ачасене мĕн те пулин çĕнни кӳтĕр, пĕлнине тарăнлатма пулăштăр.



И-4637
Национальная библиотека
Чувашской Республики

## Конспектсен тĕслĕхĕсем
## СЕНТЯБРЬ

### Пĕрремĕш эрне. Чăваш ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсем

Пĕрремĕш эрнере ачасене чăваш ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсемпе паллаштаратпăр.

*Ĕç тĕллевĕ*: ачасене чăваш ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсемпе паллаштарасси, вĕсемпе хăçан усă курнине пĕлтересси, итлес кăмăл çуратасси, хăйсен вăййисенче усă курма хăнăхтараса пырасси.

#### 1-мĕш калаçу
Сăпка юррисем

*Кирлĕ материал*: пуканесем, сăпка ӳкерчĕкĕ, кровать-тетте.

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене пуканелле выляма чĕнет. Вăл пуканене апат çитернĕ иккен, халь ак çывăрттарасшăн. Ăна епле çывăрттарса ямалла-ши, тесе ачасенчен пулăшу ыйтать. „Сăпка юрри юрласа памалла пепкене. Сăпка юррипе вăл питĕ хăвăрт çывăрса кайĕ", – теççĕ ачасем. „Çапла-çке, ара," – „тавçăрса илет" воспитатель те.

Воспитатель пуканене алла илсе сиктерсе юрлать:

*Нянине – паппине,*
*Паппине – нянине.*
*Лăштăм-лăштăм ярăнма,*
*Шăппăн-шăппăн çывăрма.*

Воспитатель ачасене хуллен ăнлантарать.

– *Нянине* тесе пирĕн асатте-асаннесем пĕчĕк ачана юратса каланă. *Нянине – паппине* тесе вĕсем ача патне ыйхăна-паппана чĕннĕ. Сăпка юрри ачана ыйхă сунать. Ыйхине те, ачине те пĕрле *«лăштăн-лăштăн ярăнма, шăппăн-шăппăн çывăрма»* хушать.

– Тем, вăранасшăн пулмалла... Тепре юрлать:

*Нянине – паппине,*
*Паппине – нянине.*
*Лăштăм-лăштăм ярăнма,*
*Шăппăн-шăппăн çывăрма.*

– Ыйхă, килсем пирĕн пепке патне. Няни лăштăм-лăштăм ярăнтăр, шăппăн-шăппăн çывăртăр.

– Çывăрса кайрĕ. Эпир ăна чăрмантармăпăр. Катя, эсĕ те хăвăн пуканӳне çывăратас теместĕн-и?

– Пĕрле çывăрттарма та пулать. Ачасем, сире сăпка юрри килĕшрĕ-и? Эсир сăпка мĕнне пĕлетĕр-и? Акă ӳкерчĕке сăнăр. Амăшĕ сăпка сиктерсе ларать. Авал çакăн пек сăпкасенче пĕчĕк ачасене çывăрттарнă.

– Ача сăпкине чăвашсем авалтан питĕ юратса хатĕрленĕ. Сăпка ырă та канлĕ пулсан, ача та сывлăхлă пулать тенĕ вĕсем. Çавăнпа ăна пули-пулми хупран мар, ама хуп тенинчен, виççĕн юнашар ӳсекен çăка тупса, варринчин хуппинчен тума тăрăшнă. Чăваш сăпкана теттесемпе илемлетме, тирпейлĕ тытма тăрăшнă, упранă, пушăлла сиктермен.

– Катя, сан пуканӳ мĕн ятлă?

– Санюк апла. Санюк, атя-ха эпир сана вырттарăпăр (пуканене тетте-кровать çине вырнаçтарать, витсе ярать). Санюк валли манăн ятарлă сăпка юрри пур, итлесемĕр:

*Ачине – паппине!*
*Çывăр, Санюк, çывăрах.*
*Аçу кайнă пасара,*
*Аннӳ кайнă çырлана,*
*Татнă, татнă – ывăннă,*
*Унтах выртса çывăрнă,*
*Аслати авăттăр,*
*Çиçĕм çиçтĕр –*
*Ман аннене вăраттăр.*

– Санюк тем лăпланмасть-ха. Катя, вăл сана хăнăхнă ĕнтĕ. Сăпка юррине эсĕ хăв юрласа парсам ăна. Эпир ачасемпе сана пулăшăпăр.

Воспитатель ачасене пĕрремĕш юрра аса илтерет.

*Нянине – паппине,*
*Паппине – нянине.*
*Лăштăм-лăштăм ярăнма,*
*Шăппăн-шăппăн çывăрма.*

Пурте пĕрле юрласа пуканене çывăрттараççĕ.

– Çывăртăрах ĕнтĕ халь.

**2-мĕш калаçу**

Сăпка юррисем

*Кирлĕ материал:* пукане.

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене сăпка юрри итлеме сĕнет:

*Нянине – паппине,*
*Паппине – нянине.*
*Лăштăм-лăштăм ярăнма,*
*Шăппăн-шăппăн çывăрма.*

– Ачасем, сăпка юррисене хăçан юрлаççĕ? Ку юрăсем мĕнлерех янраççĕ, мĕнлерех илтĕнеççĕ?

– Çапла, ачасем, тĕрĕс. Сăпка юррине ачана ачашласа лăплантарма юрлаççĕ. Çавăнпа ку юрăсен сăмахĕсем çепĕç, сăнарĕсем кăмăллă, кĕвви лăпкă, çемми вăрах. Сăпка юрри канлĕх кӳрет.

– Тата тепĕр сăпка юрри итлесемĕр:

*Нянине – тунине,*
*Ачине – урине,*
*Тăппи-тăпии çӳреме.*
*Карăс-кăрăс тутарма.*

– Сăпка юррисем ачана сывлăх, телейлĕ пурнăç сунаççĕ. Вĕсем канлĕ çывăрма, маттур та çăмăл ача пулма, тăппи-таппи çӳреме, кăрăс-кăрăс тутарма йыхăраççĕ.

Шухăшне май ун пек чухне кĕвви те хавас, сăнарлă тухать. Хавас, кăмăллă сăнарсем çывăрма выртнă ачана илĕртеççĕ, ырă кăмăл кӳреççĕ. Вăл йĕрмĕшме-йĕрме чарăнать.

Итлĕр-ха акă тата тепĕр сăпка юррине:

*Ултă кăвакал улăхра,*
*Çичĕ тăрна тăр шывра,*
*Ача-пăча пăрçара,*
*Пирĕн Валя сăпкара.*
*Утя, утя, утя, утя!..*

– Кăвакалĕсемпе тăрнисем ăçта-ха?

– Кам пăрçара?

– Валя вара ăçта? Çапла, пурте хăй вырăнĕнче. Пирĕн Валя та çаплах. Ун вырăнĕ халĕ сăпкара.

– Вальăна мĕнле сиктеретпĕр? (утя, утя, утя, утя).

– Канлĕн ярăнса çывăр, Валя.

– Ачасем, сире сăпка юррисенчен хăшĕ ытларах килĕшрĕ? Хăшĕ асра юлчĕ? Халĕ выляма каяр. Хамăр пуканесене сăпка юрри юрласа çывăрттарар.

### 3-мĕш калаçу

Сăпка юррисем

*Кирлĕ материал*: пукане.

*Ĕç йĕрки.* Ку хутĕнче воспитатель вăйĕ сюжетне вăрăмлатать. Сăпка юрри юрласа çывăрттарса янă пуканесем „вăрансан" каламалли сăвăсемпе паллаштарать.

– Авал асанне-кукамайсем ачана ыйхăран сăвă-такмакпа вăратнă. Ăна ырлăх, сывлăх суннă. Итлĕр çак такмака:

*Пысăк пул, пысăк пул,*
*Ӳссен маттур ача пул*
*Юрлама та ăста пул,*
*Ташлама та маттур пул.*

– Сăвăра ачана мĕн сунаççĕ? Мĕнле пул теççĕ?

– Çапла, ачана маттур пулма сунаççĕ. Маттур ача ташлама та, юрлама та ăста пулать.

– Кун пек такмаксем чăвашсен сахал мар. Кашниех хăйĕн пепкин кăмăлне çĕклеме тăрăшнă. Ача ыйхăран вăрансан хăйне кăмăллă, çĕкленӳллĕ туйтăр тенĕ.

*Каçа-каçа, каçа-каçа,*
*Пысăк пул, маттур пул!*

***

*Кăшăк-кăшăк-кăшăк,*
*Пысăк пул, пысăк, пысăк пул,*
*Кашни карăнмассерен*
*Шит тăршшĕ çитĕн.*

***

*Каш-каш кашаман,*
*Манăн паттăр утаман!*

*Каçчен кашта çӳллĕш пул,*
*Ирччен вĕрлĕк тăршшĕ ӳс!*
***
*Ырă пуçу ырра тĕллетĕр,*
*Ырă уру ырă уттăр,*
*Ырă аллу ырă ĕç тутăр!*

**4-мĕш калаçу**

Илĕртмелли сăвă-такмак

*Кирлĕ материал:* пукане.

*Ĕç йĕрки.* Ку занятинче воспитатель ачасене çитернĕ чухне илĕртмелли сăвă-такмаксемпе паллаштарать.

Вăл ачасене выляма чĕнет. Пуканене апат çитересшĕн. Пуканийĕ çиесшĕн мар, кутăнлашать иккен. Ăна мĕнле йăпатмалла, мĕнпе илĕртмелле? Паллах, сăвă-такмак каламалла. Кун пек сăвă-такмак чăвашсен сахал мар. Итлесемĕр. (Воспитатель такмакласа пуканене çитерет.)

Çитернĕ чух илĕртмелли сăвăсем:

*Пăр-пăр, Пăрчăкан*
*Пăри пăтти пĕçерет,*
*Пăтти пиçсе çитсенех*
*Çак ачана çитерет.*
***
*Хура курак хуран çакать,*
*Кăвакарчăн кăвайт хурать*
*Чĕкеç чĕппи чĕртсе ярать,*
*Сала кайăк салма ярать,*
*Сарă кайăк сар çу ярать,*
*Тăри чĕппи тăвар ярать,*
*Сыркăш чĕппи ссыпкалать*
*Пирĕн ача çисех ярать.*
***
*Курак, курак!*
*Курак килет – пăтă çакать,*
*Чĕппи килет – çу ярать,*
*Ашшĕ килет – аш ярать*
*Амăш килет – çитерет.*

*– Кушакăм, кушакăм*
*Ăçта каян кушакăм?*
*– Кукамай патне каятăп,*
*Çуллă пăтă çимешкĕн.*

***

*Чак-чак-чакакак!*
*Чак-чак-чакакак!*
*Чакак пăта пĕçерст,*
*Хăнисене йыхăрать,*
*Алăк тăррине лартать,*
*Сăмсипеле тăвар ярать,*
*Хӳрипеле пăтратать.*

***

*Пӳрнесем калаçаççĕ тет.*
*Пуç пӳрне: «Хырăм выçрĕ,*
*Кулач илсе çиесчĕ».*
*Шĕвĕр пӳрне: «Укçа çук-çке».*
*Вăта пӳрне: «Кивçен илер».*
*Ятсăр пӳрне: «Илсен парасси».*
*Кача пӳрне: «Çиес те тарас!»*

**Пĕтĕмлетӳ занятийĕ**

*Заняти тĕллевĕ:* сăпка юррисем çинчен мĕн пĕлнине çирĕплетесси, йăпатмалли сăвă-такмаксемпе малалла палаштарасси, халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене кăмăлласа йышăнма хăнăхтарасси

*Кирлĕ материал*: пуканелле вылямалли теттесем.

*Заняти йĕрки.*

– Кашни амăшĕ хăй ачине юрататъ. Пепкине юратса лăпкаса тĕрлĕ ачаш сăмахсемпе чĕнет. Сире аннĕрсем юратса мĕнле чĕнеççĕ-ха? Ашшĕ-амăшĕ ачине лайăх çывăртăр, хăйне тирпейлĕ тыттăр, апат та пур кăмăлтан çитĕр, тет.

– Паян эпир сирĕнпе пуканелле выльăпăр. Акă пирĕн „пепкесем". (пуканесем çине кăтартса). Ан макăрччĕр тесе эпир вĕсене утьăкка тăвар-ха:

*Утьти-утьти,утьăка,*
*Пулах, пепкем, пысăкка!*

– Халĕ çывăрттарар, кăшт канса илччĕр. Мĕн тăватпăр-ха эпир

кун пек чух?

– Çапла, сăпка юрри юрлатпăр. Сăпка юрри кам пĕлет?

Ачасем сăпка юррисене аса илеççĕ, пуканесене юрласа çывăрттарса яраççĕ.

– Пирĕн „пепкесем" „çывăрнă" вăхăтра эпир вĕсене валли вăрансан çиме апат хатĕрлĕпĕр. Мĕн пĕçерĕпĕр, ачасем?

„Плита" çине „апат" лартса ярсан пуканесем патне таврăнаççĕ. Воспитатель вăййа малалла тăсать.

– Ыйхăран вăрансан мĕн калăпăр пирĕн пĕчĕк пепкесене? (Ачасене кирлĕ сăвăсене аса илме пулăшать:

*Каш-каш, кашаман,*
*Манăн паттăр утаман!*
*Каçчен кашта çуллĕш пул,*
*Ирччен вĕрлĕк тăршшĕ ӳс!*
*Ырă пуçу ырра тĕллетĕр,*
*Ырă уру ырă уттăр,*
*Ырă аллу ыр ĕç тутăр.*

– Халĕ ĕнтĕ пиçнĕ апата çиме те вăхăт.

– Ай, ай, пăх-ха ĕнтĕ, пирĕн пепке, тем, çиесшĕнех мар пулас? Ачасем, çитернĕ чух илĕртмелли мĕнле сăвăсем пĕлетпĕр-ха эпир? Ачасем пĕлнисене аса илеççĕ. Воспитатель çĕнĕ сăвă итлеме сĕнет: (*Санькка* вырăнне ушкăнри урăх ача ятне калама пулать)

*Пирĕн Санькка пысăккă:*
*Ыраш çăкăр çинĕ те.*
*Эс те, пепкм, çи-халĕ,*
*Унран иртсе каймăн-и?*

– Апат çирĕç пепкесем. Выляса илме те юрать пулĕ. Ачасем, кăтăк такмакне аса илер мар-и?

*– Калпак ăçта?*
*– Пуç çинче.*
*– Пуç ăçта?*
*– Мăй çинче.*
*– Мăй ăçта?*
*– Хул çинче.*
*– Хул ăçта?*

*– Кăкăр çинче.*

*– Кăкăр ăçта?*

*– Ак кунта.*

– Пирĕн „ачасен" канса илмелле. Лартар-ха вĕсене. (Лартать). Эпир мулкачла выляса илер. Мулкачне шут сăввипе суйласа илĕпĕр.

*Вĕт вĕлтĕрен хушшинче*
*Сарă кайăк чĕппи пур,*
*Эс те чипер, вăл та чипер,*
*Чăн чиперри сик те тух.*

Воспитатель ачасене карталанса тăма ыйтать, мулкачĕ – карта варрине кĕрсе ларать. Ачасем ун тавра çаврăнаççĕ, алă çупса юрлаççĕ:

*Мулкач, уя тух* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, уя тух* (2 хут)
(Мулкач тухать)
*Мулкач, сада кĕр* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, сада кĕр* (2 хут)
(Мулкач кĕрет)
*Мулкач, купăста çи* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, купăста çи* (2 хут)
(Мулкач çиет)
*Мулкач, алпа çуп* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, алпа çуп* (2 хут)
(Мулкач çупать)
*Мулкач, шывне ĕç* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, шывне ĕç* (2 хут)
(Мулкач ĕçет)
*Мулкач, таша яр* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, таша яр* (2 хут)
(Мулкач ташлать)
Черетпе тепри тухать

Воспитателе *сăпка юрри, тата йăпатмалли сăвă-такмак* çинчен тĕплĕнрех вуласа пĕлме В. Я. Канюковпа П. Н. Метин пухнинчен (Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI том, I пайĕ. Ача-пăча сăмахлăхĕ. Шупашкар: чăваш кĕнеке издательстви, 1985, С.17-23.)

çак материала сĕнетпĕр.

...Сăпка юрри тесе пĕчĕк ачасене çывратнă чух (сăпка сиктернĕ чух) йăпатса юрламалли юрра калаççĕ. Халĕ кăкăр ачисене сăпкара сиктерсе çывратас йăла майĕпен пĕтсе пырать пулин те, çывратнă чух лăпкă юрăпа çывратас йĕрке пăрахăçа тухмасть, юрă ячĕ те çав-çавах тытăнса тăрать.

Сăпка юррисене хываканĕсемпе аталантарса пыраканĕсем – ача амăшĕсемпе ача пăхакан карчăк-кинемейсем. Вĕсене кура ку юрăсене шăллĕ-йăмăкĕсене пăхакан ачасем те, ытларах хĕрачасем, юрлаççĕ. Сăпка ачисем те, çитĕнсе сăмахсене ăнланма-калаçма вĕренсе пынă май, хар-пăр хăй тăтăш илтекен юрра часах хăнăхаççĕ

Сăпка сиктернĕ чух халĕ те çĕнĕ юрăсене шутласа кăларни пулкалать, анчах сăпка юррисем, тĕпрен илсен, авалтанпа пурăнаççĕ. Сĕм-авал çын ыйха чĕрĕ тесе шутланă. Унăн ăсĕпе, пур ырăсемпе усалсем те, вĕсемпе пĕрле ыйхă та, таврари этем пекех чунлă, чĕрĕ çӳренĕ. Вăл килме, кайма, вĕçме пултарнă. «Ыйхă килчĕ», «ыйхă пусрĕ», «ыйхă вĕçрĕ» тетпĕр эпир авалхи мăн асаттесем хыççăн. Авалхи çын шучĕпе, ырăсене йыхравпа, пĕлсе каланă сăмахпа чĕнсе илме пулнă имĕш. Ыйха та çывăрма выртнă ача патне килме йыхăрнă, ачапа пĕрле канлĕн выртма, ăна çывăратма, сывлăх пама чĕннĕ. Çапла пуçланса кайнă сăпка сăвви-кĕввисем.

Сăпка юррисенче халчченех авалхи йыхрав сăввин хăшпĕр кукрисем упранса юлнă. Тĕслĕхрен каласан, сăпка юррисем тăтăшах çапла пуçланаççĕ: «Ачине-паппине», «А-ăх, ă-ăх, ачине-паппине...», «Нянине-паппине...» Çак сăмахсене юрăра темиçе те асăнаççĕ. Ку ĕнтĕ пӳрте, сăпка таврашне килнĕ ыйхă («паппа») ачана халал пултăр тенийĕ пулнă. Юрă ачана ыйхă сунать, ыйхине те, ачине те пĕрле «лăштăн-лăштăн ярăнма, шăппăн-шăппăн çывăрма» хушать.

Каярахри тапхăрта, фольклорăн чылай жанрĕсем ăшри туйăма илемлĕхпе палăртмалли мел кăна пулма тытăнсан, сăпка юррисен сăввисене çĕнĕ сăнарсем, ачана кăмăллă урăх йышши сăмахсем те кĕме пуçланă.

Сăпка юррисен тĕп тĕллевĕ – ачана ачашласа лăплантарасси. Акă мĕншĕн вăл юрăсен сăмахĕсем çепĕç, сăнарĕсем кăмăллă, кĕвви лăпкă, вăрах çемĕллĕскер. Итленĕ майăн сăпка юрри канлĕх кӳрет.

Калăпăшĕпе сăпка юррисем пысăк мар, час-часах вĕсем пĕрер çаврăмшар кăна, итлекен ача ăспуçне шăнăçма çăмăлскерсем.

Сӑнарсем те унта ачана ҫывӑхскерсем: амӑшӗ ҫывӑрма вырттӑ ачи ятне асӑнать, ӑна ачашласа «папак», «пепке», «няни» тет, ача чӗлхипе пуплешет – «паппа ту» е «паппине-паппине» тет. Канлӗн ярӑнса выртнине астутаракан сӑмахсем юрӑра ҫине-ҫинех илтӗнеҫҫӗ.

Тӗп шухӑшӗпе сӑпка юррисем ачана сывлӑх, телей, ӑраскаллӑ пурнӑҫ сунаҫҫӗ. Вӗсем канлӗ ҫывӑрма, маттур та ҫӑмӑл ача пулма, «йӑлт-ялт сикме», тӑппи-таппи ҫӳреме, ҫунатланса «вӑштӑн-вӑштӑн вӗҫтерме» йыхӑраҫҫӗ. Шухӑшне май ун пек чухне кӗвви те хавас, вичкӗн тухать. Хавас сӑнлӑ сӑнарсем ҫывӑрма выртнӑ ачана илӗртсе йӗрмешсе-йӗресрен пӑраҫҫӗ, ӑна ырӑ кӑмӑл кӳреҫҫӗ.

Ача сиктернӗ чухне юрлакан юрӑсенчи чи паха сӑнар – сӑпка. Ача сӑпкине чӑвашсем авалтан питӗ юратса хатӗрленӗ. Сӑпка ырӑ та канлӗ пулсан, ача та сывлӑхлӑ пулать тенӗ вӗсем. Ҫавӑнпа ӑна пули-пулми хупран мар, ама хуп тенинчен, виҫҫӗн юнашар ӳсекен ҫӑка тупса, варринчин хупӗнчен тума тӑрӑшнӑ. Чӑваш сӑпкана теттесемпе илемлетме, тирпейлӗ тытма тӑрӑшать, упрать, пушӑлла сиктертмест. Юрӑсенче сӑпка чи паха эпитетсемпе танлаштару вырӑнне тӑрать («Атте-анне ҫурчӗ – ылтӑн сӑпка...»).

Ҫывӑрма выртнӑ ача юрӑри сӑнарсем урлӑ сӑпкана мӗнрен тунине те, ӑна мӗнпе витнине те, мӗнле илемлетнине те, хӑйӗн ҫипуҫӗ мӗнлине те илтме пултарать. Сӑмахӗсем пӗр пек илемлӗн янӑраҫҫӗ (ку юрӑсенче сасӑсен янӑравӗ уйрӑмах килӗшӳллӗ).

Сӑнарсем ачана сӑпкаран аяккарах та ертсе тухаҫҫӗ: юрӑсенче вӑл хӑйӗн тусӗсемпе — кайӑксемпе, чӗр чунсемпе паллашать, хӑйӗн ҫывӑхӗнчи ял ячӗсене илтет, юратнӑ амӑшӗ ача-пӑчана асӑнса юрлакан эпитетсемпе сӑнарлӑ танлаштарусене тӑнлать. Юрӑ ӑна пӗчӗклех килйыш ӗҫпе пурӑнни ҫинчен астутарса тӑрать: тутлӑ ҫиме юратакан ачан «ашшӗ кайнӑ пасара, амӑшӗ кайнӑ ҫырлана», теприне кил-ҫурта шуратса илемлетмелли шурӑ тӑм ҫинчен те, ашшӗ сурӑх ҫӑмӗнчен кӑҫатӑ пустарни ҫинчен те, амӑшӗ ывӑлӗ валли ӑшӑ чӑлха ҫыхтарни ҫинчен те юрласа кӑтартаҫҫӗ. Хресчен ачи ҫапла мӗн кӗҫӗнренех пурнӑҫ ӗҫпе ҫыхӑннине тавҫӑрса пырать.

Чӑвашсем сӑпкари ачана йӑпатса хавас кӑмӑл кӳмешкӗн шӳт сӑмахӗпе усӑ кураҫҫӗ. Шӳтлӗ юрӑсем хушшинче ачаран е ашшӗ-амӑшӗнчен илемсӗртерех сӑмахсемпе тӑрӑхланисем те тӗл пулаҫҫӗ. Хӑш чухне вӗсем ачасем хушшине те сарӑлаҫҫӗ, ҫапах вӗсене чӑваш ача-пӑча фольклорӗн паха тӗслӗхӗсем шутне илме ҫук...

*Йӑпатмалли сӑвӑ-такмак.* Сӑпка ачине ашшӗ-амӑшӗпе

çитĕннĕ ачасем çывратмалли юрăсемпе çех мар, ыттипе те йăпатаççĕ. Ыйхăран вăрансан-и, выляса выртнă чух-и, çитерме ларсан-и е йĕме тытăнсан-и – кирек хăçан та ăна йăпатмашкăн сăвă-такмак хатĕр. Ача çитĕнсе тĕреклениме, ура çине тăма, сăмах-юмаха ăнкарма тытăннăçемĕн сăвă-юрă хушăнсах пырать: ташлаттармалли, уттармалли, «утьăкка» сиктермелли, пӳрнесемпе вылямалли, хисепсене шутламалли, эрне хушшинчи кун ячĕсене вĕренмелли, ахальтен – илемшĕн кăна такмакламалли те.

Ачан çул шучĕпе пăхсан, ку такмаксем «сăпкари пурнăçăн» иккĕмĕш тапхăрне тивеççĕ; анчах хăшпĕр тĕслĕхсем (ансат вăйă такмакĕ, мунча такмакĕ) ун хыççăн та пăрахăçа тухмаççĕ-ха.

Хăйсен тытăмĕпе йăпатмаллисем юрăсенчен урăхла. Вĕсене юрласа мар, ытларах такмакласа калаççĕ. Кĕвве-çемме кунта тикĕс виçеллĕ такмак янăравĕ кӳрет.

Тытăм тĕлĕшĕнчен пăхсан, йăпатмаллисене икке пайлама пулать: пĕрисем – пуплешӳ-такмаксем, теприсем – сăвă-такмаксем. Ку икĕ ушкăн пĕр-пĕринчен уйрăмах мар пулин те, пуплешӳ-такмак тенисене (сăмахран, ача карăннă чух тата йĕнĕ чух ачашламаллисене, пӳрне ячĕсене, «пӳрнесем' калаçнине», пӳрне шутламаллине, кун ячĕсене) сăваран уйăрмалла. Чылай чухне сăвă пекех çемĕллĕ, сайра хутра рифмăллă та пулаççĕ вĕсем, çапах пĕтĕмĕшпе сăвă картне лармаççĕ...

Йĕрекен-макăракан ачана, ним тăвайман енне кайсан, усал-хăрушă сăнарсемпе хăратни те пулкаланă. Ун пеккисенчен чи хăрамалли пур ачасемшĕн те – мукка. Мĕнле тискер чĕрчун-ши вăл, хăш ача мĕнле сăнлă курать-ши ăна?

Хăратнинчен ытларах такмаксенче ачана ырăпа илĕртсе йăпатаççĕ. Çакăнта халăх педагогикин паха енĕ питĕ вичкĕн палăрса тухать.

Чăт, чăкăт парăп,
Ан шарла, аш парăп...

***

Ан йĕр, ачам, ан йĕр,
Паппа ту, тӳттӳ парăп.

Çак икĕ пĕчĕкçĕ такмак пур енчен те паха тĕслĕх: шухăша унта лăпкăн та йăвашшăн, пачах хирĕçлеме май çукла каланă; сăнарсене ахальтен, сăмах çаврăнăшĕн илемĕшĕн кăна кĕртсе лартман, ырă ĕçшĕн ырă пуласса шантарса каланă; сăнарсем куçкĕрет тухса тăраççĕ; çавна пурне те такмаксенчи самахсем сасăсен янăравĕпе

пĕрпекленсе илтĕнни чĕрĕ сĕм парать.

Йăпатса каланă сăмахсенче çутă сăнлă сăнарсем тĕпре. Макăран ачана: «Хĕвел пăхать, ай, хĕвел пăхать ĕнтĕ!» – теме тытăнаççĕ, ача, чăнах та, йĕме чарăнать.

Йăпатмалли такмаксенчи сăнарсем ушкăнлă туслăх тата пĕрлĕхлĕ ĕç шухăшлĕ. Унта куракпа чĕпписем пĕрле апат пĕçереççĕ, пĕрле çиеççĕ, савăнаççĕ, чакак апат пĕçерсен, кам ĕçлекене çитерет, кам ĕçлемене кашăк та памасть, пыл çиме ларнă ача тусĕсене хăнана йыхăрать. Сăвăсенчи çак шухăшсене ача-пăча питĕ килĕштерет – мĕн тĕрĕс, çавă унпа пĕртăван-çке.

Ача урипе пусма тытăнсанах, ăна сăвă-такмак каласа «утьăкка» сиктереççĕ, чĕрçи çинче ташлатаççĕ. Утьăкка-ташлату такмакĕсене ача ахаль сăвă пек çех илтмест, ăна вăл пĕтĕм чунĕ-кĕлеткипе йышăнать, хăйĕн хусканăвĕсемпе çураçуллă çыхăнтарать – поэзи этем ăшне кĕрет. Ку сăвăсем хавас кĕвĕллĕ. Çемĕ тапса тăрать, сасăсем ян-ян янăраççĕ. Хавас кĕвве шутлĕ сăнарсем пит çывăх, çавăнта утьăкка сăввисем тăтăшах шÿтлĕ. Çапах ачана ырă сунас кăмăл-шухăш кунта та тĕпе ларать...

Йăпатмалли такмаксем ача-пăчана вăййă-кулă енне çавăраççĕ. Алли-урипе хăлаçланса выртакан ачана сăвă-юрăпа усă курса хусканусем тума вĕрентни е çиме ларнă ачана йăпатни т. ыт. те вăл сисмен хушăрах вăййăлла пулса иртет. Хушăран ăна урамра ачасем вылякан вăййă юррисене те юрлакаласа кăтартаççĕ, сăмахран, «Кăшман юррине». Ку юрă пĕчĕк ачана ăнланма питĕ меллĕ, мĕншĕн тесен юрланă май ăна хусканусемпе кăшман шăварнине, çумланине, кăларнине туса кăтартаççĕ. «Кăшманĕ» те кунта — ачи хăех, «шăварни-çумлани» ăна ачашланиех пулса тухать.

Йăпатмаллисем шутне ятарласа пÿрнесемпе вылямалли ансат вăййăсем – пÿрне вăййисем кĕреççĕ. Пĕчĕк ача хăйĕн алă пÿрнисене тыткаласа пăхма питĕ юратать. Çавăнпа усă курса, ача пăхакансем ăна тĕрлĕрен вăййă выляттараççĕ: пÿрнесене ят хураççĕ, вĕсене «калаçтараççĕ», «мăйрака» туса сĕкĕштереççĕ т. ыт. те. Ку вăййăсен тĕп тĕллевĕ – япалана сăнарлă курма вĕрентесси, кĕвĕллĕ сăмахпа хусканусене килĕштерсе пыма хăнăхтарасси.

Чăвашсем пÿрнисене ят хурса ачисене выляттарасси сĕм-авалтанах пуçланса кайнă пулас. Авал чăвашсем хутшăнса пурăннă тĕрĕк халăхĕсен (тутарсен, кăркăссен, алтай тăрăхĕнчи халăхеен, урянхайсен, телеутсен, теленгитсен т. ыт. те) çавнашкал йĕрке пурри çавăн çинчен калать те ĕнтĕ. Пÿрне ячĕсем те чăвашсен çав

халăхсеннипе пĕр евĕрех.

Асăннă тĕрĕк халăхĕсен ачисем выля-выля калакан пўрне ячĕсене танлаштарса пăхсан, халĕ чăвашла ăнланма çук пек туйăнакан сăмахсемех ăнланмалла пулса тухаççĕ. Авалхи чăвашсем пўрнесене хăш чухне ачасемпе, тепĕр чухне йывăççемпе те тата паттăрсемпе танлаштарнă иккен: «палан ўте», «у(р)те тирек» тенисене пĕр такмакра иккĕмĕш ача тата вăта ача тесе ăнланмалла («бала» – ача), тепĕр такмакра, – палан йывăççи, вăта тирек (тополь) йывăççи темелле; «паш пўрне», «пас пурне», «баш бат-тыр» – пуç пўрне, аслă паттăрĕ; «качи папак» – кĕçĕн ывăл, пĕчĕк ачи. Ытти такмаксенче пуç пўрнене пăрăспа танлаштараççĕ, вăта пўрнене тĕрекки теççĕ, ятсăрри – яр пўллĕ яштака каччă. Хăщ чухне ăна юмахсенчи хăруш хăвата пĕлтерекен «сĕм-сĕмеккĕм» сăмахпа та асăнаççĕ юмахра: «Сĕм-сĕмеккĕм, сĕмеккĕм, çав карчăка çи!..»)...

Çапла вара пўрне такмакĕсенче авалхи чăваш сăмахĕсем упранса юлнă та халĕ те пурăнаççĕ. Каярахри тапхăрта хывнă такмаксем те пур. Кусенче сăмахсем ăнланмаллисемех. Сăмахран, шўтлĕ такмакра пўрнесенчен пĕри – пукан пичче, тепри – тўнтер тўре (чиновник, пуçлăх), виççĕмĕшĕ – вăрăм вăртах, тăваттăмĕшĕ – ятсăр ятак (çĕрсĕр, шăпасăр юлнă хресчен), кача пўрни – каçăр качака. Такмакра пўрнесем çын ячĕсемпе те çўреççĕ.

Пўрнесене «калаçтармалли» вăйă та чăвашсен çав тĕрĕк халăхсеннипе пĕр пек. Ку текстсем те авалтанах пыраççĕ пулас. Вĕсен калаçăвĕнчен сюжетлă та шўтлĕ пĕчĕкçĕ произведени пулса тухать: аслисем кашни харпăр хăй хуйхи-суйхи çинчен калаççĕ, кĕçĕннин (айваннин) пĕр хуйхă – çиес те тарас, ĕçес те тарас!

Пўрне вăййисем ача-пăча тавракурăмне анлăлатас тĕлĕшрен питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ – вăйăсемпе усă курсах ачасене япала хисепне астуса юлма, шутлама вĕрентеççĕ. Шутлама-сума вĕрентекен вăйă-такмаксем йышсăр мар. Вуннă таран шутлама вĕрентекеннисене кашни хисеп ячĕ çумне пĕрер çын ячĕ е ял ячĕ хушса пынипе янăравлă тата астуса юлмалла хываççĕ.

Вăйă мелĕпех, сюжет хывса, эрне хушшинчи кун ячĕсемпе паллаштарма та, ўрĕк-сўрĕкрен тăрăхлама та пулать иккен. Кунашкал такмаксем ача ăсне ахаль сăмахпа тўрремĕн вĕрентсе каланинчен çивĕчрех те витĕртерех вырнаçаççĕ..."

Иккĕмĕш эрне. А. Барто сăввисем

Иккĕмĕш эрнере ачасене кĕске сăвăсемпе паллаштаратпăр.

*Ĕç тĕллевĕ:* ачасене А. Бартон сăввисене йышăнма-ăнланма пулăшасси, ас туса юлма, асăмлама хавхалантарасси, сăвăсене хăйсен вăййисенче усă курма хăнăхтараса пырасси.

**1-мĕш калаçу**
„Мишук" сăвă

*Кирлĕ материал*: тетте-упа.

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене теттесен кĕтесне пуçтарăнма чĕнет.

– Ачасем, пăхăр-ха, пăхăр, упа çурине мĕн пулнă?! Мишук урайĕнче выртать: *Мишука пĕри пăрахнă.*

– Мĕн пулнă-ши унпа?

– Ай-у-уй, ун ури хуçăлнă. (Воспитатель ачасене „ыратакан" вырăна кăтартать).

– Ачасем, атьăр-ха пулăшатпăр ăна. Воспитатель бинт илет те калаçа-калаçа, упа çурин урине çыхса ярать, калаçать: эпĕ ăна пулăшăп, *эп ăна пĕччен хăвармăп*.

– Эпир ку упана юрататпăр, çапла вĕт – вăл пирĕн лайăх тетте. *Ма тесен вăл питĕ лайăх*.

– Лена юрататпăр-и эпир упа çурине? Вăл лайăх-и? Çапла, *ма тесен вăл питĕ лайăх*.

– Акă пулчĕ те ĕнтĕ. Пулăшрăмăр упа çурине.

– Ачасем эпĕ сире çак упа çури çинчен сăвă вуласа парам-и? Мишук. (Вырăсларан Петĕр Ялгир куçарнă).

*Мишука пĕри пăрахнă.*
*Урине те хуçнă шаймăк.*
*Эп ăна пĕччен хăвармăп,*
*Ма тесен вăл питĕ лайăх.*

– Ачасем, сире, сăвă килĕшрĕ-и? Упа çурине килĕшрĕ-ши? Эпĕ ăна тепре вуласа парам-ха. Вăл итлетĕр. (Калать).

– Ачасем, упана сăвă питĕ килĕшнĕ иккен. Тен эсир те упана савăнтарас тетĕр? Апла ăна тепре каласа парăр-ха.

Воспитатель ытти куçарусене усă курма пултарать:
*Мишук ўкрĕ урайне*

*Тăпăлтарнă урине*
*Килĕшет Мишук мана*
*Пăрахмастăп эп ăна.* (Н. Ыдарай куçарнă)

***

*Ўкрĕ упа урайне*
*Хуçрĕ хăрах урине*
*Хĕрхенетĕп эп ăна*
*Хамăн лайăх теттене.* (Тетте. В. Давыдов-Анатри)

**2-мĕш калаçу**
„Лаша" сăвă

*Кирлĕ материал*: тетте-лаша, тура.

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель пикенсех лашана капăрлатать. Ачасене те кăсăклантарса ярать

– Ачасем, эпĕ паян хăнана пуçтарăнатăп. Çурран мар, лашапа каяс тетĕп хăнана. *Лашана эп юрататăп.* („Лăпкаса" илет). Лашапа каяс тетĕп. Эсир манпа пĕрле пырасшăн мар-и? Атьăр пĕрле. Малтан пирĕн лашана çула хатĕрлемелле. Акă эпĕ тура илтĕм – çилхине турас тетĕп. Воспитатель туранăçем сăвă калать:

*Лашана эп юрататăп,*
*Çилхине хитре туратăп*

– Ачасем, эпĕ мĕн тăватăп? Çапла, лашан *çилхине туратăп.*

– Пулчĕ те. Хитре-и, ачасем?

– Мана та килĕшет.

– Итлĕр-ха, лашан çилхийĕ хитре пулчĕ, хўри вара?

– Ăна та якатмалла пуль. Вăл та хитре пултăр: *Якататăп хўрине те.*

– Ну, халь пулчĕ пуль ĕнтĕ. Хăнана вĕçтерме те юрать пулĕ?

– Ларам та, вĕçтерем. (Пĕчĕк тетте пулсан лашана алла илет, пысăкки, урайĕнче тăраканни пулсан утланнă пек тăвать). Акă эпĕ Катя патне хăнана çитрĕм те. Салам, Катя. Хăнасене йышăнатăн-и? Пĕрле выльăпăр-и? Лашалла выляс килмест-и? Эсă лашана юрататăн-и? Педагог ачана сăвăн пĕрремĕш йĕркине калама пулăшать: *Лашана эп юрататăп,*

– Ачасем, Катя та лашана юрататъ.

– Санăн, Катя, лашана тураса ярас килет-и? Апла акă сана тура: çилхине хитре тура, хўрине якат. Воспитатель ача хусканăвăсене тимлет, тĕрĕс тума пулăшать, çав хушăрах сăвă

йёркисене аса илсе пырать:

*Лашана эп юрататăп,*
*Çилхине хитре туратăп*
*Якататăп хӳрине те*

– Катя, халь хăнана кайăпăр-и ёнтĕ? *Хăнана кĕç вĕçтеретĕп.*

– Кам патне вĕçтерĕпĕр-ха? (Пысăк лаша пулсан, педагог ачана лаша çине лартать)

– Коля, хăнасене йышăн.

Вăйă малалла тăсăлать. Заняти вĕçĕнче воспитатель сăвва тепĕр хут хăй вулать:

*Лашана эп юрататăп,*
*Çилхине хитре туратăп*
*Якататăп хӳрине те*
*Хăнана кĕç вĕçтеретĕп.*

## 3-мĕш калаçу
### „Качака таки" сăвă

*Кирлĕ материал*: тетте-качака таки, симĕс курăк ӳкерчĕкĕ *Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, пăхăр-ха ман алăра мĕн пур?

*Качака таки пур ман.*

– Темшĕн макăрать-ха вăл. (Ачасем сăлтавне ăнкарма тăрăшаççĕ).

– Хырăмĕ выçнă пуль ун. Ачасем, качака таки мĕн юратнине пĕлетĕр-и?

– Эпĕ симĕс курăк кирлĕ пуль тесе шутлатăп. Çерем çине кайса ярам-ха, çӳретĕр курăк çисе.

– Çӳллĕ курăк хушшинче çухалса каймасть-ши вăл? Çӳретĕр-ха кăшт, кайран шыраса тупăп.

– Çак вăхăтра эпĕ сире, ачасем, качака таки çинчен каласа парăп. Илтĕр. Качака таки.

**Качака таки**

*Качака таки пур ман*
*Ăна эпĕ хам пăхатăп.*
*Çухалсан вăл ăнсăртран,*
*Курăк хушшинче шыратăп.* (П. Ялгир)

– Сăвă килĕшрĕ-и сире? Качака таки ăçта çӳрет? (Сăвва тепĕр хут вулать, ачасене пĕрле каласа пыма хавхалантарать).

– Сиккелесе çӳретĕр курăк хушшинче (выляса илет).

– Ачасем, эпир упа çинчен мансах кайнă. Кайса пăхар-ха. (бинтланă упа çурине алла илет). Аса илĕр-ха, мĕн пулнăччĕ унпа. (Сăвва аса илме пулăшать:

*Мишука пĕри пăрахнă.*
*Урине те хуçнă шаймăк.*
*Эп ăна пĕччен хăвармăп,*
*Ма тесен вăл питĕ лайăх.*

– Сăвва кам каласшăн? Маттур, Лена. Тин çеç ку упа çури салхуччĕ, халĕ, ав, хаваслanчĕ.

– Салтса пăхар-ха бинтне.

– Ачасем, упан ури сипленнĕ.

– Тен упа çурине лашапа ярăнтарар? Пăх-ха мĕнле лаша пур пирĕн! Кăштам тирпейлем-ха ăна.

*Лашана эп юрататăп,*
*Çилхине хитре туратăп*
*Якататăп хӳрине те*
*Хăнана кĕç вĕçтеретĕп.*

– Лар-ха Мишук, вĕçтерсе килер пĕрле. Ак çапла. (Воспитатель упа çурине лашапа ярăнтарать.)

– Ачасем, тата кам Мишука ярăнтарасшăн? Лаша çинчен калакан сăвва аса илĕр те вăл сирĕн пата çитсе тăрĕ те.

Воспитатель ачасене сăвва аса илме пулăшать, пĕрле вылять.

## 4-мĕш калаçу

### „Мечĕк” сăвă

*Кирлĕ материал:* ачасемшĕн çĕнĕ пукане, мечĕк

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель пĕчĕк мечĕкпе вылять.

– Ачасем, эсир мечĕкпе выляма юрататăр-и?

– Мечĕкпе мĕнле-мĕнле выляма пулать?

– Çапма, пеме те пулать, пĕр-пĕрин патне шутарма та пулать.

– Çапни, тапни мечĕкшĕн нимех те мар. Вăл резинăран вĕт.

– Ачасем, мĕнле шутлатăр, мечĕк мĕнрен хăрать?

– Сивĕрен хăрать-и? – Хăрать.

– Хĕвелтен? – Хăрамасть.

– Çулăмран? – Хăрать.

– Шывран? – Хăрамасть.

– Маттур, эсир тем те пĕлетĕр.

– Ачасем, тем, такам макăрмасть пулĕ те? Атьăр-ха, кайса пăхар.

Воспитатель ачасене теттесен кĕтесне хăй нумай пулмасть вăрттăн хунă çĕнĕ пукане патне илсе пырать.

– Пĕчĕк Таня иккен ку. Мĕн пулнă-ши ăна?

– Таня, мĕн пулнă, мĕншĕн йĕретĕн? (Пуканепе пăшăлтатать).

– Ачасем, Таня мечĕксĕр юлнă иккен. Асăрхамасăр ăна шыва ўкернĕ. Халĕ вара йĕрет.

– Ачасем, Таньăна епле лăплантарар. Ун макăрма сăлтав пур-и? Мечĕк шывра путать-и? Калар пуль ăна çакна.

Воспитатель пукане енне:

*Чарăн, ан йĕрсем, Танюк.*

*Шывра мечĕк путас çук.*

Ачасем, эсир те ўкĕтлĕр, лăплантăр ĕнтĕ ăна, ачашласа илĕр.

Воспитатель пулăшнипе 4-5 ача çак икĕ йĕркене Таньăна калать, лăпкаса илет.

– Сан мечкўне, Таня, эпир шыраса тупăпăр. Акă вăл (воспитатель пуканене пĕчĕк мечĕк „тыттарать”).

– Вылятăр-ха, Таня. Эпĕ вăл хушăра сире ун çинчен сăвă вуласа парăп:

### Мечĕк

*Макăрма Танюк пикенчĕ-*
*Шыва ўкнĕ пĕчĕк мечĕк*
*Чарăн, ан йĕрсем, Танюк.*
*Шывра мечĕк путас çук.* (П. Ялкир куçарнă).

– Ачасем, Таня мĕншĕн макăрма пикеннĕ? Тĕрĕс, *шыва ўкнĕ пĕчĕк мечĕк.*

– Эпир ăна мĕнле лăплантартăмăр? (*Чарăн, ан йĕрсем, Танюк. Шывра мечĕк путас çук).*

– Сире сăвă килĕшрĕ-и,? Эпир ăна Таньăна та каласа парар-ха. Сăвва пукане валли тепре вулать.

– Сăвва кам ас туса юлчĕ? Эсир те Таньăна каласа парăр. Сăвва аса илме пулăшать.

## Пĕтĕмлетӳ занятийĕ

*Заняти тĕллевĕ:* Ачасене асра юлнă сăвăсене палăртуллă каласа пама хавхалантарасси, поэзине юратма вĕрентсе пырасси.

*Кирлĕ материал:* А. Бартон „Игрушки" кĕнеки (П. Ялкир „Ача садĕнче"), теттесем: мечĕксем, упасем, лашасем, качака такисем, йытă.

*Заняти йĕрки.* Воспитатель ачасене илĕртӳллĕ кĕнеке кăтартать, пĕрле пăхма сĕнет.

– Ку сăвă кĕнекинче теттесем çинчен çырнă. Эсир вĕсенчен хăшĕсене пĕлетĕр. Атьăр-ха, пĕрле аса илер.

Воспитатель ачасене ӳкерчĕк кăтартать, мĕнле тетте ӳкернине, вăл мĕнлине калама ыйтать. Унтан çак тетте çинчен сăвă каласа парать. Ачасем воспитательпе пĕрле каласа пыма тăрăшаççĕ.

Кун хыççăн воспитатель ачасене сĕтел патне пыма чĕнет. Сĕтел çинче теттесем выртаççĕ, вĕсене салфеткăпа хупланă. Педагог ачасене пĕрер тетте суйлама пулăшать, карталанса тăма чĕнет.

– Теттесене хăвăр умăра лартсамăр. Вĕсем хăйсем çинчен сăвăсем итлесшĕн. Акă упа çури сăвă каласа пама ыйтать. Кама упа çурине лекнĕ, çавă сăвă каласа парать.

*Мишука пĕри пăрахнă.*
*Урине те хуçнă щаймăк.*
*Эп ăна пĕччен хăвармăп,*
*Ма тесен вăл питĕ лайăх.*

Малалла çак йĕркепех ытти теттесем çинчен те сăвă калаççĕ. Лаша çинчен:

*Лашана эп юрататăп,*
*Çилхине хитре туратăп*
*Якататăп хӳрине те*
*Хăнана кĕç вĕçтетретĕп.*

Качака таки çинчен:

*Качака таки пур ман*
*Ăна эпĕ хам пăхатăп.*
*Çухалсан вăл ăнсăртран,*
*Курăк хушшинче шыратăп*

Пукане тытнă ача „Мечĕк" сăвва калать:

*Макăрма Танюк пикенчĕ-*
*Шыва ÿкнĕ пĕчĕк мечĕк*
*Чарăн, ан йĕрсем, Танюк.*
*Шывра мечĕк путас çук.*

Воспитатель ачасене теттесемпе выляма сĕнет.

Заняти вĕçĕнче воспитатель ачасене çĕнĕ сăвăпа паллаштарма пултарать:

**Лаша**

*Ман лашан кăтра çилхе,*
*Кустăрмаллă урисем.*
*Эп ача садне çил пек*
*Унпа çитĕп вĕçтерсе.* (П. Ялгир).

## Виççĕмĕш эрне. Юмахсем

Ку эрнере ачасене чăваш тата вырăс халăх юмахĕсемпе паллаштаратпăр.

*Ĕç тĕллевĕ:* ачасене юмахсене итлеме-йышăнма вĕрентсе пырасси; вĕсен сюжетне, геройĕсене ас туса юлма, моделлеме пулăшасси; юмахри самантсене хăйсен вăййисенче усă курма хăнăхтарасси.

### 1-мĕш калаçу

Çарăк (вырăс халăх юмахĕ)

*Кирлĕ материал*: тетте-шăши.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем пăхăр-ха мĕнлерех хăна килнĕ паян пирĕн пата.

Воспитатель ачасене тетте-шăши кăтартать, ăна сăнласа пама ыйтать:

– Шăши мĕнле, юмахсенче ăна мĕнле чĕнеççĕ (шăши тус).

– Пĕлетĕр-и, ачасем çак шăши тус питĕ пысăк çарăка туртса кăларма пултартăм тесе мухтанать. Кун çинчен калакан юмаха та илсе килнĕ. Ларсамăр меллĕрех, каласа парам сире, тимлĕ итлĕр.

Воспитатель ачасене юмаха каласа парать, кĕнекери ÿкерчĕксене кăтартать. (Ачасем те педагогпа пĕрле каласа пыма пултараççĕ).

**Çарăк (вырăс халăх юмахĕ)**

*Пĕр старик çарăк акрĕ, тет те çапла калать тет:*

*Ӳс, çарăкăм хăвăртрах.*
*Ӳс, çарăкăм, пысăкрах,*
*Пул, çарăкăм, тутлăрах!*

*Çарăкĕ пы-ысăк ӳссе çитĕнчĕ, тет. Кайрĕ старик çарăкне кăларма. Туртать-туртать, ниепле те туртса кăлараймасть.*

*Чĕнчĕ старик карчăкне.*
*Карчăк тытрĕ старикрен,*
*Старикки – çарăкран,*
*Туртаççĕ, туртаççĕ,*
*Туртса кăлараймаççĕ.*
*Чĕнчĕ карчăк мăнукне.*
*Мăнук тытрĕ карчăкран,*
*Карчăк тытрĕ старикрен,*
*Старикки – çарăкран,*
*Туртаççĕ, туртаççĕ,*
*Туртса кăлараймаççĕ.*
*Чĕнчĕ мăнук анчăка.*
*Анчăк тытрĕ мăнукран*
*Мăнук тытрĕ карчăкран,*
*Карчăк тытрĕ старикрен,*
*Старикки – çарăкран,*
*Туртаççĕ, туртаççĕ,*
*Туртса кăлараймаççĕ.*
*Чăнчĕ анчăк кушака.*
*Кушак тытрĕ анчăкран,*
*Анчăк тытрĕ мăнукран*
*Мăнук тытрĕ карчăкран,*
*Карчăк тытрĕ старикрен,*
*Старикки – çарăкран,*
*Туртаççĕ, туртаççĕ,*
*Туртса кăлараймаççĕ.*
*Чĕнчĕ кушак шăшине.*
*Шăши тытрĕ кушакран,*
*Кушак тытрĕ анчăкран,*
*Анчăк тытрĕ мăнукран*
*Мăнук тытрĕ карчăкран,*
*Карчăк тытрĕ старикрен,*
*Старикки – çарăкран,*
*Туртаççĕ, туртаççĕ,*

*Туртсах кăларчĕç.*

Итленĕ хыççăн, ачасен кăмăлне кура, кĕске калаçу йĕркелет.

– Ачасем, сире, юмах килĕшрĕ-и?

– Çарăка туртакансене кам ас туса юлчĕ?

– Хăшĕ пырсан туртса кăларчĕç?

– Шăши, эс ытла ан мухтан. Эсир пурте пĕрле тăрăшнă вĕт. Кирек мĕнле ĕç те пĕрле тăрăшсан çеç ăнать.

Ваттисем: „Пĕрлешӳре – вăй", – теççĕ. – „Эртел тăвайман ĕç те çук". Чăнах та çапла. Пурте пĕрле пулса карр! тăчĕç те ĕçĕ те ăнчĕ.

## 2-мĕш калаçу

### Çарăк (вырăс халăх юмахĕ)

*Кирлĕ материал:* „Çарăк" юмах тăрăх йĕркеленĕ пӳрне театрĕ, çавраксем ӳкернĕ шурă хут листи, кăранташ, „Çарăк" юмах кĕнеки, тетте-шăши.

*Ĕç йĕрки.* Ачасем воспитательпе пĕрле „Çарăк" юмаха аса илеççĕ.

– Ачасем, ку юмаха выляр мар-и? Кам хăш геройне вылясшăн?

Воспитатель ачасене пӳрне театрĕнчи сăнарсене валеççсе парать. Ушкăнпа хăшĕ хăшĕн хыççăн вылямаллине, мĕн каламаллине, кашни сăнар хăтланăшне сӳтсе яваççĕ. Унтан юмаха выляççĕ. Ертсе пыраканĕ – воспитатель.

Вăйă вĕçлесен воспитатель ачасене сĕтелсем хушшине ларма сĕнет, çавракасем ӳкернĕ хут листисене пăхма ыйтать.

– Эсир мĕн куратăр? (Нумай çаврака).

– Айтăр асамçăлла вылятпăр. Асамçăсем пулăпăр та çак çавракасенчен „Çарăк" юмахри геройсене туса хурăпăр. Пĕрремĕш çавраки – çарăк. Ачасем, çарăк мĕнле?

– Пысăк, сарă, çаврака.

Воспитатель ачасене çарăкăн формине, калăпăшне алăсемпе кăтартма ыйтать.

– Çарăкăн тăрринче çулçисем. Ӳкерсе хурар-ха вĕсене.

– Çарăка кăларма старик килет. Старик мĕнлерех?

– Ватă, ун сухал пур. (Алăсемпе кăтартаççĕ).

– Карчăк килчĕ. Карчăкĕ мĕнле? Вăл пуçне мĕн çыхнă?

– Карчӑк ватӑ, пуҫӗнче тутӑр.

– Мӑнукӗ мӗнле?

– Пӗчӗкскер, ҫӳҫне хӑю ҫыхнӑ.

– Йытӑ мӗнле? Хӳрине кӗлентӗр пек ҫавӑрса хунӑ. Ҫапла ӳкерсе хуратпӑр та тӳрех паллӑ пулать ку анчӑк пулни.

– Кушак мӗнле? Хӑлхи шӗвӗр, мӑйӑхӗ вӑрӑм.

– Шӑши мӗнле?

– Пӗчӗк.

– Мӗн пур-ха ун? Ҫинҫе, вӑрӑм... Ҫип пек хӳре

– Атьӑр, ӑна эпир хӳре ӳкерсе парӑпӑр.

Модельсем хатӗр. Ачасем юмахри персонажсене тепӗр хут аса илсе тухаҫҫӗ:

– Ҫарӑк ҫаврака, ҫулҫисем лапка;

– Старик ватӑ, сухаллӑ;

– Карчӑк ватӑ, тутӑр ҫыхнӑ;

– Мӑнукӗ пӗчӗк, ҫӳҫне хӑю ҫыхнӑ;

– Анчӑкӑн хӳри кӗлентӗр пек;

– Кушакӑн хӑлхи шӗвӗр, мӑйӑхӗ вӑрӑм;

– Шӑшин хӳри вӑрӑм, ҫип пек ҫинҫе.

Воспитатель модельсене пӑтраштарса ярать, ачасене юмахри пек пуҫтарма ыйтать

## 4-мӗш калаҫу

Сармантей (чӑваш халӑх юмахӗ)

*Кирлӗ материал*: юмаха сӑнлакан ӳкерчӑксем, фланеграф, юмах кӗнеки.

*Ӗҫ йӗрки.* Юмаха вуланӑҫемӗн ӑна сӑнлакан ӳкерчӗксене фланелеграф ҫине лартса пырсан аван. Ал айӗнче кӗнеке пулсан, малтан унти ӳкерчӗксене пӑхса тухма пулать.

## Сармантей (чӑваш халӑх юмахӗ)

*Сармантейӗн сарӑ чӑххи сар ҫӑмарта тунӑ; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ.*

*Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать.*

*Хапхи калать:*

*– Манӑн та уҫӑлса хупӑнас, – тет. Анать вӑкӑр шыва куллен-кун.*

*Хапха, эсӗ мӗншӗн уҫӑлса хӳпӑнатӑн? – тет.*

*Уҫӑлса хупӑнмасӑр, — тет. – Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать, – тет. Вӑкӑр калать:*

*- Манӑн та мӗкӗрсе анас, – тет. Мӗкӗрсе анать шыв хӗррине. Шыв калать:*

*– Мӗншӗн, вӑкӑр,мӗкӗретӗн?*

*– Мӗкӗрмесӗр, – тет, – Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет. Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнать.*

*Шыв калать:*

*– Манӑн та хумханас, – тет.*

*Пӗр ҫӗнӗ ҫын шыв ӑсма анать:*

*– Шыв, мӗншӗн хумханатӑн? – тет.*

*– Хумханмасӑр, – тет. Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет. Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнать тет, вӑкӑрӗ те мӗкӗрет.*

*Ҫӗнӗ ҫын калать:*

*– Манӑн та пӗр витрине ҫапса ҫӗмӗрес, – тет. Ҫапса ҫӗмӗрет витрине.*

*Киле таврӑнать. Хунямӑшӗ чуста ҫӑрать.*

*– Кин, мӗншӗн хӑрах витрепе анчах ӑсса килтӗн? – тет.*

*– Ӑсса килмесӗр, – тет. – Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет. Сармантей те йӗрет тет, сарӑ чӑххи те какалать тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнать тет, вӑкӑрӗ те мӗкӗрет тет, шыв та хумханать.*

*Хунямӑшӗ калать:*

*– Манӑн та чустана кӑларса ывӑтас, тет. Кӑларса ывӑтать.*

*Ывӑлӗ кайнӑ вӑрмана. Таврӑнать вӑрмантан. Ывӑлӗ калать:*

*– Мӗншӗн яшка пӗҫермерӗр? – тет.*

*– Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет. Сармантей те йӗрет тет сарӑ чӑххи те какалать тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнать тет, вӑкӑрӗ те мӗкӗрсе анать тет, шыв та хумханать тет, ҫӗнӗ ҫын та хӑрах витрине ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Ывӑлӗ калать:*

*– Манӑн та хӑрах атта кӑларса ывӑтас, – тет. Кӑларса ывӑтать. Пӗтрӗ.*

Хыççăн воспитатель кĕске калаçу иртерет.

– Юмах килĕшрĕ-и сире?

– Унта камсене, мĕнсене асăннă?

– Айтăр-ха аса илер.

Воспитатель фланелеграф çине ÿкерчĕксене пăтраштарса лартать.

1. Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă.

3. Шăши хÿрипе çăмартана çапса çĕмĕрет.

2. Хапха уçăлса хупăнать.

5. Вăкăр мĕкĕрсе анать.

6. Шыв хумханать.

7. Çĕнĕ çын хăрах витрине çапса çĕмĕрет.

8. Хунямăшĕ чустана кăларса ывăтать.

4. Ывăлĕ хăрах аттине кăларса ывăтать.

Ÿкерчĕксене ачасене сăнаттарать, кашниййĕнче мĕне сăнлани çинчен калаçаççĕ.

– Ачасем, „Сармантей" юмаха кам ас туса юлчĕ? Ÿкерчĕксене йĕркипе лартса тухма пулăшсамăр.

Воспитатель пулăшнипе ачасем ÿкерчĕксене лартса тухаççĕ. Вĕсем тăрăх юмаха аса илсе каласа параççĕ.

Тепĕр занятинче юмаха аса илнĕ хыççăн воспитатель ертсе пынипе юмаха выляса параççĕ.

## Пĕтĕмлетÿ занятийĕ

*Заняти тĕллевĕ:* итленĕ юмахсене, унти геройсене аса илесси, вĕсене сăнлама вĕрентсе пырасси.

*Кирлĕ материал*: вуланă юмахсенчи атрибутсем.

*Заняти йĕрки.*Воспитатель ачасене „Çарăк" юмахри геройсене кăтартать.

– Пăхăр-ха, пăхăр камсем, мĕнсем пуçтарăннă кунта?

– Мĕнле юмахра тĕл пулнăччĕ вĕсемпе? Вĕсем „Çарăк" юмахран марччĕ-и?

Ачасем воспитатель пулăшнипе юмаха аса илеççĕ. Вăл ачасене геройсен сăнĕсем евĕр касса кăларнă медальонсене тăхăнтартать. Юмахăн юлашки сыпăкне выляттарать. Хăй автор сăмахăсене каласа пырать, ачасем мĕн каланине туса пыраççĕ. „Шăши тытрĕ кушакран.....старик тытрĕ çарăкран. Туртаççĕ,туртаççĕ – туртса кăлараççĕ çарăка".

– Ларса канар-ха. Ну тутлă-çке çарăкĕ (çинĕ пекки тăваççĕ).

– Ачасем, ман çакăнта ÿкерчĕксем пур. Вĕсем пурте юмахсен кĕнекинчен. Хăшĕ мĕнле юмахран пулнине ниепле те тавçăраймастăп.

Воспитатель ачасене çĕмрĕк витре ÿкерсе хунă картина кăтартать.

– Тавах, ачасем. Чăн та „Сармантей" юмахаран вĕт ку ÿкерчĕк. Акă çак юмахранах тепĕр ÿкерчĕк пур.

Çĕнĕ çынпа хунямăшĕ тăракан ÿкерчĕке кăтартать. Ачасенчен камсене ÿкернине ыйтать.

– Мĕн çинчен калаçаççĕ-ши вĕсем? Кам çĕнĕ çын вырăнне пуласшăн? Кам хунямăшне выляссшăн?

Ачасем, воспитатель пулăшнипе юмахри калаçăва аса илсе выляççĕ.

– Ачасем, пăхăр-ха, тата кам килнĕ пирĕн пата?

Таня пуканене кăтартать. – Вăл халь макăрмасть ĕнтĕ. Астăватăр-и мĕн пулнăччĕ унпа. Таня çинчен сăвă кам каласа парасшăн?

*Макăрма Танюк пикенчĕ-*
*Шыва ÿкнĕ пĕчĕк мечĕк*
*Чарăн, ан йĕрсем, Танюк.*
*Шыврa мечĕк путас çук.*

– Маттур, ачасем. Мечĕкпе выляса ĕшеннĕ Таня. Çывăрма вырттарар-ха эпир ăна.

– Сăпка юррине кам ас тăвать?

Аса илсе пуканене çывратаççĕ. Заняти вăййа куçса каять.

## Тăваттăмăш эрне. И. Я. Яковлев калавĕсем

Ку эрнере ачасене И. Я. Яковлев калавĕсемпе паллаштаратпăр.

*Çĕ тĕллевĕ:* ачасене калавсене ăнланма, вĕсен содержанийĕ тăрăх калаçма, харкăм хăй кăмăлне уçма пулăшасси.

### 1-мĕш калаçу

И. Я. Яковлевăн „Автан" калавĕ

*Кирлĕ материал:* автан ÿкерчĕкĕ.

*Çĕ йĕрки.* Воспитатель ачасене тупмалли юмах итлеме сĕнет: *Хăй хуралçă мар, пурне те вăратать.*

Тупсăмĕ ӳкерчĕк ҫинче (ăна, тӳнтерле лартнăскерне, тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлсен воспитатель ҫавăрса лартать). Автан

Ачасем воспитательпе пĕрле автана сăнлаҫҫĕ:

– Автан мĕн тĕслĕ?

– Унăн мĕн-мĕн пур? (пуҫĕ, хӳри, кĕлетки, урисем)

– Пуҫĕ ҫинче мĕн пур? (хĕрлĕ кикирикки).

– Куҫĕ мĕнле? (ҫавракa).

– Ури мĕнле (урисем пысăк, тĕклĕ).

– Ури ҫинче мĕн пур? (Ури ҫинче качисем пур).

Воспитатель ачасем каласа пынă май ӳкерчĕк ҫинче кăтартса пырать, ăнланман сăмахсене ăнлантарса парать.

– Автан мĕн тăвать? Тулă пĕрчисене ... (сăхать), чăхсене, чĕпсене ... (апата чĕнет), ирхине ирех ... (авăтать).

– Вăл мĕнле авăтать?

– Автан мĕн юрататать?

– Халĕ эпĕ сире автан ҫинчен калав вуласа парăп. Тимлĕ итлĕр. (ӳкерчĕке ҫавăрса лартать). Калава чăвашсене ҫутта кăларакан, вĕрентекен Иван Яковлевич Яковлев ҫырнă. „Автан" ятлă. (Вулать).

**Автан**

*Пирĕн пĕр пысăк хĕрлĕ автан пур. Вăл тăр-кăнтăрла урапа ҫине хăпарать те: „Ки-ки-ри-ку!" – тесе авăтать. Сасси аван; хӳри илемлĕ, авăна-авăна тăрать. Кикирикки пысăк; тĕклĕ уралла; качи вăрăм.*

*Сирĕн автан ҫапла-и?* (И. Я. Яковлев).

– Килĕшрĕ-и сире ку автан?

– Пирĕн ӳкерчĕкри автан вара мĕнлеччĕ?

Ачасем воспитатель пулăшнипе калаҫҫĕ – пирĕн автан ... (пысăк, шурă). Автанăн хӳри ... (илемлĕ, авăна-авăна тăрать). Унăн кикирикки ... (хĕрлĕ), ури ... (тĕклĕ), качи ...(вăрăм).

**2-мĕш калаҫу**

И. Я. Яковлевăн „Чакак" калавĕ

*Кирлĕ материал*:чакак ӳкерчĕкĕ.

*Ĕҫ йĕрки.*

– Ачасем, паян сире пĕр питĕ илемлĕ кайăкпа паллашатара тетĕп. Кам та пулин пĕлет-ши ăна? (Чакак ӳкерчĕкне кăтартать).

– Çапла, ку – чакак. Сăнăр-ха ăна. Мĕнлескер вăл?

– Тĕрĕс, хăй хуп-хура. Хырăмĕ вара шап-шурă. Чакак ула тĕслĕ. Пăхăр-ха хӳри мĕнлерех унăн.

– Çапла, унăн хӳри вăрăм. Епле хитре кайăк чакак?

– Чакак ăçта пурăнать, мĕнпе тăранать?

– Итлĕр ун çинчен калав вуласа парам. Ку калава та Иван Яковлевич Яковлев çырнă. Калав ячĕ – „Чакак".

**Чакак**

*Чакак çулла вăрманта пурăнать, юр çусан, яла пырать. Çулла вăрманта вăл чĕпĕ кăларать; ялтан çăмарта вăрласа кайса, чĕпписене тăрантарать. Хĕлле, сивĕ пулсан, йывăçлăх çине ларать те: „Чак-чакак, чак-чакак", – тесе чакаклатать.* (И. Я. Яковлев)

– Чакак ăçта пурăнать тенĕ?

– Çапла, вăл вăрманта та, ялта та пурăнать.

– Чакак çинчен тата мĕн пĕлтĕр? (Хуравлама пултаракан ачаран ыйтать).

– Çапла, „ *...çулла вăрманта вăл чĕпĕ кăларать; ялтан çăмарта вăрласа кайса, чĕпписене тăрантарать.*

– Чакак мĕнле сас парать?

– Янравлă саспа калаçать чакак. Халăхра ун пирки: „Чакакăн чĕлхи хӳринчен те вăрăм" – теççĕ. (Чакак çăварĕнче чарак çук). Хытă янранăран каланă пуль çавăн пек.

– Ачасем, чакак çинчен мĕнле сăвă вĕреннĕччĕ эпир?

Воспитатель аса илме пулăшать:

*Чак-чак-чакакак!*
*Чак-чак-чакакак!*
*Чакак пăтă пĕçерет,*
*Хăнисене йыхăрать,*
*Алăк тăррине лартать,*
*Сăмсипеле тăвар ярать,*
*Хӳрипеле пăтратать.*

Тетте-чакак пулсан пăтă пĕçернине кăтартса, кам валли пĕçерчĕ-ха тесе вăййа куçса кайма пулать.

## 3-мĕш калаçу

И. Я. Яковлеван „Йăлăнтарни" калавĕ

*Кирлĕ материал:* кăмăлсăр арçын ача ӳкернĕ сюжетлă иллюстраци.

**Ĕç йĕрки.** Воспитатель ачасене ӳкерчĕк пăхма сĕнет – унта арçын ача кĕтесре „тутине тăсса" ларать.

– Мĕн пулнă-ши ку ачапа? Мĕнле шутлатăр? Вăл мĕншĕн питĕ кăмăлсăр?

– Эсир калани тĕрĕс те пулма пултарать. Çакна калав вуласа тĕплĕнрех пĕлĕпĕр. Ăна Иван Яковлевич Яковлев çырнă. Ячĕ „Йăлăнтарни" (воспитатель занятиччен *„йăлăнтарни"* сăмах пĕлтерĕшне ăнлантарать).

### Йăлăнтарни

*Пирĕн атте пасара каймассерен пирĕн валли кулачă илсе таврăнатчĕ. Пĕрре çапла пасартан таврăнсассăн, атте пурсăмăра та пĕрер татăк кулачă валеçсе пачĕ. Мана ыттисенчен сахал панă пек туйăнчĕ. Эпĕ кулача илмесĕр, йăлăнтарса, пĕр кĕтесе кайса лартăм.*

*Атте ман еннелле пăхрĕ те:*

*– Мĕншĕн илместĕн тата кулачăна? – терĕ.*

*Эпĕ пĕр чĕнмесĕр ларатăп. Атте мана панă кулачă татăкне илчĕ те йăмăксене валеçрĕ пачĕ:*

*– Мейĕр, çийĕр Иван татăкне, вăл кĕтесре йăлăнтарса лартăр-ха! – терĕ.*

*Йăмăксем вара манăн татăка çирĕç ячĕç. Кайран ыйтасчĕ – кулачă çук.*

*Çын аллинчи кукăль пысăккăн курăнать тесе ахаль каламан çав ваттисем.* (И. Я. Яковлев)

– Калав кам çинчен пулчĕ? Ар çын ача мĕн ятлă?

– Тĕрĕс, Иван.

– Мĕнле шутлатăр, Иванăн кулач татăкне çиес килнĕ-и? Апла вăл мĕншĕн хăйне паракан татăка илмен?

– Татăкĕ мĕнле пек туйăннă ăна?

– Тĕрĕс, Иван çапла шутлать: *Мана ыттисенчен сахал панă пек туйăнчĕ.*

– Ашшĕ чăнах та Ивана пĕчĕкрех татăк панă-ши? Вăл ачисене

пĕр тан юрататъ пулĕ.

– Çапла, ашшĕ ачисене юрататъ. Вăл вĕсене валли яланах тутлă кулачă илсе килсе хăналатъ. Валеçессе те, паллах, пĕр пек валеçет. Ивана вара темшĕн хăйĕн татăкĕ пĕчĕк пек туйăннă ав.

– Мана калав питĕ килĕшрĕ. Ачасем, сире килĕщрĕ-и?

– Кам ас тăвать калав мĕнле сăмахсемпе вĕçленет?

*(Çын аллинчи кукăль пысăккăн курăнать тесе ахаль каламан çав ваттисем).*

– Тепĕр хут итлĕр тархасшăн, çак сăмахсене: *Çын аллинчи кукăль пысăккăн курăнать.* Эсир мĕнле ăнланатăр вĕсене?

– Çапла, пĕр-пĕрне ăмсанмалла мар. Ăмсанса пăхсан теприн тан пулсан та пысăккăн курăнать.

## 4-мĕш калаçу

### И. Я. Яковлевăн „Эпĕ ўкĕнни" калавĕ

*Кирлĕ материал:* И. Я. Яковлевăн „Ача-пăча калавĕсем" кĕнеки.

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене хăй тавра пуçтаратъ.

– Эпĕ сире паян çак кĕнекерен (И. Я. Яковлевăн „Ача-пăча калавĕсем" кĕнекине кăтартатъ) тепĕр калав вуласа парас тетĕп. Вăл „Эпĕ ўкĕнни" ятлă. Ăна та Иван Яковлевия Яковлев çырнă.

### Эпĕ ўкĕнни

*Пĕрре эпир Кĕркурипе хăма татăкĕсемпе урай варринче вылякаласа ларатпăр. Кĕркури ăнсăртран манăн пўрт пеккине ишрĕ пăрахрĕ. Униăн эпĕ Кĕркурие çиллентĕм те ăна хăма татăкĕпе пуçĕнчен пат! тутартăм. Кĕркури йĕре пуçларĕ. Анне илтрĕ те:*

*– Мĕншĕн тиврĕн? Хăвна тивсессĕн аван пулĕ-и? Авă ĕнтĕ вăл киле каять; кампа вылъăн вăл кайсассăн? – терĕ.*

*Кĕркури чăнах та çĕлĕкне, алсисене тăхăнчĕ те алăк патнелле утса кайрĕ. Эпĕ нимĕн те чĕнместĕп. Тўсеймесĕр йĕтĕм ятăм. «Мĕншĕн кăна çапрăм-ши?» – тесе ўкĕнетĕп хам ăшăмра.*

*Кĕркури эпĕ йĕнине илтрĕ те:*

*– Ан йĕр, Алюш, ан йĕр; атя татах пасăрхи пек выляр,—терĕ. Мана татах намăс пулчĕ. Чарăнаймасăр йĕре пуçларăм. Кĕркури ачашлакаласассăн, йăпаткаласассăн тин чарăнтăм.*

*«Нумай пĕтĕ, сахал çитĕ; пĕрле пурăннине мĕн çитĕ?» – тесе*

*юрлаççĕ ваттисем.* (И. Я. Яковлев)

– Мана ку калав питĕ килĕшрĕ. Ачасем, сирĕн кăмăла кайрĕ-и?

– Калавра камсем çинчен калать?

– Каласа параканĕ кам, мĕн ятлă?

– Тĕрĕс, ăна Алюш тесе чĕнеççĕ. Эсир ун ятне епле пĕлтĕр?

– Çапла, унăн тусĕ Кĕркури ачана çапла чĕнет.

Воспитатель калав сыпăкне вулать:

*Кĕркури эпĕ йĕнине илтрĕ те:*

*– Ан йĕр, Алюш, ан йĕр; атя татах паçăрхи пек выляр, – терĕ.*

– Ачасем, Алюшпа Кĕркури урай варринче мĕнле вылянă?

– Аса илĕр-ха Кĕркури мĕншĕн йĕме пуçланă?

– Çапла, тĕрĕс. (Вуласа парать: *Кĕркури ăнсăртран манăн пӳрт пеккине ишрĕ пăрахрĕ. Унишăн эпĕ Кĕркурие çиллентĕм те ăна хăма татăкĕпе пуçĕнчен пат! тутартăм. Кĕркури йĕре пуçларĕ.)*

– Кĕркурин ыратать, вăл йĕрет. Ман шутпа Кĕркури ыратнипе çеç йĕмест пулĕ. Ыратнинчен ытларах кӳреннипе йĕрет – юри çĕмĕрмерĕ вĕт-ха ĕнтĕ тусĕн çуртне – **ăнсăртран** пулчĕ ку, асăрхайманран.

Воспитатель кирлĕ йĕркене тепĕр хут вулать: *Кĕркури ăнсăртран манăн пӳрт пеккине ишрĕ пăрахрĕ.*

– Ачасем, Алюш та йĕрсе ярать вĕт-ха. Вăл тата мĕншĕн йĕрсе ячĕ?

– Алюш ӳкĕннипе йĕрет.

– Аса илер-ха амăшĕ ăна мĕн терĕ: *Мĕншĕн тиврĕн? Хăвна тивсессĕн аван пулĕ-и? Авă ĕнтĕ вăл киле каять; кампа выльăн вăл кайсассăн?*

– Алюш хăй тĕрĕс мар тунине ăнланса илчĕ, вăл ӳкĕнет. Чăтайманнипе йĕрсе ячĕ вăл.

– Алюш хăçан йĕме чарăнчĕ?

– Ăна кам ачашларĕ, йăпатрĕ?

– Çапла, Кĕркури Алюша пăрахса килне каймарĕ. Вăл тусне шеллерĕ, ăна йăпатма тăрăшрĕ.

– Мĕнле шутлатăр ачасем малалла мĕнле вылĕç-ши?

(Воспитатель ачасене калаçма хавхалантарать).

– Ачасем, сире ку калавра кам килĕшрĕ?

Воспитатель ачасене итлет, вĕсене хăйсен шухăшне сăлтавлама хавхалантарать.

– Мана ачасем иккĕшĕ те килĕшрĕç. Вĕсем туслă, пĕр-пĕрне

ӑнланма, хӗрхенме, каҫарма пултараҫҫӗ. Вӗсем мана сире аса илтерчӗҫ. Эсир те хушӑран ахалех, ним ҫук ҫӗртенех пӗр-пӗрне кӳрентерме пултаратӑр. Анчах эсир те Алюшпа Кӗркури пекех туслӑ ачасем. Ӑнланса илсе каллех пӗрле вылятӑр.

– Кам ас тӑвать, калав мӗнле сӑмахсемпе вӗҫленчӗ?

*«Нумай пӗтӗ, сахал ҫитӗ; пӗрле пурӑннине мӗн ҫитӗ?» – тесе юрлаҫҫӗ ваттисем.*

Атьӑр ҫак сӑмахсене ас туса юлатпӑр. (Тепре калаттарать). Питӗ тӗрӗс каланӑ – пӗрле пурӑннине мӗн ҫитӗ?

**Пӗтӗмлетӳ занятийӗ**

*Заняти тӗллевӗ:* И. Я. Яковлевӑн ача-пӑча валли ҫырнӑ калавӗсене аса илме пулӑшасси, кӑмӑл-сипет енчен малалла аталантарасси, калаҫма, харкӑм шухӑшне палӑртма хавхалантарасси.

*Кирлӗ материал:* И. Я. Яковлев портречӗ, „И. Я. Яковлев калавӗсем" кӗнеке, ӳкерчӗксем.

*Заняти йӗрки.* Воспитатель ачасене „хӑнана" кайма пуҫтарать.

– Ачасем, халӗ эпир хӑнана кайма пуҫтарӑнӑпӑр. Лашапа кайӑпӑр-и? Лашапа хӑвӑртрах ҫитӗпӗр пулӗ.

– Лаша ҫинчен сӑвӑ кам ас тӑвать?

Сӑвва ушкӑнпа аса илеҫҫӗ, унта каланӑ хусканусене тӑваҫҫӗ.

*Лашана эп юрататӑп,*
*Ҫилхине хитре туратӑп*
*Якататӑп хӳрине те*
*Хӑнана кӗҫ вӗҫтеретӗп.*

Унтан воспитатель темиҫе ачана калаттарать. Юлашкинчен пӗри лаша ҫине „утланать", ыттисем „урапа" ҫине лараҫҫӗ (Пысӑк тетте-лаша ҫук пулсан пӗчӗк теттепе те выляса илме пулать, картинӑпа та усӑ курма юрать). Ларсан воспитатель хӑй П. Ялкирӗн тепӗр сӑввине аса илтерет:

*Ман лашан кӑтра ҫилхе,*
*Кустӑрмаллӑ урисем.*
*Эп ача садне ҫил пек*
*Унпа ҫитӗп вӗҫтерсе.*

– Ӑҫта ҫитрӗмӗр-ха эпир?

Кунта пирӗн кӗнекесен тӗнчи. (Воспитатель ачасемпе кӑнекесен кӗтесне ҫитсе чарӑнаҫҫӗ).

– Ачасем, пăхăр-ха – кунта сăн ӳкерчĕк те пур. (Кĕнекесен хушшине И. Я. Яковлев сăн ӳкерчĕкне лартнă). Камăн сăн ӳкерчĕкĕ ку, пĕлетĕр-и?

– Ку вăл – Иван Яковлевич Яковлев. Эсир ун ятне илтнĕ, вăл камне пĕлетĕр. Эпир иртнĕ занятисенче унăн калавĕсемпе паллашрăмăр. Аса илер-ха вĕсене.

Воспитатель ачасем итленĕ калавсенчи ӳкерчĕксене кăтартать, мĕнле калавран пулнине ыйтать.

## ОКТЯБРЬ

### Пĕрремĕш эрне. Юмахсем

Чӳк уйăхĕн пĕрремĕш эрнинче ачасене халăх юмахĕсемпе паллаштаратпăр.

*Ĕç тĕллевĕ:* юмахсене кăмăллăн итлеме-йышăнма вĕрентесси, мĕн хыççăн мĕн пулса иртнине ас туса юлма, юмахри геройсен ячĕсăнарĕсене аса хывма пулăшасси, содержани тăрăх калаçтарасси.

**1-мĕш калаçу**

Йăва (вырăс халăх юмахĕ)

*Кирлĕ материал:* „Йăва" юмах кĕнеки, теттесем (юмах тăрăх), пӳрне театрĕ, модель калăпламалли капăшсем.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем паян пирĕн пата хăна килчĕ. Паллатăр-и эсир ăна? („Йăва"-тетте кăтартать). Вăл хăй çинчен юмах кĕнеке илсе килчĕ. Кам тавçăрчĕ юмахĕ мĕн ятлă? Халĕ эпĕ сире ку юмаха каласа парам. Юмаха пĕлекеннисем мана пулăшса пырăр.

Педагог юмаха калать, каланă майăн пулса иртнине пӳрне театрĕн теттисемпе кăтартса пырать.

### Йăва (вырăс халăх юмахĕ)

*Пĕр старикпе карчăк пурăннă тет. Старикĕ карчăкĕнчен:*

*– Карчăк, йăва пит çиес килет. Йăва пĕçерсе пар-ха, – тесе ыйтать тет.*

*– Мĕнрен пĕçерес-ха, çăнăх çук-çке! – тет карчăкĕ.*

*– И-и, карчăк, ырçа тĕпне хырса пăх, пура тĕпне шăлса пăх, пĕр йăва тумалăх пуçтарăнĕ-пуçтарăнех, – тет.*

*Карчăк ырçа тĕпне хырать, пура тĕпне шăлать, пĕр йĕкĕр ывăç пек çăнăх тупать. Йăва пĕçерет те сивĕнме кантăк çине хурать.*

*Йăва выртрĕ-выртрĕ те сасартăк кусрĕ кайрĕ – кантăк çинчен сак çине, сак çинчен урайне, урай тăрăх алăк патне, алăк янаххи урлă çенĕке йăлт! сиксе каçрĕ те крыльцана, крыльцаран кил хушшине, кил хушшинчен урама, унтан çулпа кусса кайрĕ.*

*Кусса пырать йăва çулпа. ăна хирĕç мулкач:*

*– Ну, йăва, эп сана çиетĕп, – тет.*

*– Ан çи мана, катăк тута, эпĕ сана юрă юрласа кăтартăп, – тет те йăва юрласа ярать:*

*– Эпĕ йăва, ху пĕлен,*
*Пурнчен те лайăххи:*
*Мана ырçа тĕпĕнчен*
*Хырса-шăлса пуçтарнă,*
*Сĕтпе-çупа пĕçернĕ,*
*Кантăк çинче сивĕтнĕ.*
*Эпĕ тартăм старикрен,*
*Эпĕ тартăм карчăкран,*
*Санран, катăк тутаран,*
*Тарăп эпĕ çăмăлах.*

*Юрласа пĕтерет те малалла кусса каять. Мулкач курса çеç юлать. Кусса пырать йăва, хирĕç кашкăр:*

*– Йăва, йăва, эп сана çиетĕп, – тет.*

*– Ан çи мана, сăрă кашкăр, эпĕ сана юрă юрласа паратăп, – тет йăва.*

*– Эпĕ йăва, ху пĕлен,*
*Пуринчен те лайăххи:*
*Мана ырçа тĕпĕнчен,*
*Мана пура тĕпĕнчен*
*Хырса-шăлса пуçтарнă,*
*Сĕтпе-çупа пĕçернĕ,*
*Кантăк çинче сивĕтнĕ.*
*Эпĕ тартăм старикрен,*
*Эпĕ тартăм карчăкран,*
*Эпĕ тартăм мулкачран,*
*Санран, кăвак кашкăртан,*
*Тарăп эпĕ çăмăлах.*

*Юрласа пĕтерсенех кăлтăр! кусса каять, кашкăр пăхса кăна*

*тăрса юлать.*

*Кусса пырать йăва, ăна хирĕç упа.*

*– Йăва, эп сана çиетĕп, – тет упа.*

*– Ан çи мана, эпĕ сана юрă юрласа кăтартатăп, – тет каллех йăва.*

*– Эпе йăва, ху пĕлен,*
*Пуринчен те лайăххи:*
*Мана ырçа тĕпĕнчен,*
*Мана пура тĕпĕнчен*
*Хырса-шăлса пуçтарнă,*
*Сĕтпе-çупа пĕçернĕ,*
*Кантăк çинче сивĕтнĕ.*
*Эпĕ тартăм старикрен.*
*Эпĕ тартăм карчăкран,*
*Эпĕ тартăм мулкачран,*
*Санран, чалăш ураран,*
*Тарăп эпĕ çăмăлах.*

*Каллех тарать йăва. Кусса пырать, ăна хирĕç тилĕ:*

*– Лайăх-и, йăва тус? Эпĕ сана çиетĕп, – тет.*

*– Ан çи мана, тилĕ тус, эпĕ сана юрă юрласа паратăп, – тет те йăва юрласа ярать:*

*– Эпĕ йăва, ху пĕлен,*
*Пуринчен те лайăххи:*
*Мана ырçа тĕпĕнчен,*
*Мана пура тĕпĕнчен*
*Хырса-шăлса пуçтарнă...*

*– Пит аван юрă, – тет тилли. – Анчах та эпĕ пит ватăлса кайрăм-çке, хăлха витĕр илтмест. Ман сăмса çине ларса юрласа пар-ха юрруна. Хытăрах юрла, – тет.*

*Йăва тилĕ сăмси çине сиксе ларать те юрлама пуçлать. Тилле çакă çеç кирлĕ. Вăл айван йăвана кап! хыпать те ам! çисех ярать.*

– Вăт мĕнле вăл Йăва! Аса илĕр-ха кинеми ăна мĕнле пĕçерчĕ? Çакна туса кăтартăр-ха. Малтан кинеми мĕн тăвать? (Çăнăх пуçтарать). Унтан мĕн тăвать? (Чуста çăрать). (Ачасене кинеми çăнăх мĕнле пуçтарнине, чуста мĕнле çăрнине хусканусемпе кăтартаççĕ).

–Мĕнлерех йăва пиçсе тухрĕ? Çаврака, тутлă, вĕри – пĕçерет.

– Айтăр юмаха тепĕр хут аса илĕпĕр, кăпăшсемпе кăтартăпăр.

– Ку пирĕн пӳрт пулать (тăваткал илсе хурать).

– Халь пӳрт тăрри кирлĕ (виçкĕтеслĕх илсе пӳрт тăррине майлаштарать)

– Ку йăва пулать (пĕчĕк сарă çавракa илет). Пирĕн Йăва мĕн тĕслĕ? Сарă.

– Мулкачĕ мĕн тĕслĕ? Сăрă, пĕчĕк.

– Кашкăр вара? Вăл мулкач пекех сăрă, анчах та пысăк.

– Кашкăр валли çавракa тупăр тархасшăн.

– Унтан Йăва мĕнле чĕр чуна тĕл пулнă?

– Упа мĕнле?

– Упа хăмăр, пысăк. Çавăнпа пысăк хăмăр çавракa илетпĕр.

– Унтан Йăва мĕне тĕл пулчĕ?

– Тилĕ мĕнле? Мĕнле çавракa илмелле? Хĕрлемес.

Ачасем ушкăнпа калăпланă модельсен речĕ тăрăх юмаха аса илсе каласа параççĕ.

Унтан воспитатель ачасене пӳрне театрĕн геройĕсемпе выляма сĕнет, вăйă вăхăтĕнче вĕсене пĕр-пĕринпе диалогсем йĕркелеме пулăшать.

## 2- мĕш калаçу

Кермен (вырăс халăх юмахĕ)

*Кирлĕ материал:* хут листи, кăранташ, тĕрлĕ тĕслĕ çавракасем, ӳкерчĕклĕ кĕнеке.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, эсир тĕрлĕ чĕр чун, кăпшанкă ăçта пурăннине пĕлетĕр-и?

– Шăна ăçта пурăнать?

– Вăрăмтуна ăçта пурăнать?

– Шăши ăçта пурăнать? Çапла, шăтăкра, пĕчĕк шăтăкра. Ăна тата йĕнĕ теççĕ. Хир шăши хирте пурăнать, вăрман шăши вара – вăрманта. Шăшисем килти чĕр чунсем мар – çавăнпа çын таврашĕнче вĕсем вăрттăн пурăнаççĕ, пытанса.

– Шапа ăçта пурăнать? (Шывра пурăнаканнисем те, çĕр çинче пурăнаканнисем те пур)

– Мулкач, тилĕ, кашкăр, упа тата ăçта пурăнаççĕ?

– Çапла, вĕсем пурте вăрманта, кашни хăйĕн шăтăкĕнче пурăнать. Çавăн пек шăтăка йĕнĕ тесе те калаççĕ. Халĕ эпĕ сире каласа парас тенĕ юмахра вара çак чĕр чунсем пурте пурте пĕрле,

пĕр çуртра пурăннă. Юмах „Кермен” ятлă. Кермен вăл мĕнле çуртши?

– Акă пăхăр-ха ӳкерчĕк çине. Çакăн пек вăл юмахри кермен.

Юмаха каласа панă май воспитатель кĕнекери ӳкерчĕксене кăтартса пырать.

**Кермен (вырăс халăх юмахĕ)**

*Пĕр старик пасартан чӳлмексем турттарса таврăннă. Пĕр чӳлмекĕ ăнсăртран лав çинчен тухса ӳкнĕ те кăлтăрр!кусса кайнă çул хĕрне. Ун патне шăпăрçă шăна вĕçсе пырса ларать те çапла ыйтать:*

*– Хуçи пур-и, майри пур-и,*
*Кам пурнать ку керменре?*

*Курать шăна – шалта никам та сасă паракан çук. Вара вăл чӳлмеке вĕçсе кĕчĕ, тет те, пурăнмах пуçларĕ, тет.*

*Вĕçсе килчĕ нăйăлти вăрăмтуна. Вĕçсе килчĕ те ыйтать хайхискер:*

*– Хуçи пур-и, майри пур-и,*
*Кам пурнать ку керменре?*
*– Эпĕ шăпăрçă-шăна. Эсĕ кам?*
*– Эпĕ вăрăмтуна.*
*– Кил манпа пурăнма.*

*Акă вĕсем иккĕн пурăнма пуçларĕç. Кĕçех шăши чупса çитрĕ те ыйтать:*

*– Хуçи пур-и, майри пур-и,*
*Кам пурнать ку керменре?*
*– Эпĕ шăпăрçă-шăна.*
*– Эпĕ вăрăмтуна. Эсĕ кам?*
*– Эпĕ шăши тус – хушка пуç.*
*– Кил пирĕнпе пурăнма.*
*Акă вĕсем виççĕн пĕрле пурăнма пуçларĕç.*
*Кĕçех катăк тута, ват шапа, сиккелесе çитрĕ.*
*– Хуçи пур-и, майри пур-и,*
*Кам пурнать ку керменре?*
*– Эпĕ шăпăрçă-шăна.*
*– Эпĕ вăрăмтуна.*
*– Эпĕ шăши тус – хушка пуç. Эсĕ кам?*
*– Эпĕ катăк тута, ват шапа,*
*– Кил пирĕнпе пурăнма.*

*Акă вĕсем тăваттăн пĕрле пурăнма пуçларĕç.*
*Чупса çитрĕ татăк хӳре, ват мулкач.*
*– Хуçи пур-и, майри пур-и,*
*Кам пурнать ку керменре?*
*– Эпĕ шăпăрçă-шăна.*
*– Эпĕ вăрăмтуна.*
*– Эпĕ шăши тус – хушка пуç.*
*– Эпĕ катăк тута, ват шапа. Эсĕ кам?*
*– Эпĕ мулкач, мул пухакан,*
*Сăрт хĕрринрче пурăнакан.*
*– Кил пирĕнпе пурăнма.*
*Акă вĕсем пиллĕкĕн пĕрле пурăнма пуçларĕç.*
*Йăпăртатса чупса çитрĕ тилĕ тус.*
*– Хуçи пур-и, майри пур-и,*
*Кам пурнать ку керменре?*
*– Эпĕ шăпăрçă-шăна.*
*– Эпĕ вăрăмтуна.*
*– Эпĕ шăши тус – хушка пуç.*
*– Эпĕ катăк тута, ват шапа.*
*– Эпĕ мулкач, мул пухакан,*
*Сăрт хĕрринрче пурăнакан. Эсĕ кам?*
*– Эпĕ тилĕ, ват ăста,*
*Сăмах çапма пит ăста.*
*– Кил пирĕнпе пурăнма.*
*Акă вĕсем ултттăн пулчĕç.*
*Лĕпсĕртетсе чупса çитрĕ ырхан кашкăр. Чупса çитрĕ те ыйтать:*
*– Хуçи пур-и, майри пур-и,*
*Кам пурнать ку керменре?*
*– Эпĕ шăпăрçă-шăна.*
*– Эпĕ вăрăмтуна.*
*– Эпĕ шăши тус – хушка пуç.*
*– Эпĕ катăк тута, ват шапа.*
*– Эпĕ мулкач, мул пухакан,*
*Сăрт хĕрринрче пурăнакан.*
*– Эпĕ тилĕ, ват ăста,*
*Сăмах çапма пит ăста. Эсĕ кам?*
*– Эпĕ кашкăр-кашаман.*
*– Кил пирĕнпе пурăнма.*

*Акă вĕсем çиччĕн пулчĕç.*
*Упаленсе килчĕ упа. Килчĕ те ыйтать:*
*– Хуçи пур-и, майри пур-и,*
*Кам пурнать ку керменре?*
*– Эпĕ шăпăрçă-шăна.*
*– Эпĕ вăрăмтуна.*
*– Эпĕ шăши тус – хушка пуç.*
*– Эпĕ катăк тута, ват шапа.*
*– Эпĕ мулкач, мул пухакан,*
*Сăрт хĕрринрче пурăнакан.*
*– Эпĕ тилĕ, ват ăста,*
*Сăмах çапма пит ăста.*
*Эсĕ ху кам пулатăн?*
*– Эпĕ кашкăр-кашаман.*
*– Эпĕ упа-утаман,*
*Ик урапа утакан, ĕне тирне сĕвекен!*

*Çапла каларĕ те çăмламас упа чӳлмек çине лап! пырса ларчĕ. Чӳлмекĕ чăл-пар! кăна çĕмĕрĕлсе кайрĕ. Унта пурăнакансем тĕрлĕ çĕрелле тапса сикрĕç.*

– Ачасем, сире, ку юмах килĕшрĕ-и?

– Кам ас туса юлчĕ – мĕн ятлăччĕ вăл?

– Керменре мĕнсем пурăнма пуçларĕç, аса илĕр-ха (шăна, вăрăмтуна, шăши, шапа,мулкач, тилĕ, кашкăр, упа).

– Юмахра вĕсене мĕнле чĕнеççĕ, аса илĕр (шăпăрçă-шăна; вăрăмтуна; шăши тус – хушка пуç; катăк тута, ват шапа; мулкач, мул пухакан, сăрт хĕрринче пурăнакан; тилĕ, ват ăста, сăмах çапма пит ăста; кашкăр-кашаман; упа-утаман, ик урапа утакан, ĕне тирне сĕвекен).

– Хăйсене кермене кĕртме мĕнле ыйтрĕç вĕсем? Мĕн каларĕç? *(Хуçи пур-и, майри пур-и, кам пурнать ку керменре?)*

– Атьăр çак юмаха выльăпăр. Керменне хамăр тăвăпăр. Куртăр-и сире валеçсе панă хутсем çинче ăна ӳкернĕ те ĕнтĕ. Алăкне çеç ӳкермелли юлнă – чĕр чунсем кĕме пултарччăр.

– Чи малтан кермен патне мĕнле чĕр чун килнĕ?

– Шăни мĕнлерех?

– Эпир ăна акă епле ӳкерĕпĕр...

Воспитатель ачасене чĕр чунсенчен кашниййĕ мĕнпе палăрса тăнине сăнаттарать. (Тĕслĕхрен, шăнан çунаттисем пур, вăрăмтунан

– питех те хытă, ыратармалла сăхакан вăрăм сăмси; шапан – тути урлă, тилĕн – сăмсипе кăпăшка хӳри, кашкăрăн – пысăк çивĕч шăлĕсем тата тукмак хӳри, упан вара икĕ çавракан хăлха).

Ачасем ывăнмасан воспитатель вĕсене юмаха теттесемпе выляма сĕнет. Заняти вăййа куçса каять.

### 3-мĕш калаçу

Тилĕ тус (чăваш халăх юмахĕ)

Юмахпа паллаштариччен ачасене тилĕ тăхăнакан япаласене кăтартмалла – ӳкерчĕксене е япалисене хăйсене.

*Кирлĕ материал*: юмах кĕнеки, тилĕ ташлама тăхăннă тум.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, паян сире тепĕр юмах каласа парăп. Вăл пĕр чее чĕр чун çинчен. Эпĕ вăл мĕнлерех пулнине калăп, эсир ку мĕнле чĕр чун иленне тавçăрма тăрăшăр. Вăл вăрманта пурăнать, хăй хĕрлĕ-хĕрлемес. Кăпăшка вăрăм хӳреллĕ. Шăши тытать. Чăхсене те шеллемест.

– Çапла, паян юмах тилĕ çинчен. Ун ячĕ „Тилĕ тус". Ку чăваш халăх юмахĕ.

### Тилĕ тус (чăваш халăх юмахĕ)

*Пĕр старик вăрмантан чĕрĕллех тилĕ тытса таврăнать те карчăкне калать:*

*– Карчăк, манăн кивĕ çĕлĕке кăмакана пăрахса çунтарса яр. Эпĕ çĕлĕклĕх питĕ аван тир тупса килтĕм, пăх-ха,— тет те михĕрен тилĕ кăларса урайне ярать.*

*Карчăкĕ вут хутса тăнă пулнă. Старик çĕлĕкне илет те кăмакана пăнлаттарать. Старик тилле калать:*

*– Тилĕ тус, ĕнтĕ эпĕ сана çĕлĕк тума пусатăп. Виличчен эсĕ пире пĕрре ташласа кăтарт-ха.*

*Старик çĕçĕ хăйрать. Мĕскĕн тилли унталла-кунталла пăхкалать. Мăнтарăн чунĕ! Пит вилес килмест пуль! Тилĕ чӳречерен вăрман еннелле вăрттăн пăхать.*

*Старик çĕçĕ хăйраса пĕтерчĕ те тилле калать:*

*– Ну, тилĕ тус, ташла, ташламастăн пулсан – пусатăп.*

*Тилли:*

*– Ташласси ташлăп та эпĕ, манăн ташлама хитре кĕпе çук*

*çав, – тет.*

*Карчăкпа старик хайхи тилле кĕпе тупса тăхăнтараççĕ. Тилли, ташлама хатĕрленсе, ура çине тăчĕ. Хăйне хăй тăрăххăн пăхкалать.*

*– Мĕншĕн ташламастăн тата, тилĕ тус? – ыйтать старик.*

*– Ташласса ташлăп та, – тет тилли, – манăн пуçра хушпу çук-çке.*

*Карчăкпа старик тилле хушпу тупса тăхăнтарчĕç. Тилли хушпу тăхăнсан та çаплах ташламасть-ха. Хăйне хăй тата тăрăххăн пăхать.*

*Карчăкпа старик иккĕшĕ те:*

*– Ташла ĕнтĕ, тилĕ тус, ташла, мĕншĕн ташламастăн? – теççĕ.*

*Тилли калать:*

*– Ташласса ташлăп та, манăн тенкĕллĕ мăй çыххи çук-çке. Карчăкпа старик тенкĕллĕ мăй çыххи те параççĕ. Тилли çаплах ташламасть.*

*– Манăн алăра сулă çук-ха тата, – тет.*

*Старикпе карчăкĕ тилĕ мĕн ыйтнине пурне те тупса пачĕç те, тилли кăшт уçăлса кулкалама пуçларĕ. Старик кĕсле калама тытăнчĕ, тилĕ хуллен-хуллен ташлама пуçларĕ. Çăмăлланса, çăмăлланса ташлать. Хушпу тенкисем, мăй çыххи тенкисем шăнкăртатса çеç тăраççĕ. Карчăкĕ çунакан кăмакана пăрахсах алă çупа пуçларĕ.*

*– Çăмăлтарах ташла, тилĕ тус, ну, яра пар, – тет старик. Хăй те алхасса кайнă. Сиксе тăрса тилĕпе ташласси анчах. Тилли тем тĕрлĕ илемлĕ, çăмăллăн ташлать. Стариккипе карчăкĕ тĕлĕнсе хытсах кайрĕç.*

*Тилĕ ташласа çўрерĕ-çўрерĕ те хăйне ăшă пулнă пек тытса калать:*

*– Кантăк хуппи уçăрах. Алăк уççи уçăрах.*

*Хай карчăк вăр-вар алăкне, кантăкне уçса пăрахрĕ. Тилĕ хĕпĕртесе кула-кула ташласа çўрет. Ташласа çўрерĕ-çўрерĕ те алăкран вĕлт тухса шурĕ. Карчăкпа старик çăвара карса юлчĕç. Пĕтĕм мул та, çĕлĕк те пĕтрĕ. Тилли пит чее çав!*

– Ачасем, сире юмах килĕшрĕ-и?

– Юмах мĕнле пуçланчĕ? Аса илĕр.

Ачасем чăрманса тăрсан, воспитатель хăй аса илтерет.

*(Пĕр старик вăрмантан чĕрĕллех тилĕ тытса таврăнать те карчăкне калать:*

*– Карчăк, манăн кивĕ çĕлĕке кăмакана пăрахса çунтарса яр. Эпĕ çĕлĕклĕх питĕ аван тир тупса килтĕм, пăх-ха,— тет те михĕ ăшĕнчен тилле кăларса урайне ярать.*

*Карчăкĕ вут хутса тăнă пулнă. Старик çĕлĕкне илет те кăмакана пăнлаттарать)*

– Ватă старик çĕнĕ çĕлĕклĕ пулайрĕ-и?

– Çук çав, кивви те çук çунса кайнă, çĕнни те пулмарĕ, вăрманта çӳрет.

– Ачасем, хăйне ташлама ыйтсан тилĕ тӳрех хуравланă-и, е кăшт шутласа тăнă?

– Тилĕ мĕнле капăрланнине аса илĕр-ха. Малтан вăл ватăсенчен (вĕçленмен интонаципе) ... мĕн ыйтрĕ? Унтан вара ...? (Воспитатель ачасене ӳкерчĕк тăрăх хуравлама пулăшать).

– Ташласан ташласан тилĕ мĕн тет? Аса илĕр.

*– Кантăк хуппи уçăрах. Алăк уççи уçăрах.*

– Чăнах та ăшша пиçнĕ-ши тилĕ? Воспитатель тилĕ каланă сăмахсене 2-3 ачана калаттарать.

– Юмах мĕнле вĕçленчĕ? Вĕçĕнче мĕн калана? *(Тилĕ ташласа çӳрерĕ-çӳрерĕ те алăкран вĕлт тухса шурĕ. Карчăкпа старик çăвара карса юлчĕç. Петĕм мул та, çĕлĕк те пĕтрĕ. Тилли те пит чее çав!)*

– Çапла, мул та, çĕлĕк те пĕтрĕ.

– Ачасем, сире карчăкпа старике шел-и?

– Мĕншĕн?

– Тытман упа тирне сӳме хушман ваттисем. „Кашкăрне тытман, тирне сутнă", – тесе те калаççĕ халăхра. Васкама кирлĕ марччĕ карчăкпа старикĕн.

### 4-мĕш калаçу

Упапа хĕр ача (вырăс халăх юмахĕ)

*Кирлĕ материал:* упа маски.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, эсир юмахсем юратнине пĕлетĕп. Çавăнпа паян тепĕр юмах каласа парăп. Вăл „Упапа хĕр ача" ятлă.

**Упапа хĕр ача (вырăс халăх юмахĕ)**

*Пĕрре хĕр ачасем вăрмана çырлана кайнă. Çырла татнă та килелле утнă, пăхаççĕ – пĕр хĕр ачи çук. Ăна чĕнме пуçланă, чĕннĕ-чĕннĕ – никам та хирĕç сас паман. Яла таврăнна та хĕр ачасем Машук çухалса юлни çинчен каласа кăтартнă. Машук çÿренĕ-çÿренĕ те вăрманти пĕр пÿрт патне пырса тухнă. Чÿречерен шакканă, никам та сăмах хушман. Алăкне тĕксе пăхнă – алăкĕ яриех уçăлса кайнă. Машук пÿрте кĕнĕ те сак çине ларнă.*

*Ку пÿртре упа пурăннă. Çав вăхăтра вăл килте пулман.*

*Каçхине упа киле таврăннă. Хĕрачана курсан, вăл çав тери хĕпĕртесе кайнă.*

*– Халь ĕнтĕ сана киле ямастăп, кунтах пурăнма юлатăн, – тет.*

*Хĕрача чылай макăрнă, анчах та нимĕн те тăваймăн. Упапа вăрманти пÿртре пурăнма пуçланă.*

*Упа кашни кунах вăрмана туха-туха кайнă. Хĕрача апат-çимĕç хатĕрленĕ, пÿрте тирпейленĕ. Унăн ашшĕ-амăшĕ патне çав тери каяс килнĕ. Мĕн тумалла-ха?*

*– Упа мучи, аттепе аннене яла кучченеç леçсе пар-ха? – тенĕ вăл.*

*Упа килĕшнĕ.*

*Акă хĕрача кукăль пĕçерсе тултарнă. Пысăк карçинкка тупнă та упана:*

*– Эпĕ çак карçинккана кукăль хурса тултарăп, эсĕ ăна яла кайса пар. Анчах асту, пĕр кукăльне те ан çи. Эпĕ пÿрт тăррине хăпарăп та сана пăхса ларăп, – тенĕ.*

*Упа тула тухсан, хĕрача карçинккана кĕрсе ларнă та çиелтен кукăльсем хурса тултарнă. Упа пÿрте кĕнĕ те карçинккана çурăм çине çĕклесе лартнă. Унтан вăл ялалла уттарнă.*

*Утсан-утсан, упа ывăнса çитет:*

*– Тунката çине ларам-ха,*

*Пĕр кукăльне çием-ха, – тет.*

*Хĕрача карçинккаран:*

*– Куратăп, куратăп! Тунката çине ан лар, кукăль ан çи! – тет.*

*Упа каялла çаврăнса пăхать те тĕлĕнет:*

*– Епле чее ку хĕр! Çÿлте-е ларать, аякка-а курать! – тет.*

*Карçинккине йăтать те малалла утать. Татах кăштах каять те ывăнать:*

*– Тунката çине ларам-ха,*
*Пĕр кукăльне çием-ха, – тет.*
*Хĕрача каллех:*
*– Куратăп, куратăп! Тунката çине ан лар, кукăльне ан çи!- тет.*

*– Ав епле чее хĕр! Çӳлте-е ларать, аякка-а курать! — тет упа. Унтан тăрать те хăвăртрах чупса каять.*

*Акă упа яла чупса кĕрет. Машукăн ашшĕпе амăшĕ пурăнакан çурта тупать те хапхаран шаккать:*

*– Шак-шак-шак! Питĕркĕчне уçăр, хапхине уçăр! Эпĕ сире валли Машукран кучченеç илсе килтĕм! – тет.*

*Сасартăк йытăсем вĕрсе ыраççĕ те упа патне чупаççĕ. Упа карçинккине хапха патне пăрахать те вăрмана тарать.*

*Старик хапхине уçать. Карçинкка патне пырать те ун хупăлчине уçать. Карçинккара хăйĕн хĕрачи кулса ларать.*

– Ачасем, сире ку юмах килĕшрĕ-и?

– Машук ăçта лекнĕ?

– Машукăн килне каяс килнĕ-и?

– Апла мĕншĕн кайман-ха вăл?

– Хĕр ача килне кайма мĕнле май тупнă? (Юмахăн сыпăкне аса илтерет).

– Хĕр ача тавçăруллă пулни ăçтан курăнать? Аса илĕр-ха, упа хĕр ачана мĕн каларĕ?

– Хĕр ача упана систермесĕр карçинккана епле кĕрсе ларма пултарчĕ?

– Упа çул çинче карçинккана ан уçăр тесе вăл мĕн шутласа тупрĕ-ха?

– Упан кукăль çиесси пулчĕ-и?

– Ачасем, айтăр-ха упа вăрманпа мĕнле пынине кăтартатпăр. Акă вăл карçинккине йăтнă, ак çапла пырать пуль, çапла-и?

– Миша, сан шутпа мĕнле пырать? Аса илĕр-ха, ун карçинкки йывăр вĕт! Çавăнпа тен малалла ӳпĕннĕ пулĕ. Утса кăтартăр-ха çавăн пек.

– Ну, чăн-чăн упасем пекех вара эсир!

Воспитатель ачасемпе юмахри диалога выляса илет. Упа вырăнне хăй пулма пултарать, упа маскине тăхăнать, сассине те упанни евĕр кăларать, кайран упа сăмахĕсене ачасем те калаççĕ):

*– Ух, ывăнтăм. Тунката çине ларам-ха, пĕр кукăльне çием-ха.*

(Воспитатель ачасене кирлӗ сӑмахсене аса илме, хуравлама пулӑшать:

*– Куратӑп, куратӑп! Тунката ҫине ан лар, кукӑльне ан ҫи!*

*– Ав епле чее хӗр! Ҫӳлте-е ларать, аякка-а курать! Каям-ха васкарах малалла.)*

– Ачасем, Маша киле ҫитрӗ-и?

– Сире юмахра геройсенчен хӑшӗ килӗшрӗ? Мӗншӗн? Юмахри хӑш вырӑна ас туса юлтӑр?

**Пӗтӗмлетӳ занятийӗ**

*Заняти тӗллевӗ:* Ачасем юмах ҫинчен мӗн пӗлнине ҫирӗплетесси; юмахсене тимлӗ итлеме, хӑшпӗр сыпӑксене выляса кӑтартма, геройсене палласа илме вӗрентсе пырасси; юмахсемпе кӑсӑклантарасси.

*Кирлӗ материал:* тетте-кушак, „асамлӑ хутаҫ", тетте-йӑва, теттесем, ӳкерчӗксем: шӑна, вӑрӑмтуна, шӑши, шапа, мулкач, тилӗ кашкӑр, упа. „Тилӗ тус" юмахри пӗр-пӗр тум хатӗр. Ачасене хӑналама кукӑль.

*Заняти йӗрки.* Ачасем патне хӑнана Мӑр-мӑр кушак килет.

– Сывлӑх сунатӑп, сире, ачасем. Мана Мӑр-мӑр тесе чӗнеҫҫӗ. Эпӗ сирӗн пата асамлӑ хутаҫ илсе килтӗм. Ку хутаҫ мӗншӗн асамлӑ тетӗр-и? Асамлӑ ҫав, асамлӑ – унта юмахсем пурӑнаҫҫӗ вӗт. Сисетӗп-ха – сирӗн хутаҫри юмахсене питӗ пӗлес килнине.

Воспитатель: – Паллах, пӗлес килет, ҫапла вӗт, ачасем? Эпир хамӑр та нумай юмах пӗлетпӗр ӗнтӗ. Мӑр-мӑр тусӑм сана ачасем тӗлӗнтерӗҫ те акӑ. Эсӗ лар, ывӑнтӑн пулӗ. Хутаҫна пӑхма юратчӗ-ши? (Хутаҫне пӑхать).

– Ачасем, пӗлетӗр-и мӗн пур кунта? Сире ун юррине юрласа парам. Ҫак юрра кам юрлать-ши? Вӑл мӗнле юмахран? Итлӗр, шутлӑр. Воспитатель Г. Ирхин „Йӑва юррине" юрласа парать:

*Асаннеҫӗм, асанне,*
*Шурӑ-шурӑ асанне!*
*Асаттеҫӗм, асатте,*
*Шурӑ-шурӑ асатте!*
*Хӑймапа мана юрсассӑн,*
*Пӗҫерсессӗн, ывӑнсассӑн,*
*Сивӗтме тесе хурсассӑн*
*Йӑпӑр-япӑр ҫаврашкан*

*Кусса кайăп аякка:*
*Хырăм-çурăм — яп-яка!*
*Ах, упаçăм утаман,*
*Ик урапа утакан!*
*Кашкăр, кашкăр кашаман,*
*Сурăхсене пăвакан!*
*Мулкач тусăм, куянкка,*
*Йăва çиме хыпăнкка!*
*Сиртен тартăм çилпе тан,*
*Пăхса юлăр хыçалтан:*
*Кăлтăр-кăлтăр кăлтăрмач*
*Никамран та хăрамасть!*

– Ачасем, пĕлтĕр, аса илтĕр-и?

Мăр-мăр: Тĕрĕс, Йăва! Ну маттур та эсир, ачасем.

Воспитатель: Çапла, эпир ку юмаха пĕлетпĕр. Атя, Йăва, тух хутаçран. (Кăларса хурать).

– Ачасем, пăхăр-ха хутаçран тата мĕнсем тухаççĕ? (теттесем пулмасан картинăсем усă курма юрать).

– Ку мĕн?

– Шăна.

– Ку ахаль шăна мар –мĕнле шăначчĕ-ха вăл, аса илĕр.

– Тĕрĕс – шăпăрçă-шăна.

– Ку тата мĕн? (Вăрăмтуна). Çапла „Керменкке" юмахри кашни сăнар ятне аса илеççĕ).

– Ку вара – шăши тус – хушка пуç, акă шапа тухать – катăк тута ват шапа. Мулкач мул пухакан, сăрт хĕрринче пурăнакан. Тилĕ ват ăста, сăмах çапма пит ăста. Кашкăр-кашаман. Упа-утаман, икĕ урапа утакан, ĕне тирне сĕвекен.

Воспитатель геройсен ячĕсене хăй калама васкамасть, ачасене аса илме хавхалантарать.

– Çак геройсем пурте мĕнле юмахран?

– Вĕсен керменĕ мĕнччĕ-ха? Вĕсен керменне кĕнекесен çӳлĕкĕ çинче тупăр-ха. (Воспитатель малтанах курăнмалли вырăна чӳлмек лартать. Ун вырăнне чӳлмек ӳкерчĕкĕ те юрать).

– Ачасем, чĕр чунсене кермене кĕме пулăшсамăр. Мĕнле йĕркепе кĕретчĕç вĕсем?

Ачасем юмаха аса илсе персонажсене чӳлмеке кĕме пулăшаççĕ. Упине вара воспитатель чӳлмекпе юнашар тăратать.

– Эс упа-утаман ан васка-ха кĕме.

Унтан воспитатель хутаçран хушпу, тенкĕллĕ мăй çыххи, сулă (е вĕсенчен пĕрне) кăларать.

– Ку тата мĕн япала? Ăçтан лекнĕ вăл юмахсен хутаçне?

– Çапла-çке, ачасем, мансах кайнă, - „аса илет” педагог. Мĕнĕн тумĕччĕ ку? Тилĕ тусăн, паллах. Тилĕ тус тĕлĕнмелле хитре ташласа пачĕ карчăкпа старике. Карчăкпа старик çăвар карсах алă çупса тăчĕç. Мăр-мăр тусăм, эпир ташласа кăтартар-ха сана. Ман шутпа, эпир те юмахри тилĕ тусран пĕртте кая мар ташлатпăр.

Малтан пĕр ачине воспитатель ташă пуçлама сĕнет. Хăй Р.Сарпин „Ташлать Илемпи” сăвăн сыпăкне ача ятне асăнса калать:

*Ташлать, <u>Илемпи</u>, ташлать,*
*Шăвать вăл, ишет акăшла.*
*Хулне вылятать кĕвĕ май,*
*Пуçне вĕлт ухать шунă май.*
*Алне <u>Илемпи</u> вăшт!сулать,*
*Ташлană май йăл-йăл кулать*
*Е вырăнтах вĕл!çаврăнать,*
*Сиксе тăпăр-тăпăр тăвать.*
*Ташлать, <u>Илемпи</u>, ташлать:*
*Сăмси те, ури те ташлать*
*Çанни те, арки те ташлать...*

Унтан вăл пурне ташлама чĕнет.

Воспитатель илемлĕ чăваш кĕвви ярать, е хăй юрлать – ачасем ташлаççĕ.

– Маттур ачасем. Мăр-мăр кушака та питĕ килĕшрĕ пирĕн ташă. Пăхăр, мĕнле алă çупса савăнса ларать.

Воспитатель малалла хутаçра япаласем шырать.

– Ачасем, ку тата пĕçерет, ап-ап. Мĕскер-ши кунта? (Воспитатель хутаçра тем хыпашланăн тăвать, темле чĕркем туртса кăларать.)

– Уçса пăхар, мĕн-ши кунта? Кукăль?! Вăл тата хутаçра мĕн тăвать? Ачасем, тен эсир пĕлетĕр?

Çапла-çке, ара. Маша пĕçернĕ кукăльсенчен пĕри ĕнтĕ вăл. Кама валличчĕ-ха вăл? Кучченеçне ватăсем патне мĕн çитерненччĕ? (Юмаха аса илеççĕ).

– Мĕскер тетĕн Мăр-мăр тус? (Воспитательпе кушак „пăшăлтатса” илеççĕ).

– Ачасем, ку кукăле Маша пире валли ятарласа пĕçернĕ иккен.

Ас тивсе пăхма сĕнет. Тавах ăна. Мăр-мăр тус эсĕ те пирĕнпе пĕрле хăналан.

Ачасем кукăльпе чей ĕçеççĕ.

Иккĕмĕш эрне. Сăвăсем

Ку эрнере воспитатель ачасене кĕркуннене сăнлакан сăвăсемпе паллаштарать.

*Ĕç тĕллевĕ:* çут çанталăк илемне курма, унпа киленме хăнăхтарса пырасси, чĕлхе сăнарлăхне, сăвăсен илемне туйма-курма вĕрентсе пырасси.

**1-мĕш калаçу**

Н. Пăрчăканăн „Çитрĕ сарă кĕркунне" сăвви

*Кирлĕ материал*: кĕрхи çулçăсем.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, сăнăр-ха паян пурте курткăсемпе ăшă кофтăсем тăхăннă. Саша, санăн питĕ хитре футболка пурччĕ-çке? Лена, мана санăн кĕске çанăллă кăвак кĕпӳ питĕ килĕшетчĕ. Эсир халĕ мĕншĕн çав хитре тумсене тăхăнмастăр, хулăм, ăшă тумтир тăхăнма пуçланă?

– Çапла çав. Халĕ çулла мар. Кĕркуненнене кĕтĕмĕр. Çанталăк мĕнле улшăнчĕ? Çуллахи пек ăшă-и?

– Çук çав, сивĕтрĕ, тĕрĕс. Çуллахи пек çарран чупаймăн тулта.

– Ачасем, эсир тата мĕнле улшăнусем асăрхарăр?

– Йывăççен çулçисене сăнăр-ха. Вĕсем мĕнлерех улшăннă! Халь çеç йывăççен тумĕсем симĕсчĕ. Халĕ вара ... . Мĕн тĕслĕ çулçă çук пуль кунта... (заняти пӳлĕмре иртет пулсан воспитатель маларах тĕрлĕ йывăçăн тĕрлĕ тĕслĕ çулçисене хатĕрлесе хурать).

– Юман çулçи – хăмăр, хурăн çулçи – сарă, вĕренен – хĕрлĕ. Садри çимĕççене те пуçтарса кĕртнĕ. Унти йывăççен çулçисем те сарăхнă.

Ачасем, халĕ эпĕ сире сăвă вуласа парасшăн. Ăна Нина Пăрчăкан сăвăçă çырнă. Ячĕ – „Çитрĕ сарă кĕркунне".

**Çитрĕ сарă кĕркунне**

*Тин кăна ялта çуллаччĕ,*
*Шевлине хĕвел саратчĕ.*

*Кăлтăр-кăлтăр аслати те*
*Сас паратчĕ: «Эпĕ килтĕм».*
*Çитрĕ ылтăн кĕркунне,*
*Улăштарчĕ сад тумне.*
*Сарă тутăр вăл çыхтарчĕ,*
*Çимĕçе пухса пуçтарчĕ.* (Н. Пăрчăкан).

– Сире сăвă килĕшрĕ-и? Мĕн çитрĕ тенĕ сăвăра?

– Çапла, кĕркунне çитрĕ. Кĕркуннене сăвăра *ылтăн* тенĕ. Мĕншĕн çапла каланă-ши?

– Ылтăн вăл сарă хĕрлĕрех тĕслĕ паха металл шутланать. Кĕрхи тавралăха сăнăр-ха. Мĕнле тĕссем ытларах унта? Çавăнпа сăвăç кĕрхи сăнсене, кĕркуннене юратса ылтăн тенĕ пуль.

– Кĕркунне умĕн мĕнле вăхăт пулнăччĕ? (сăвă йĕркисене аса илет – *Тин кăна ялта çуллаччĕ*).

– Çулла хĕвел мĕнле пăхать?

– Сăвăç ун çинчен çапла калать. (Сăвă йĕркисене аса илтерет – *Шевлине хĕвел саратчĕ.*)

– Çулла час-часах мĕнле çумăр çăвать? (Сăвă йĕркисене вулать *Кăлтăр-кăлтăр аслати те / Сас паратчĕ: «Эпĕ килтĕм».*)

– Кĕркунне çитрĕ те çанталăк мĕнле улшăнчĕ?

– Сивĕтрĕ-и?

– Çулçăсем мĕн тĕслĕ?

– Мĕнле çумăр çăвать?

– Атьăр-ха сирĕнпе урама уçăлма тухсан тимлĕрех сăнар – мĕн улшăнчĕ пирĕн тавралăхра? Тĕплĕнрех, нумайрах пĕлĕпĕр кĕркунне çинчен.

**2-мĕш калаçу**
В. Эктелĕн „Çулçăсем" сăвви

*Ĕç тĕллевĕ:* ачасене сăвва пăхмасăр, палăртуллă каласа пама вĕрентесси, япалана пĕлтерекен сăмах патне ун паллине пĕлтерекен сăмахсем шырама хистесси, харкам шухăш-кăмăлне ўкерчĕксемпе, хусканусенче кăтартма вĕрентесси.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, эсир асамçă камне пĕлетĕр-и? Вăл мĕн тума пултарать тетĕр?

– Лена, калăпăр, эсĕ хăв асамçă пулнă пулсан мĕн тунă

пулăттăн? Эсӗ вара, Петя?

– Нумай тӗлӗнтермӗш асăнтăр эсир. Эпӗ сире халь пӗр сăвă вуласа паратăп. Ăна Василий Эктел сăвăçă çырнă. Тимлӗ итлӗр. Мӗнле асамçă пирки калать-ши поэт?

**Çулçăсем**

*– Кам сăрланă-ши, анне,*
*Вӗрене çулçисене?*
*Пулнă тăнă симӗсрен*
*Хӗрлӗ, сарă та кӗрен.*
*– Вăл – асамçă кӗркунне –*
*Хуравларӗ ман анне* (В. Эктел)

– Ачасем, тавçăрайтăр-и? Кам-ши çак асамçă?

– Сире ку сăвă килӗшрӗ-и?

– Кӗркуннене ача амăшне мӗншӗн асамçă тет?

Шутлăр-ха, чăннипех тӗлӗнмелле вӗт. Кӗркунне çитрӗ те тавралăх пӗтӗмпех улшăнчӗ. Кӗркунне сăрăсăр-мӗнсӗр пур йывăç-курăка тӗрлӗ тӗслӗ капăр тум тăхăнтарчӗ. Чăн-чăн асамçă вӗт. Аса илӗр-ха сăвăра асамçă кӗркунне çинчен кам ыйтать?

*– Кам сăрланă-ши, анне,*
*Вӗрене çулçисене?*
*Пулнă тăнă симӗсрен*
*Хӗрлӗ, сарă та кӗрен.*

– Ку ачи арçын ача-ши, хӗр ача-ши? Пирӗн Саша пекскер мар-ши вăл? Пирӗн Саша та ыйтса-тӗпчеме юратать, веçех пӗлесшӗн.

– Хӗр ача е арçын ача пулсан та вăл питӗ тимлӗ ача пулас, çивӗч, сăнама юратать, нумай пӗлесшӗн çунать. Çапла мар-и?

– Ача амăшӗнчен мӗн çинчен ыйтать? Катя, аса илсем. (воспитатель пулăшса пырать).

– Маттур, Катя. Сăнарăр-и, вăл ача тӗлӗннине те палăртма пултарчӗ.

(Воспитатель тӗлӗннине интонаци тӗлӗшӗнчен мӗнле сасăлама пулнине тепре кăтартса парать).

– Сергей, эсӗ мӗнле ыйтнă пулăттăн?

– Маттур, эсӗ те ас туса юлнă, аван каларăн. (Темиçе ачаран ыйтать).

– Ку ыйту хуравӗ мӗнлеччӗ çав? Аса илӗр.

*– Вăл – асамçă кӗркунне –*

Пурте пĕрле калăр. (Калаççĕ).

Воспитатель вĕçлет:

*Хуравларĕ ман анне.*

– Мĕнлерех илемлĕ сăвăпа паллашрăмăр эпир паян! Тепре каласа парам ăна. Итлĕр. Василий Эктел. Çулçăсем. (Ăссăн калать).

– Акă хут листисем. Мĕн ўкернĕ унта? Вĕрене çулçи пур-и? Тупăр ăна, тархасшăн.

– Тĕрĕс кăтартатăр. Айтăр-ха эпир вĕсене сăрлăпăр. Асамçă кĕркунне пек. Мĕн тĕслĕ сăрăсем кирлĕ пулаççĕ пире? (Аса илтерет: *– Пулнă тăнă симĕсрен / Хĕрлĕ, сарă та кĕрен*). Ĕçлеççĕ.

*2-мĕш вариант*

– Ачасем, эсир йывăççен çулçисем епле улшăннине асăрханă-и? Малтан вĕсем мĕн тĕслĕччĕ-ха?

– Çапла, симĕс, халĕ вара – *Пулса тăнă симĕсрен, Хĕрлĕ, сарă та кĕрен.*

– Вĕсем тĕсне мĕншĕн улăштарнă? Вĕсене кам сăрланă?

– Çапла, ку вăл – кĕркунне. Эсир пысăк ĕнтĕ, нумай пĕлетĕр. Ман пĕлĕш хĕр ача – Маша пĕчĕкрех-ха. Çапах вăл пурне те пĕлесшĕн çунать, нумай ыйту парать. В. Эктел сăвви ун çинчен тенĕ пекех. Итлĕр, çак сăвва сире вуласа парам. Василий Эктел. Çулçăсем.

*– Кам сăрланă-ши, анне,*
*Вĕрене çулçисене?*
*Пулнă тăнă симĕсрен*
*Хĕрлĕ, сарă та кĕрен.*
*– Вăл – асамçă кĕркунне –*
*Хуравларĕ ман анне*

– Сăвăра кĕркуннене мĕншĕн асамçă тенĕ?

– Хĕр ача амăшĕнчен мĕн çинчен ыйтса пĕлесшĕн?

*– Кам сăрланă-ши, анне,*
*Вĕрене çулçисене?*
*Пулнă тăнă симĕсрен*
*Хĕрлĕ, сарă та кĕрен.*

– Лена, эсĕ те Маша пек пулса ыйтсам манран çакăн çинчен.

– Маттур, халĕ Петя.

– Амăшĕн хуравне астăватăр-и?

– Тĕрĕс – *Вăл – асамçă кĕркунне /– Хуравларĕ ман анне.*

– Айтăр-ха эпир те пĕр хушă асамçăсем пулар. Акă сире хут листисем валеçсе паратăп. Унта мĕн ӳкернĕ? Мĕнле йывăç çулçи? Вăл хальллĕхе мĕн тĕслĕ?

– Эпир асамçă-кĕркунне пулса вĕсене мĕнле тĕспе сăрлатпăр? (Аса илтерет - *Пулнă тăнă симĕсрен / Хĕрлĕ, сарă та кĕрен).*

– Кирлĕ кăранташсене илер-те (хĕрлĕ, сарă, кĕрен) ĕçлеме пуçлар.

– Пăхăр-ха мĕнле пулчĕ пирĕн асамçăсен ӳкерчĕкĕ?

– Сăвăри пекех: *Пулнă тăнă симĕсрен / Хĕрлĕ, сарă та кĕрен.*

– Атьăр халĕ выльăпăр. Эсир ачи пулатăр, эпĕ – амăшĕ. Малтан эпĕ Катя пуканепе выляса кăтартам, кайран сирĕнпе выльăпăр. (Педагог пуканене тытса, ун сассипе калаçса, сăвă-диалога выляса парать).

– Халĕ кам ачи пуласшăн? Маша-и? Питĕ аван. Итлĕр, Маша амăшĕпе калаçать.

(Воспитатель 3-4 ачана калаттарть, кирлĕ чухне ачасене пулăшать, маннă сăмахсене аса илтерет, интонаци пирки асăрхаттарать).

– Маттур, ачасем. Аса хыврăр та сăвва. Кил йышсене каласа парăр ăна. Сăвă мĕн ятлăччĕ-ха?

– Итлĕр тепĕр хут вуласа парăп. (Вулать).

### 3-мĕш калаçу

Л. Николаевăн „Кĕр парни" сăвви

*Кирлĕ материал*: журналсенчен касса кăларнă ӳкерчĕксем.

*Ĕç йĕрки.*

Воспитатель ачасене кĕркуннене сăнлакан ӳкерчĕк е ӳкерчĕксен серине кăтартать. Ӳкерчĕксем тăрăх ачасем кĕркунне паллисене аса илеççĕ. Унтан воспитатель ачасене çĕнĕ сăвă итлеме сĕнет. Вулас умĕн сăввăн ятне, авторне асăнать – Людмила Николаева. Кĕр парни.

**Кĕр парни**

*Çитрĕ, çитрĕ ылтăн кĕр –*
*Таравват та пуян хĕр.*
*Усрĕ эреш арчине,*
*Парнелерĕ пурлăхне:*

*Хăмăр кĕпе – юмана,*
*Хĕрлĕ шăрса – палана,*
*Çыхрĕç сарă тутăрсем*
*Пике евĕр хурăнсем.*

*Упа валли – пыл катки*
*Чĕрĕп валли – уплюнкки,*
*Тулли мăйăр – пакшана.*
*Тусăм, ан ÿркен кăна!*
*Хĕр сысни суйлать йĕкел,*
*Хăратаймĕ ăна хĕл.*
*Шăши пухать тул пĕрчи –*
*Тулăх, аслă кĕр арчи.*
*Савăнса ĕçлет чĕр чун,*
*Ылтăн кĕрĕн – уяр кун!* (Л. Николаева)

– Çулталăкăн хăш вăхăчĕ çитнĕ?

– Сăвăра ун çинчен мĕнле каланă?

– *Тарават та пуян* тенине мĕнле ăнланатăр? (Ырă кăмăллă, ăш пиллĕ, нумай муллă, пултаруллă хĕр).

– Мĕнле шутлатăр сăвăç кĕр çинчен мĕншĕн тарават та пуян тенĕ? (Унăн тупра, мул нумай, вăл çав мула хĕрхенмест, пурне те кăмăлтан парне кÿрет).

– Ас туса юлтăр-и, кĕркунне чĕр чунсенчен кашнине мĕн парнелет?

– Мĕншĕн шăпах çав парнене парать-ши? (Кашниех хăй мĕн юратнине парать).

– Ачасем, сирĕн куç умне çак *„ылтăн кĕр – тарават та пуян хĕр"* сăнарĕ мĕнлерех тухса тăрать? Ÿкерес пулсан эсир ăна мĕнлерех ÿкернĕ пулăттăр? Каласа парсамăр.

– Тата ун арчи мĕнлескер-ши? Мĕн пысăкăш, мĕн тĕслĕ? Ăна мĕнле ÿкернĕ пулăттăр?

Воспитатель ачасен ÿкерес пултарулăхне шута илсе кашнине пулăшма тăрăшать. Кунта ÿкерÿ „техники" мар, ача мĕнле кăмăлпа ÿкерни, мĕнле сăрăсемпе усă курса, мĕнле хавхаланупа ĕçлени пĕлтерĕшлĕ.

Ĕçе урăхларах та йĕркелеме пулать – ачасене аппликации тума сĕнме юрать. Воспитатель маларах кивĕ журналсенчен кирлĕ ÿкерчĕксем касса хатĕрлет. Ачасем вĕсенчен кĕре кăтартма хĕр ача-

пике сăнне, асамлă арчана, кĕркунне пуянлăхне суйласа илеççĕ.

**4-мĕш калаçу**

Л. Николаевăн „Кăмпара" сăвви

*Кирлĕ материал*: кăмпа ÿкерчĕкĕсем, „Кĕр парни" кĕнеке.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, паян кăмпана каяр мар-и? Кам кăмпара пулса курнă? Эсир мĕнле кăмпасем пĕлетĕр?

Воспитатель ачасене кăмпасен ÿкерчĕкĕсене кăтартать.

– Пирĕн кăмпасене лайăх пĕлмелле. Çиме юрăхсăр кăмпасем те пур. Вĕсем, наркăмăшлă кăмпасем, çыншăн питĕ сиенлĕ. Çапах нумай кăмпа çиме юрăхлă. Аса илер-ха вĕсене.

– Ку мĕнле кăмпа? (Ÿкерчĕксем тăрăх, кăмпасен ячĕсене аса илеççĕ, вĕсене сăнлама тăрăшаççĕ).

Унтан Л. Николаевăн „Кĕр парни" кăнекери иллюстрацие сăнаççĕ.

Сăнăр-ха çак ÿкерчĕке. Арçын ачан карçинкки туп-тулли. Мĕнле кăмпасем татнă-ши вăл. Итлĕр мĕн çырать Людмила Николаева „Кăмпара" сăвăра.

**Кăмпара**

*Тупрăм эпĕ вăрманта*
*Ăвăс кăмпи, сар кăмпа.*
*Тупрăм хыр кăмпи, шурри.*
*Шур кăмпа вăл – чи тутлт.*
*Тупрăм кăрăç, уплюнкка –*
*Туп-тулли ман карçинкка.* (Л. Николаева)

– Ар çын ача тупнă кăмпасене ÿкерчĕксенчен суйласа илер-ха. Ас туса юлтăр-и, мĕнлисемччĕ? Акă çак карçинккана пуçтарăпăр сăвăра асăннă кăмпасене.

Ÿкерчĕксене пуçтараççĕ. Юлашкинчен воспитатель сăвва тепĕр хут вуласа парать. Ачасем пуçтарнă кăмпасене тĕрĕслеççĕ.

**Пĕтĕмлетÿ занятийĕ**

*Заняти тĕллевĕ:* Ачасене кĕркуннене сăнлакан сăвăсене аса илме пулăшасси. Çут çанталăк илемне тĕрлĕрен сăнлама пулнине

кăтартасси.

*Кирлĕ материал*: кĕрхи çулçăсен çыххи.

*Заняти йĕрки:* Ачасем, эпир паян сирĕнпе тĕлĕнмелле çул çӳреве тухăпăр. Пире Ылтăн кĕр хăнана чĕнет.

Воспитатель Николай Теветкел сăввин пĕр пайне вулать:

*Ума вĕçсе ӳкрĕ*
*Кĕр пĕлтерӳçи –*
*Хур ури пек хĕрлĕ*
*Вĕрене çулçи.*

*Çут çанталăк шарт! çеç*
*Сикнĕн туйăнать,*
*Кĕркунне хыпарĕ*
*Хăвăрт саланать*

– Ачасем мĕнле хыпар-ши вăл?
– Хыпарçи-пĕлтерӳçи кунта мĕн?
– Вăл мĕн çинчен хыпарлать терĕмĕр?
– Кĕркунне çитнине эсир хăвăр мĕнле пĕлетĕр?

Ачасен хуравĕсем хыççăн воспитатель сăвва пĕтĕмĕшле вулать:

*Ума вĕçсе ӳкрĕ*
*Кĕр пĕлтерӳçи –*
*Хур ури пек хĕрлĕ*
*Вĕрене çулçи.*

*Çут çанталăк шарт! çеç*
*Сикнĕн туйăнать,*
*Кĕркунне хыпарĕ*
*Хăвăрт саланать*

*Вăрмансем çаралчĕç,*
*Уй-хирсем хура,*
*Кайăк-хур саланчĕ*
*Ăшă кăнтăра.*

*Йăмрасем те путрĕç*
*Тарăн шухăша –*
*Упраса юласшăн*

*Çуллахи ăшша.* (Н. Теветкел)

– Ачасем, пăхăр-ха, мĕнле хитре çыхă, кĕрхи çулçăсен çыххи. Сăнăр, çыхăра мĕн çулçисем пур?

– Тĕрĕс, вĕрене çулçисем ытларах. Сăвăра ăна мĕнле тенĕччĕ? (*Хур ури пек хĕрлĕ*). Ку вара (тепĕр вĕрене çулçине кăтартать) – сарă. Еплерех хитре кĕрхи çыхă!

– Çак илемлĕ вĕрене çулçисем çинчен кам сăвă каласа парас тет? Калакана парне – кĕрхи çыхăри çулçă – пулĕ.

Ачасем В. Эктелĕн „Çулçăсем" сăввине аса илеççĕ. Воспитатель 3-4 ачана калаттарать. Кашнинех çулçă парнелет.

Унтан ытти ачасене çулçăшар парса тухать. Валеçнĕ май Надежда Силпин „Ылтăн кĕркунне" сăввин сыпăкне калать:

*Çитрĕ, çитрĕ, тусăмсем,*
*Ырă ылтăн кĕркунне.*
*Сарă,хĕрлĕ çулçăсем*
*Тăкăнаççĕ çĕр çине.*

Валеçсе пĕтерсен илемлĕ кĕвĕ ярать. Кĕвĕ хуллен янранă майăн асăннă сăвăн тепĕр сыпăкне вулать:

*Таш ташлаççĕ çулçăсем*
*Шухă çил ытамĕнче.*
*Тухăр, курăр, тусăмсем,*
*Илемлĕ кĕр çĕр шывне.*

Юлашкинчен воспитатель ачасене çулçăсемпе ташлама чĕнет.

## Виççĕмĕш эрне. Калавсем

Ку эрнере воспитатель ачасене Н. Калинина, В. Сухомлинский, Я. Тайц калавĕсемпе паллаштарать.

*Ĕç тĕллевĕ:* ачасене калавсемпе паллаштарасси; вĕсене ăнланма пулăшасси; содержани тăрăх калаçма, геройсене хаклама хăнăхтарасси

### 1-мĕш калаçу

Н. Калининăн „Вася пулă тытни" калавĕ

*Кирлĕ материал*: пулă тытнине сăнлакан ÿкерчĕксем

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене пулă тытакансем çинчен каласа парать, ÿкерчĕксем кăтартать.

– Ачасем, эпĕ сире паян пĕр ар çын ача пулă тытни çинчен калав вуласа парăп. Калавĕ те çаплах ятлă – „Вася пулă тытни". Итлĕр.

**Вася пулă тытни**

*Амăшĕ шыв хĕрне кĕпе чӳхеме анать. Васук та ун хыççăн чупать.*

*– Аннем, эпĕ те санпа пыратăп!*

*Çитрĕç шыв хĕрне. Амăшĕ кĕпе чӳхет. Васук шăлавар пĕççисене тавăрать те шыва кĕрет, пулă ишнине сăнама тытăнать.*

*Ачан пулă тытас килсе каять. Вăл пĕшкĕнет те пĕр пуллине ярса илме хăтланать, шыва шаплатать.*

*– Тытрăм, пулă тытрăм, – шампăлтатать вăл шывра.*

*Амăшĕ чупса пычĕ, Васука шывран туртса кăларчĕ.*

*– Пуллу ăçта вара сан? – ыйтать вăл.*

*Васук чăмăртанă чышкине уçать – утна нимĕн те çук.*

*Вăт тăк пулăçă, – кулать амăшĕ. – Пулла алăпа тытма пулать-и вара!* (Н. Калинина)

– Эсир ачасем пулă тытса курнă-и? Тен, аслисем тытнине курнă?

– Калăр-ха, пулла мĕнле тытаççĕ?

– Çапла, пулă тытма ятарлă хатĕрсем кирлĕ – вăлта, сĕреке, мурата.

– Вася пек алпах пулă тытма, тем, май çук пуль.

**2-мĕш калаçу**

Н. Калининăн „Автан Васук çăкăрне вăрлани" калавĕ

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, ас тăватăр-и Васук ятлă ар çын ача пулă мĕнле тытма хăтланнине? Паян эпĕ сире Васукпа тата мĕн пулса иртнине каласа парасшăн. Калав „Автан Васук çăкăрне вăрлани" ятлă.

**Автан Васук çăкăрне вăрлани**

*Амăшĕ Кĕтерукпа Васука пĕрер кулач чĕлли тыттарчĕ.*

*– Чăхсене кайса тăрантарăр, – терĕ.*

*Ачасем картишне тухрĕç, чăхсене йыхăрма прикенчĕç:*

*– Чип-чип-чип! Чип-чип-чип!*

*Чăпар чăхсем чупса пычĕç, шурă чăхсăм чупса çитрĕç, пысăк хĕрлĕ автан çитрĕ. Пурте кулач çиесшĕн.*

*Кĕтерук кулач хыттине хуçрĕ те чăхсене ывăтса пачĕ. Ваçук вара хăй татăкне çурăм хыçа пытарчĕ:*

*– Никама та памастăп. Хам çисе яратăп, - терĕ вăл.*

*Автан хыçалтан пычĕ те чалт сикрĕ, çăкăр таткине туртса илчĕ, тара пачĕ.*

*Ăна çĕре пăрахрĕ, сăмсипе таккка-такка тĕпретме пуçларĕ, чăхсене апатланма чĕнчĕ.*

*Ваçук йĕрсе ячĕ. Кĕтерук хăйĕн таткине çурмаран хуçрĕ те Ваçука пачĕ*

*– Ан йĕр, акă ил, çи!*

*Пурте хаваслanса ӳкрĕç. Ваçук кулач çиет, Кĕтерук та кулач çиет, автанпа чăхсем те кулач такаççĕ. Пурте пĕрле апатланаççĕ.*

(Н. Калинина)

– Калав килĕшрĕ-и сире, ачасем?

– Амăшĕ Кĕтерукпа Ваçука кулач чĕллине мĕн тума пачĕ?

– Чип-чип-чип. – тесе йыхăрсан мĕн пулчĕ-ха? Тепре вуласа парам-ха.

*Чăпар чăхсем чупса пычĕç, шурă чăхсем чупса çитрĕç, пысăк хĕрлĕ автан пырса тăчĕ. Пурте кулач çиесшĕн.*

– Кам ас туса юлчĕ, Ваçук мĕншĕн йĕрсе ячĕ?

– Кĕтерук ăна епле лăплантарчĕ?

– Калав мĕнле сăмахсемпе вĕçленчĕ?

### 3-мĕш калаçу

Н. Калининăн „Вăрманта" калавĕ

*Кирлĕ материал*: чĕрĕпсем çинчен ӳкерчĕк

*Ĕç йĕрки*. Воспитатель ачасене чĕрĕпсем çинчен ӳкерчĕк сăнама чĕнет. Вĕсем çинчен мĕн пĕлнине ыйтать. Калав итлеме сĕнет.

### Вăрманта

*Каçхине Ваçукпа Кĕтерук çывăрма выртнă чухне çумăр шăпăртататчĕ, чӳречерен шаккатчĕ. Ирхине тăчĕç те – хĕвел пăхать.*

*– Тăрăр, уçăлма тухма вăхăт, – терĕ амăшĕ. – Вăрмана кайăпăр.*

*Кĕтерукпа Васука тумлантарчĕ те урама илсе тухрĕ. Çул çинче пылчăклă, ура шăвать. Вăрмана çитрĕç. Кунта типĕрех. Çăмçе кавир тăрăх утнă пек пыратăн. Çул çинче ачасене тĕл пулчĕç. Вĕсем вăрмантан таврăнаççĕ. Кашни алинче тулли карçинкка шур çырли. Ольăн карçинккинчен çеç туратсем кăнтарса тăраççĕ.*

*– Эх, тет Кĕтерук, – мĕнле нимĕн те тупайман!*

*Оля кулса ярать.*

*– Йĕплĕ чăрăш айĕнче йĕплĕ çăмха выртать. Ку мĕн пулать, – тет те туратсене сирет.*

*Карçинккара чĕрĕп. Оля ăна Васукпа Кĕтерука кăтартма илсе таврăнать иккен. Вăл чĕрĕпе çĕре ярать. Лешĕ .... тара парать.*

*Кайтăрах, вăрман унăн килĕ, ăна унта лайăхрах.*

(Н. Калинина)

– Ачасем, сире,калав килĕшрĕ-и?

– Калавра çапла каланă: *„Касхине Васукпа Кĕтерук çывăрма выртнă чухне* <u>*çумăр шăпăртататчĕ, чӳречерен шаккатчĕ*</u>*".*

– Мĕншĕн çапла калана?

– Çумăр урăх мĕн тума пултарать? Хĕвел вара?

– Тупмалли юмаха ас туса юлтăр-и? Каласамăр.

– Ачасем чĕрĕп вăрмана каялла тарнăшăн пăшăрханчĕç-и?

– Калавра мĕнле калана? Калав мĕнле сăмахсемпе вĕçленет?

### 4-мĕш калаçу

В. Сухомлинскин „Пан улми" калавĕ

*Ĕç йĕрки.* Эпир сирĕнпе Васукпа Кĕтерук пурнăçĕнчи хăшпĕр самантсене пĕлетпĕр. Паян вара эпĕ сире икĕ хĕр ача çинчен каласа парасшăн. Вĕсенчен пĕри Оля, тепри Нина ятлă. Калавĕ вара „Панулми" ятлă. Ăна Василий Сухомлинский çырнă.

### Пан улми

*Кĕр вĕçĕнче аппăшĕпе йăмăкĕ – Ольăпа Нина – садра çӳренĕ. Хĕвеллĕ кунсен шучĕ чылай каталнă. Улмуççисен çулçисем те ӳкнĕ ĕнтĕ, вĕсем урасем айĕнче чăштăртатнă. Унта-кунта çеç*

*йывăçсем çинче çулçăсем юлнă.*

*Хĕрачасем пĕр пысăк улмуççи умĕнче чарăннă. Сасартăк вĕсем иккĕшĕ те сарă çулçăпа юнашар пысăк хĕрлĕ улмана асăрханă.*

*Ольăпа Нина савăннипе кăшкăрасах янă.*

*– Мĕнле тăрса юлнă-ха вăл? – тĕлĕннĕ Оля.*

*– Халех эпир ăна татса илĕпĕр, – хĕпĕртенĕ Нина.*

*Хĕрачасем пан улмине татса илнĕ. Кашнийĕнех ăна алра ытларах тытса тăрасси килнĕ.*

*Ольăн улмана питĕ хăйĕн çиес килнĕ, анчах кун пирки вăл Нинăна калама хăяйман.*

*– Нина сана пултăр ку улма, – тенĕ Оля.*

*Нинăн та улмана хăйĕн илес килнĕ, анчах вăл та кун пирки Ольăна калама хăяйман.*

*– Оля сана пултăр ку улма, – тенĕ вăл.*

*Çапла улма чылайччен алăран алла куçнă. Хĕрачасенчен пĕри те улмана хăйне илме хăю çитереймен.*

*Часах вĕсен пĕр ырă шухăш çуралнă. Вĕсем амăшĕ патне чупса кайнă та улмана ăна панă.*

*Амăшĕ вара панулмине çурмалла каснă та хĕрĕсене тыттарнă.* (В. Сухомлинский)

– Ачасем, сире Ольăпа Нина килĕшрĕç-и?

– Хĕр ачасем пĕр пĕрне юратаççĕ-и? Çакă ăçтан курăнать?

– Хĕр ачасем амăшне юратаççĕ-и? Мĕншĕн çавăн пек шутлатăр?

– Ырă калав ку. Манăн сире Нинăпа Оля пек çитĕннине курас килет. Пĕрне пĕри юратса. Пĕри тепри çинчен шухăшласа.

Ырă яланах ырăпа таврăнать. Çакна яланах асра тытăпăр.

**5-мĕш калаçу**

Я. Тайцăн „Кăранташ" калавĕ

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, сире тупмалли юмах парам-ха. Тупсăмĕ мĕн-ши: *„Хура Иванăн кĕпи йывăç, сăмсипе ăçта лекет, унта йĕр хăварать?"*

– Тĕрĕс пĕлтĕр, ку вăл – кăранташ. Сире паян кăранташ çинчен калав вуласа парăп. Ăна Я. Тайц çырнă. Ячĕ – Кăранташ.

**Кăранташ**

*Ашшĕ пысăк кăранташ илсе килчĕ.*

*– Мана пар, – кăшкăрать Миша.*

*– Мана, мана! – кăшкăрать Маша та.*

*– Шăпрах. Эпир ăна пайлăпăр, – лăплантарать ашшĕ.*

*Пĕр вĕçĕпе çырса пăхрĕ – кăвак, тепринпе – хĕрлĕ.*

*– Атьăр кăранташа пайлар! – ахăлтатаççĕ ачасем.*

*Мишăна кăвак вĕçĕ лекрĕ, Машука – хĕрлĕ. Миша кăвак ўкерчĕксем ўкерет, Маша вара – хĕрлĕ.* (Я. Тайц)

– Ачасем, сире, калав килĕшрĕ-и?

– Мĕн тĕлĕнтерчĕ?

– Эпир те ўкерме ларар мар-и? (Ўкереççĕ).

## Тăваттăмĕш эрне. Тупмалли юмахсем, йăпатмалли сăвăсем

Ку эрнере пепкесене ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсемпе малалла палаштаратпăр.

*Ĕç тĕллевĕ*: ачасене тупмалли юмахсемпе, йăпатмалли сăвăсемпе паллаштарасси, вĕсене аса хывма пулăшасси, калаçу пуплевне аталантарасси.

### 1-мĕш калаçу

Тупмалли юмахсем

*Кирлĕ материал*: карçинккара хăяр, сухан, кишĕр (çулçиллĕ), купăста, хĕвел çаврăнăш.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, пăхăр-ха мĕн илсе кĕтĕм эпĕ хамăр пахчаран? (Карçинккара хăяр, сухан, кишĕр, купăста, хĕвел çаврăнăш (пуçли пулсан аванрах)).

– Эсир ку пахча-çимĕçсене лайăх пĕлетĕр пулĕ-ха. Атьăр-ха пĕрле пăхар вĕсене.

– Акă ман юратнă çимĕç. Мĕн ку? – Кишĕр.

– Эсир кишĕр юрататăр-и? Кишĕр мĕнле? (Тутлă, сĕткенлĕ, питĕ усăллă). Вăл сире мĕне аса илтерет?

– Тен, Буратино сăмсине? Тен, чăрăша? Мана вара вăл çăра

уççи пек туйăнать. Алă тытмалли вырăнĕ сарлака, вĕçĕ вара шĕвĕрленсе пырать.

– Кишĕрĕн çулçи мĕне аса илтерет?

– Кишĕр вăрăм çӳçлĕ теме пулать-и?

– Тĕрĕс, Коля, кишĕр çулçине хӳрепе те танлаштарма пулать пулĕ.

– Кайран ăна çисе киленĕпĕр-ха. (Воспитатель кишĕре айккине илсе хурать).

– Саша, эсĕ вара мĕн юрататăп тетĕн-ха,?

– Тата кам хăяр юрататъ?

– Вăл мĕн тĕслĕ? Капăшĕпе мĕнле? (Лапчăк çаврака).

– Хăярăн çийĕ мĕнле?

– Яка мар, шатраллă.

– Саша, санран ыйтам-ха, юрататăн пулсан пĕлетĕн пулĕ. – Хăярăн ăшĕнче мĕн пур?

– Çапла, хăярăн вăрри нумай. Кам хунă-ши вĕсене унта?

– Паллах, никам та хуман. Вĕсене кĕме хăярăн пĕр шăтăк та çук. Вăррисем шалтах ӳссе пыраççĕ.

– Ку тата мĕн? (Карçинккаран купăстана кăларать)

– Мĕнлерех пысăк вăл. Тумĕ тата мĕнле хутлă-хутлă. Килĕшет-и, сире? (Воспитатель купăста çулçисене тыта-тыта кăтартать).

– Пирĕн купăста симĕс хутлă-хутлă сараппан тăхăннă теме те пулать вĕт?

– Акă тата мĕн пур карçинккара. (Хĕвел çаврăнăш кăларать).

– Хĕвел çаврăнăшне пурте юрататăр пулĕ. Ачасем, çак пахча çимĕçне мĕншĕн хĕвел çаврăнăш тенине пĕлетĕр-и?

– Сăнăр-ха, чăнах та вĕт чăн-чăн пĕчĕк хĕвел пек унăн çаврака сарă пуçĕ. Ӳсме те вăл çӳллĕ ӳсет, хĕвел патнех кармашать тейĕн. Туни ун вăрăм туя пек. Ӳсет, вăй илет те хĕвел çаврăнăш кĕркунне пире вăррипе савăнтарать. Эх, тутлă-çке хĕвел çаврăнăш вăрри! Шĕкĕлчесе çеç лар.

– Мĕн юлчĕ-ши ман карçинккара? Сухан иккен.

– Ачасем, чухлатăп-ха, эсир сухана мĕншĕн юратнă çимĕçсем хушшинче асăнманнине.

– Катя, ачасем сухана мĕншĕн килĕштермеççĕ тетĕн?

– Çапла çав, ăна шуратнă чух аннесем те йĕреççĕ. Йăпăр-япăр хывтарасшăн мар сухан хăйĕн тумне.

– Çапах та эпир сухансăр пĕр апат та пĕçерместпĕр. Пĕлетĕр-и, мĕнле апат-çимĕç пĕçернĕ чухне сухан хушаççĕ?

– Яшкана та яратпăр, салата та хушатпăр, какай-пулă та сухансăр ăшаланмасть. Питĕ усăллă, сиплĕ пахча çимĕç – сухан.

– Ачасем, ман карçинкка пушанчĕ. Халĕ эпĕ сире çак пахча çимĕçсем çинчен тупмалли юмахсем калăп. Эсир вĕсен тупсăмĕсене тупма тăрăшăр.

– Итлесемĕр пĕрремĕшне:

*Ниçтан кĕме шăтăк çук,*
*Шалта пин çын пурăнать.* (Хăяр, арбуз).

– Тĕрĕс. Мĕнле пĕлтĕр ку хăяр пулнине?

– Халĕ теприне итлесе пăхăр:

*Вăр çаврашка – уçă мар,*
*Хӳри пур та – шăши мар.* (Кишĕр).

– Çапла, тĕрĕс. Ку кишĕр икенне мĕнле тавçăрса илтĕр?

– Акă тепĕр тупмалли юмах:

*Мăнтăр кăна майра пур,*
*Сакăр вун сараппан тăхăнать.* (Купăста).

– Саша, ăнлантарсам, тупсăмне мĕнле пĕлтĕн?

– Маттур ачасем. Малалла итлĕр:

*Пĕчĕкçеççĕ кинĕм пур,*
*Сакăр хут кĕрĕк тăхăннă,*
*Ун кĕрĕкне кам хывать –*
*Çав куççульпех макăрать.* (Сухан).

– Тата тепĕр тупмалли юмах итлĕр:

*Пуçĕ сарă хĕвел пек,*
*Măйĕ кукăр туя пек.*
*Вĕтĕр-вĕтĕр вăррипе,*
*Килентĕмĕр хĕлĕпе.* (Хĕвел çаврăнăш).

– Ку тупмалли юмахăн тупсăмне мĕнле чухласа илнине ăнлантарса парсамăр.

– Маттур, ачсасем. Халĕ сире тутлă çимĕсемпе сăйлама та юрать. Суханне хамăр поварăа, Н. И. (ятне калать) яшка пĕçерме парăпăр. Ытти пахча çимĕçе хамăр тутанса пăхăпăр.

(Воспитатель ачасене çимĕçсене ас тивтерет. Вĕсене маларах уйрăм савăт çине касса хурсан аван).

## 2-мĕш калаçу

П. Çăлкуç куçарнă „Кушак тусăн кĕрĕкĕ ...” сăвва пăхмасăр калама вĕренни

*Кирлĕ материал*: тетте-кушак.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, эсир тупмалли юмахсем шутлама юратнине пĕлетĕп ĕнтĕ халь. Паян пирĕн патăмăрта кам пулассине те тупмалли юмах тупсăмне шутласан пĕлĕр:

*Тăват тĕппи-тяппи, ик йăлтăркка та пĕр шĕвĕркке*.

– Тавçăртăр-и, ку мĕн пулать? Ку вăл – чĕр чун. Килте пурăнать, сĕт юрататъ.

– Тĕрĕс паян пирĕн пата хăнана, кушак килчĕ.

– Атя, кушак тус, тухсам ачасен патне. (Воспитатель кушак кăларать. Тетте çук пулсан, кушак ӳкерчĕкĕ те юрать).

К.: Сывлăх сунатăп, ачасем. (Ачасем хуравлаççĕ).

К.: Пĕлетĕр-и эсир мана?

– Паллах, пĕлетпĕр. Кашниех килте кушак усрать.

К.: Эпĕ кашниех мар çав. (Воспитатель теттене пытарать).

– Ай-уй, ачасем. Ăçта кайса кĕчĕ вара пирĕн кушак тус?

– Ман шутпа вăл кӳренчĕ. Эпир ăна пуринпе танлаштарни килĕшмерĕ ĕнтĕ ăна. Э-э-эх, мĕн тумалла ĕнтĕ халь?

– Ачасем, атьăр-ха кушак тусăм кăмăлне çавăрма тăрăшар. Ăна мухтаса илер.

*– Кушак тусăн кĕрĕкĕ селĕм çав тери.*

– Ачасем, кушак тусăн кĕрĕкĕ мĕнле? (3-4 ачана калаттарать).

– Пăхăр-ха, пăхăр, кушак тусăн пуçĕ курăнчĕ тем? Апла вăл пире итлет. Татах мухтар-ха ăна: *Кушак тусăн мăйăхĕ пуринчен хитри*. Çапла вĕт, ачасем?

– Кушак тусăн мăйăхĕ пуринчен хитри. Эсир те калăр-ха çакна Кушак тусăмăра. (3-4 ачана калаттарать).

– Акă тинех тухрĕ Кушак тус. Кушак тус, ан кӳрен ĕнтĕ пире. Эсĕ питĕ-питĕ хитре кушак. Сан куçу чăр-чăр пăхать, шăлу сан çип-çивĕч. Ачасем те çакнах калĕç сана. Воспитатель пуçлать:

Кушак тусăн *куçĕ* .... ачасем вĕçлеççĕ – *чăр-чăр пăхать*, *шăлĕ* ...ачасем вĕçлеççĕ – *ун çип-çивĕч*.

Кушак тус мăрла-мăрла савăннине палăртать.

К.: Тавах, ачасем.

Итле, Кушак тус мĕнле пирĕн ачасем епле çивĕч куçлă та тимлĕ. Мĕнлерех сăнласа пама пултарчĕç вĕсем сана:

*Кушак тусăн кĕрĕкĕ*
*Селĕм çав тери.*
*Кушак тусăн мăйăхĕ*
*Пуринчен хитри.*
*Куçĕ ун чăр-чăр пăхать,*
*Шăлĕ ун çип-çивĕч.*

Кушак тус, апла сана ку сăвă килĕшрĕ. Татах та итлес килет тетĕн-и? Юрĕ, ачасем татах калĕç.

Воспитатель ачасене калаттарать, пулăшса пырать.

Кун хыççăн Кушак тус калакан ачине тав тăвать – ун патне пырса мăрлатать, ачашланать (Воспитатель ачасене теттепе вылятаттарать).

3-4 ача каланă хыççăн Кушак тус пурин патне пырса ачашланса илет, сыв пуллашать те каять.

Пирĕн патăмăрта хăнара мĕнлерех хитре ачаш кушак пулчĕ. Занятие вĕçлесе воспитатель сăвва тепĕр хут вулать:

*Кушак тусăн кĕрĕкĕ*
*Селĕм çав тери.*
*Кушак тусăн мăйăхĕ*
*Пуринчен хитри.*
*Куçĕ ун чăр-чăр пăхать,*
*Шăлĕ ун çип-çивĕч.*

**3-мĕш калаçу**

Тупмалли юмахсем

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене çĕнĕ тупмалли юмахсемпе паллаштарать. Ачасем тупсăмне каласан ăна сăлтавлама ыйтать.

– Мĕншĕн йытă (сунчăк, пулă) тесе шутлатăн?

*Кил-çурта сыхлатăп хам –*
*Вăрттăн кĕреймест никам.*
*Сассăма паратăп: „Хам!"*
*Юратать мана хуçам.* (Йытă).

*Çумăрта вăл савăнать,*
*Карăнать те сарăлать.*

*Пур тавралăх йĕп-йĕпе,*
*Манăн тип-типех кĕпе*. (Сунчăк).

*Пуçĕ пур та – çўçĕ çук,*
*Çăварĕ пур та – сасси çук*. (Пулă).

**Пĕтĕмлетў занятийĕ**

*Заняти тĕллевĕ:* Тупмалли юмахсем çинчен мĕн пĕлнине çирĕплетесси, йăпатмалли сăвă-юрăсене аса илтересси, вĕсене палăртуллă калама хăнăхтарасси.

*Кирлĕ материал*: теттесем – пўрт, пукане, кушак.

*Заняти йĕрки.* Воспитатель ачасене пукане кăтартать.

– Ку Катя пукане. Вăл çак çуртра пурăнать. Катя паян хăнасене кĕтет. Ун патне кам килнине тупмалли юмахсен тупсăмĕсенчен пĕлĕпĕр. Тупмалли юмахсене тепĕр майлă сутмалли юмах та теççĕ. Тупмалли юмахсенче япалана ятне асăнмасăр сăнласа параççĕ. Итлекенĕн вара çав япала ятне пĕлмелле. Тупмалли юмаха тимлĕ итлесен, лайăххрах шутласан тупсăмне тупма пулатех. Халĕ эсир те кăшт пуç ватăр, Катьăн хăнисем камсем пулнине пĕлĕр – вĕсен ячĕсем тупсăмĕсенче. Шутлăр, кама чĕннĕ-ши Катя?

*Тăвата кăчăркка,*
*Икĕ йăлтăркка,*
*Пĕр шĕвĕркке!*

– Ку мĕн пулать?

– Çапла, кушак. Мĕнле тавçăрса илтĕр тупсăмне?

– Кăчăркка тесе тупмалли юмахра мĕне каланă?

– Тĕрĕс, ачасем. Ахаль чухне кушак шăппăн çўрет, тăват уринчи чĕрнисене кăлармасть те, анчах та çиллес чухне вара... Чăнах та кăчăркка.

– Йăлтăркки мĕскер тата?

– Çапла, кушаксем питĕ лайăх кураççĕ. Çĕрле вара вĕсен куçĕ таçтанах симĕссĕн ялтăртать.

– Шĕвĕркки мĕн тата?

– Ачасем, эсир хăвăр кушак çинчен тупмалли юмах татах пĕлетĕр-и?

*Чăл-чăл куçлă,*
*Пак-пак çăварлă,*

*Пăшалне тăратнă*
*Пÿрте кĕрет.*

– Маттур, ачасем. Тепĕр тупмалли юмах парам-ха сире. Пĕлĕр-ха Катьăн иккĕмĕш хăнине.

*Пуçĕ тура пек,*
*Хÿри çурла пек,*
*Ирпе, кăнтăрла,*
*Хăвалать ĕçе.*

– Кам чухларĕ ку мĕн пулнине?

– Тĕрĕс. Автан. Автан хитре, капăр. Автанăн мухтанмалли, капрăрри мĕн пур?

„*Пуçĕ тура пек, хÿри çурла пек*", – тени тĕрĕсех-и ачасем?

– Автан ĕçе епле хăвалама пултарать?

– Унăн юрри мĕнлерех? Кам автан пек авăтса кăтартма пултарать?

– Çапла. Автан янраттарса авăтать. Пурне те ыйхăран вăратать. Янртаттарать (çĕнĕ сăмах кĕртет) – унăн юрри ян каять.

– Маттур, эсир тупмалли юмахсен тупсăмĕсене аван тупатăр. Тата теприне итлĕр: *Пуçĕ сенĕк, хырăмĕ пичке, хÿри милке.*

– Ку мĕн? Тĕрĕс, ĕне.

– Мĕнле пит хăвăрт тупма пултартăр тупсăмне? Ăçтан пĕлтĕр? (Воспитатель ачасемпе тупмалли юмаха сÿтсе явать, ĕне çинчен мĕн пĕлнине калаттарать)

– Тепĕр тупмалли юмах вара тата интереслĕрех. Тупсăмне тупайăр-ши?

*Сухаллă та – ват çын мар*
*Туратлă та – йывăç мар,*
*Хутаçлă та – кĕлмĕç мар.*

(Кĕлмĕç тесе ытла чухăн, çиме çăкăр ыйтса çÿрекен çынна калаççĕ).

– Ку мĕн пулать?

Качака чăнах та сухаллă-и? Мĕншĕн туратлă тенĕ? Унăн мĕн пур? (Мăйрака). Хутаçлă тесе мĕне кура каланă? (Çиллишĕн).

Акă Катьăн хăнисем мĕнле чĕр чунсем пулнине пĕлтĕмĕр те. Миçен вĕсем? Вĕсенчен чи пысăкки хăшĕ? Хăшĕ тĕкĕшме юратать? Хăшĕ çăмламасскер, кăпăшскер? Хăшĕ пуринчен малтан вăранать?

Тем, хăнасем тунсăхлама пуçларĕç пулмалла. Мĕнле савăнтарар-ха вĕсене? Çапла, юрласа-ташласа пама пулать, хăналасан та аван пулĕ.

Ачасем, атьăр сăвă каласа парар вĕсене. Малтан кушака савăнтарар:

*Кушак тусăн кĕрĕкĕ*
*Селĕм çав тери.*
*Кушак тусăн мăйăхĕ*
*Пуринчен хитри.*
*Куçĕ ун чăр-чăр пăхать,*
*Шăлĕ ун çип-çивĕч.*

Автан çинчен те сăвă аса илĕр. Ăна та савăнтарăр.

## НОЯБРЬ

### Пĕрремĕш эрне. Авторсен юмахĕсем

Эрне хушшинче ачасене авторсен юмахĕсемпе паллаштаратпăр.

*Ĕç тĕллевĕ*: Юмахсене кăмăлтан итлеме вĕрентесси, ачасен кăмăл-туйăм лексикине пуянлатасси, харкам кăмăлне хусканусем, интонаци, мимика урлă палăртма вĕрентесси.

#### 1-мĕш калаçу

Н. Васильевăн „Çăмха" юмахĕ

*Кирлĕ хатĕрсем*: юмахра тĕл пулакан тетте-чĕр чунсем е чĕр чунсен ӳкерчĕкĕсем, фланелеграф.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, пăхăр-ха ман алăра мĕн куратăр? (Çăмха).

– Çакăн пек çип çăмхине аннĕр-асаннĕрсенне курнă пуль ĕнтĕ. Аса илĕр çип мĕн тума кирлĕ?

– Çапла, ахаль çăмхасенчен чăнах та эсир асăннă нуски-чăлха, кофта-калпак çыхаççĕ. Анчах манăн çăмха вара ахаль çăмха мар çав. Вăл асамлă çăмха.

– Сире ун çинчен юмах каласа парам-и? Çăмха. Николай Васильев çырнă. Итлĕр. (Воспитатель юмах каланăçем ăна фланелеграф çинче ӳкерчĕксемпе (е теттесемпе выляса) кăтартса пырать.

**Çăмха**

*Асанне пурăннă. Унăн кивĕ арча пулнă. Асаннен кивĕ арчинче кивелме пĕлмен Çăмха пулнă.*

*Ватă асанне пĕррехинче арчине пăлхатма тытăнать. Çав вăхăтра арчара выртакан асамлă Çăмха урайне тухса ўкет. Урайне тухса ўксенех çав Çăмхана чун кĕрет. Вара асамлă Çăмха картишне кусса тухать.*

*Кунта вăл малтанах авăк хўреллĕ Автана курать.*

*– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Автан.*

*– Эпĕ Çăмха пулатăп,– тет Çăмха.*

*– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла! – тет Автан.*

*Çăмха малалла кусать. Кĕçех пирĕн Çăмха каçăр мăйракаллă Качака умне çитсе тăрать.*

*- Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Качака.*

*– Эпĕ Çăмха пулатăп, - тет Çăмха.*

*– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет Качака.*

*Çăмха малалла кусать. Кĕçех пирĕн Çăмха кăтра çăмлă Сурăх умне çитсе тăрать.*

*– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Сурăх.*

*– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.*

*– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет Сурăх.*

*Çăмха малалла кусать. Кĕçсх пирĕн Çăмха мăн мăйракаллă Ĕнс умне çитсе тăрать.*

*– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Ĕне.*

*– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.*

*– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет Ĕне.*

*Çăмха малалла кусать. Кĕçех пирĕн Çăмха пуклак сăмсаллă Сысна умне çитсе тăрать.*

*– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Сысна.*

*– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.*

*– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет Сысна.*

*Çăмха малалла кусать. Кĕçех пирĕн асамлă Çăмха хаяр саслă Йытă умне çитсс тăрать.*

*– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать Йытă.*

*– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.*

*– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, - тет Йытă.*

*Çăмха малалла кусать. Кусса пынă çĕртех хайхи тăп чарăнса тăрать. Мĕн пулчĕ? Мĕншĕн малалла кусмасть-ха Çăмха? Ах, инкек – çавра Çăмха сўтĕлсе вĕçне тухнă иккен. Мĕн тумалла? Ним*

*тума та çук – шухăшлас пулать. Кĕçех сӳтĕлсе пĕтнĕ Çăмха пуçне пĕр ăслă шухăш пырса кĕрет.*

*«Кун чухлĕ курса çӳрениие çитет пулĕ», – тет вăл хăйĕн ăшĕнче. Çапла шухăшласа илет те каялла çăмхаланса вать асаннен кивĕ арчине кĕрех выртать.*

*Арчара выртать Çăмха – Халь вĕçлем-ха юмаха.*

(Н. Васильев)

– Сире, юмах килĕшрĕ-и,?

– Вăл мĕнле те пулин тепĕр юмаха аса илтермерĕ-и?

– Çав юмахăн ячĕ мĕнлеччĕ çак?

– Йăва çул çӳревре мĕне-мĕне тĕл пулнине ас тăватăр-и? (Аса илеççĕ).

– Атьăр, ачасем, Çăмха тĕл пулăвĕсене выляса кăтартар. (Воспитатель теттесем валеçсе парать. Кашни чĕр чун-тетте патне черечĕпе Çăмхапа пырать. Ачасем юмахри дилога аса илсе калаççĕ:

*– Кам эсĕ? – тĕлĕнсе ыйтать .... .*

*– Эпĕ Çăмха пулатăп, – тет Çăмха.*

*– Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла, – тет .... .*

– Юмах мĕнле вĕçленет?

– Арчана кĕрсе выртах ĕнтĕ халь Çăмха. Тепре тĕл пуличчен!

– Çăмха мĕншĕн арчана таврăнать?

– Юмах вĕçĕ килĕшрĕ-и сире?

## 2-мĕш калаçу

„Çăмха" юмаха модельсем тăрăх асăмлатарасси

*Кирлĕ материал:* çавракасем ӳкернĕ пысăк хут листи (ватман). Ĕç йĕрки.

– Иртнинче эпир „ Йăва" юмах евĕрлĕ тепĕр юмах вуланăччĕ. Аса илĕр-ха, ячĕ мĕнлеччĕ?

– Акă вăл пирĕн асамлă Çăмха. (Кăтартать).

– Çăмха картишĕнче мĕнле чĕр чунсене тĕл пулчĕ? Айтăр пĕрле аса илер. Кашнинех çакă çаврашкасемпе паллă тăвăпăр (листан тĕрлĕ вырăнĕнче 6 çаврака ӳкернĕ).

Чи малтанах Çăмха мĕне тĕл пулчĕ? Юмахра ăна мĕнле автан тенĕччĕ?

Çапла, чи малтан Çăмха авăк хӳреллĕ автана тĕл пулчĕ. Автана хӳрине ӳкерсе парар. (Çаврашка çумне хӳре ӳкерет).

Унтан мĕне тĕл пулчĕ?

Качака çинчен мĕн каланăччĕ юмахра?

Каçăр мăйракаллă Качакана мăйракине ӳкерсе парар апла.

(Çапла кăтра çăмлă Сурăха – кăтра çăмне, Мăн мăйракаллă ĕнене – мăйракине, пуклак сăмсаллă Сыснине – сăмсине, хаяр саслă Йытăна – çаврăнса тăракан хӳрепе хăлхине ӳкерсе параççĕ).

Атьăр халĕ çак ӳкерчĕксем тăрăх юмаха аса илер. (Воспитатель юмах калама пуçлать. Çăмхана кашни ӳкерчĕк патне илсе пырать. Ачасем юмаха ушкăнпа аса илеççĕ.

Унтан воспитатель теттесене ачасене валеçсе парать. Юмаха хăйсене аса илме сĕнет.

**3-мĕш калаçу**

Н. Васильевăн „Кунтăк" юмахĕ

Юмахпа паллаштариччен воспитатель ачасене арлан, каюра, тыркас, сăвăр ӳкерчĕкĕсене кăтартать, çак чĕр чунсем çинчен кĕскен каласа парать.

*Кирлĕ материал:* кунтăк ӳкерчĕкĕ.

*Ĕç йĕрки.* Паян сире Николай Васильев çыравçăн тепĕр юмахне вуласа парăп. Ячĕ унăн – „Кунтăк". Кунтăк мĕнне пĕлетĕр пулĕ? Кунтăк вăл хупран тунă карçинкка евĕрлĕ савăт. Унпа кăмпа-çырлана çӳреççĕ, апат-çимĕç тытаççĕ. (Ӳкерчĕкне кăтартать).

**Кунтăк**

*Ака вăхăчĕ çитет. Каврук мучи акана тухать. Ака-суха ĕçне пĕтерсен Каврук мучин кунтăкĕ ана çинех манса юлать.*

*Кĕçех кунтăк патне Арлан пырса тухать. Пырса тухать те çапла ыйтать:*

*– Куçа кунтăк курăнать, кам кунтăкра пурăнать? Кунтăк хуçи курăнмасть, сас-хура та илтĕнмест.*

*– Никам та çук пулсан хамăн кĕрсе пурăнас, – тет Арлан. Пĕр-пĕчченех кунтăк хуçи пулать.*

*Нумаях та вăхăт иртмест, кунтăк патне кай ураллă Каюра йăпăртатса пырса тухать. Пырса тухать те çапла ыйтать:*

*– Куçа кунтăк курăнать, кам кунтăкра пурăнать?*

*– Пĕр-пĕччченех пурăнатăп-ха, — хуравлать Арлан.*

*– Пĕччен пурăннă çĕрте иккĕн пурăнма та юрать пулĕ?*

*– Юрассине юрать те, кам пулатăн-ха вара эс?*

*– Эп Каюра пулатăп, куллен тăпра чаватăп. Иккĕн пурăнма пуçлаççĕ.*

*Нумаях та вăхăт иртмест, кунтăк патне Сăвăр пырса тухать. Пырса тухать те çапла ыйтать:*

*– Куçа кунтăк курăнать, кам кунтăкра пурăнать?*

*– Иккĕнех пурăнкалатпăр, — теççĕ кил хуçисем.*

*– Иккĕн пурăннă çĕрте виççĕн те пурăнма юрать пуль?*

*– Юрассине юрать те, кам пулатăн-ха вара эс?*

*– Эпĕ Сăвăр пулатăп, сăвăласа юрлатăп. Виççĕн пурăнма пуçлаççĕ.*

*Нумаях та вăхăт иртмест, кунтăк патне Тыркас пырать. Пырса тухать те çапла ыйтать:*

*– Куçа кунтăк курăнать, кам кунтăкра пурăнать?*

*– Виççĕн çеç пурăнкалатпăр, – теççĕ кил хуçисем.*

*– Виççĕн пурăннă çĕрте тăваттăн та пурăнма юрать пуль?*

*– Юрассине юрать те, кам пулатăн-ха вара эс?*

*– Эпĕ Тыркас пулатăп, тырă касса пурнатăп. Тăваттăн пурăнма пуçлаççĕ.*

*Нумаях та вăхăт иртмест, кунтăк патне Упа мучи пырса тухать. Пырса тухать те çапла ыйтать:*

*– Куçа кунтăк курăнать, кунтăкра кам пурăнать?*

*– Тăватă хусах пурăнать, – теççĕ кил хуçисем.*

*– Тăваттăн пурăннă çĕрте пиллĕкĕн те пурăнма юрать пуль?*

*– Юрассине юрать те, кам пулатăн-ха вара эс?*

*– Эпĕ Упа-утаман, усал саспа улакан, çак таврари халăха пăхăнтарса пурнакан, – тет Упа мучи.*

*Çапла калать те Упа алăкран кĕме тăрать – кĕреймест. Тĕнĕ шăтăкĕнчен кĕме тăрать – кĕреймест. Чӳречерен кĕме тăрать – кĕреймест. Ниçтан кĕме май çук енне кунтăк çине хăпарса ларать. Хăпарса ларать те çавра кунтăка лапчăтса та хурать. Кунтăк ăшĕнчи чĕрчунсем аран-аран тарса хăтăлаççĕ.* (Н. Васильев)

– Ачасем, сире юмах килĕшрĕ-и? Юмах ятăм, юптартăм, пĕр сăмах та суймарăм вĕт.

– Халĕ вуланă юмах сире тепĕр юмаха аса илтермерĕ-и?

– Çапла, эпир сирĕнпе çакăн евĕрлĕ тепĕр юмах пĕлетпĕр. Ячĕ ун – „Кермен".

– Çав юмахра кермене мĕнле-мĕнле чĕр чун пуçтарăннăччĕ? (Аса илме пулăшать: шăпăрçă-шăна, вăрăмтуна, шăши тус – хушка

пуҫ, катăк тута, ват шапа, мулкач, мул пухакан, сăрт хĕрринче пурăнакан, тилĕ, ват ăста, сăмах ҫапма пит ăста, кашкăр-кашаман, упа-утаман, ик урапа утакан, ĕне тирне сĕвекен).

Халь вуланă юмахри кунтăка мĕнле-мĕнле чĕр чун пуҫтарăнчĕ?

Ҫапла, уйри кунтăка вара Арлан, кай ураллă Каюра, Сăвăр, сăвăласа юрлаканскер, Тыркас, тырă касса пурнаканскер тата Упа-утаман.

Юмахсенче пĕр пек чĕрчунсем пур-и?

Кермен патне упа-утаман юлашкинчен килет, кунтăк патне те юлашкинчен вăлах ҫитет. Кунта вăл усал саспа улакан, ҫав таврари халăха пăхăнтарса пурăнакансер.

– Кунтăк патне мĕншĕн шăп та ҫак чĕр чунсем килнĕ-ши? Тен, слонăн килмелле пулнă кунтăк патне?

– Кунтăк уйра выртнă вĕт. Ку чĕр чунсем уйра пурăнаканскерсем. Вĕсем кунтăк патне килнинче ним тĕлĕнмелли те ҫук. Кашни тăрăхра расна чĕр чунсем пурăнаҫҫĕ. Юмахĕсем те вĕсем ҫинчен пулать паллах.

### 4-мĕш калаҫу

„Кунтăк" юмаха выляни

*Кирлĕ материал*: „Кунтăк" юмахри чĕр чунсен сăнĕсемлĕ пуҫ кăшăлĕсем

*Ĕҫ йĕрки.* Воспитатель ачасене „Кунтăк" юмахри чĕр чунсен сăнĕсемлĕ пуҫ кăшăлĕсем валеҫсе парать.

Малтан юмаха пĕрле аса илеҫҫĕ, унтан выляҫҫĕ. Воспитатель хăй автор вырăнне пулать, ачасене кирлĕ сăмахсене аса илсе калама пулăшса пырать: *Куҫа кунтăк курăнать, кунтăкра кам пурăнать? Пĕччен пурăннă ҫĕрте иккĕн пурăнма та юрать пулĕ? Юрассине юрать те, кам пулатăн-ха вара эс?* Тата ытти те.

### Пĕтĕмлетӳ занятийĕ

*Занятин тĕллевĕ:* В. Сутеăн „Чăх чĕппипе Кăвакал чĕппи" юмахĕпе паллаштарасси, малтан паллашнă юмахĕсене аса илтересси.

*Кирлĕ материал*: юмахри персонажсен ӳкерчĕкĕсем, виҫĕ курупка (хуплашкисем ҫине малтан вуланă юмахсенчи самантсенне

сăнлакан ÿкерчĕксем ҫыпăҫтарнă ).

*Заняти йĕрки.*

– Ачасем, сире паян икĕ тус ҫинчен юмах вуласа парăп. Паллашар-ха пĕрремĕшпе. Сăвва тĕрĕс вĕҫлеме пултарсан вăл камне пĕлĕпĕр. Итлĕр.

**Кăвакал чĕппи**

*Шывра ишет сар ҫăмха –*
*Сÿтĕлмест ҫиппи.*
*Ҫăмха мар вăл, чимĕр-ха,*
...................
(Н. Васильев)

Тавҫăртăр-и мĕн ҫинчен каланă?

– Ҫапла кăвал чĕппи. Мĕншĕн кăвакал чĕппи тесе шутларăр, чăх чĕппи те сар ҫăмха пекех вĕт, сап-сарă, кăпăшка?

– Шăпах чăх чĕппипе кăвал чĕппи ҫинчен юмах вуласа парасшăн та сире. Итлĕр.

„Чăх чĕппипе Кăвакал чĕппи" ятлă та ĕнтĕ эпĕ вуласа парас тенĕ юмах.

**Чăх чĕппипе Кăвакал чĕппи**

*Кăвакал чĕппи ҫăмартана шăтарса тухрĕ.*
*– Эпĕ ҫăмартана шăтарса тухрăм, – терĕ вăл.*
*– Эпĕ те – терĕ чăх чĕппи.*
*– Эпĕ уҫăлма каятăп, – терĕ Кăвакал чĕппи.*
*– Эпĕ те – терĕ Чăх чĕппи.*
*– Эпĕ ҫĕр чакалатăп, – терĕ Кăвакал чĕппи.*
*– Эпĕ те – терĕ Чăх чĕппи.*
*– Эпĕ ăман тупрăм, – терĕ Кăвакал чĕппи.*
*– Эпĕ те – терĕ Чăх чĕппи.*
*– Эпĕ лĕпĕш тытрăм, – терĕ Кăвакал чĕппи.*
*– Эпĕ те – терĕ Чăх чĕппи.*
*– Эпĕ шыва кĕме каятăп, – терĕ Кăвакал чĕппи.*
*– Эпĕ те – терĕ Чăх чĕппи.*
*– Эпĕ ишетĕп, – терĕ Кăвакал чĕппи.*
*– Эпĕ те – кăшкăрчĕ Чăх чĕппи. Ҫăлăр! Путатăп!*
*Кăвакал чĕппи Чăх чĕппине ҫырана туртса кăларчĕ.*
*– Эпĕ татах шыва кĕме каятăп. – Эпĕ тек каймастăп, – терĕ Чăх чĕппи.* (В. Сутеев)

– Ачасем, сире юмах килӗшрӗ-и?

– Чӑх чӗппийӗ мӗнлескер?

– Пӗчӗк, хитре, айван. Ҫапла, вӑл айванрах. Теприн хыҫҫӑн тем тума та хатӗр. Ялан апла тума ҫук ҫав.

– Атьӑр тепре аса илӗпӗр хайлава. Вӑл мӗнле пуҫланчӗ? Кӑвакал чӗппи малтан мӗн турӗ? Чи малтанах...

– Ҫапла, ҫӑмарта шӑтарса тухрӗ. Унтан... Шыва кӗме кайрӗ. Чӑх чӗппи вара мӗн турӗ? ...

– Веҫех Кӑвакал чӗппи хыҫҫӑн туса пычӗ, ҫапла-и?

– Чӑх чӗппи мӗн тума пултараймарӗ? Мӗншӗн?

– Ҫапла, чӑхсем шывра ишеймеҫҫӗ. Вӗсем шыв кайӑкӗсем мар.

– Пӗчӗк Чӑх чӗппи кулӑшла хӑтланать. Анчах ку темех мар, вӑл пӗчӗкҫӗ-ҫке, пӗчӗк ача пекех.

Воспитатель ачасене вӑйӑ выляма чӗнет – ӳкерчӗксем пӑтрашӑнса кайнӑ. Кашнине хӑйӗн курупкине хумалла.

Пӗр курупки „Кунтӑк" юмахри ӳкерчӗксем валли, тепри – „Ҫӑмха" юмахри, виҫҫӗмӗшӗ – халӗ вуланӑ юмахри ӳкерчӗксем валли. Курупкисене ачасем хуплашки тӑрӑх палласа илеҫҫӗ.

## Иккӗмӗш эрне. Ача-пӑча сӑмахлӑхӗн хайлавӗсем

*Ӗҫ тӗллевӗ*: ача-пӑча сӑмахлӑхӗн хайлавӗсемпе малалла паллаштарасси, вӗсене вӑйӑсенче усӑ курас кӑмӑла ҫуратасси.

### 1-мӗш калаҫу

„Пукани, Пукани" сӑвӑ

*Кирлӗ материал*: пукане.

*Ӗҫ йӗрки.* Воспитатель ачасене пуканепе паллаштарать. Диалог выляса парать.

*– Пукани, пукани,*
*Ӑҫта каян, пукани?*
*– Тусӑм патне каятӑп.*
*– Унта мӗнле ҫитетӗн?*
*– Ташла-ташла ҫитетӗп.*
*– Тусу сана мӗн парать?*
*– Икӗ чӗрес пыл парать.*
*– Пылне ӑҫта хуратӑн?*

*– Шур кĕлетри çӳпçене.*
*– Тата тусу мĕн парать?*
*– Икĕ алла сар чечек.*
*– Ăна ăçта лартатăн?*
*– Шурă пӳрте, сак çине.*
*– Эпĕ санпа вылям-и?*
*– Килех, атя выльăпăр...*

Пукане текстпа килĕшӳллĕн хусканусем туса пырать, ташласа илет, чĕрес (йывăç витре ӳкерчĕкне) илет, çӳпçене (йывăç сунтăх) пыл хунă пек тăвать, чечексене сак çинчи савăта (ӳкерчĕк) лартнă пек тăвать.

Вăйă хыççăн воспитатель ачасене пуканепе калаçма сĕнет.

– Пуканепе кам калаçас тет?

Калаçакан ачана пулăшса пырать. Пуканене алла илсе ун вырăнне хăй калаçать.

Унтан пуканенпе воспитатель „пăшăлтатса илеççĕ".

– Ачасем пукане вăйă вылясшăн „Пĕчĕкçеç путене". Выляр-и, пуканепе çак вăййа?

– Итлĕр-ха апла. (Ачасем вăйă картине тăраççĕ. Карта варринче арçын ачапа хĕр ача – Анюкпа Ванюк. Вăйă ачисем карталанса юрлаççĕ:

*Пĕчĕкçеç путене*
*Сарă тулă юратать.*
*Юратать, юратать,*
*Чăнахах та юратать.*
*Ай-хай ача Ванюк пур,*
*Çав Анюка юратать.*
*Юратать,юратать,*
*Чăнахах та юратать.*

Ванюкпа Анюк ташлаççĕ. Унтан хăйсем вырăнне тепĕр хĕр ачапа арçын ачана суйлаççĕ. Çапла вăйă малалла пырать).

– Ачасем, вăйă юррине ас туса юлтăр-и? Юрласа пăхар апла.

**2-мĕш калаçу**

„Ăçта кайрăн кушак тус" йăпатмалли сăвă

*Кирлĕ материал*: тетте-кушак.

*Ĕç йĕрки.* Ачасем, пăхăр-ха пирĕн пата Кушак тус çитнĕ.

Нумай пулатчĕ ăна курманни. Ыйтса пĕлер ăçта пулнă вăл.

*– Ăçта кайрăн, кушак тус?*
*– Кукамай патне.*
*– Мĕн тума кайрăн?*
*– Хăнана кайрăм.*
*– Кукаму мĕн çитерчĕ?*
*– Çуллă пăтă çитерчĕ.*
*– Мĕнле чашăкпа?*
*– Сăрлă чашăкпа.*
*– Мĕнле кашăкпа?*
*– Сăрлă кашăкпа.*
*– Мĕншĕн мана валли кӳмерĕн?*
*– Хама та сахал пулчĕ.*
*– Прис! Прис! Прис!*

– Эпир ачасемпе пур пĕрле çук çурмалла пайлама хăнахнă. Эсĕ вара, Кушак тус, мĕн пĕчченех хăналанатăн?

– Ачасем хăвалар пуль, Кушак туса.

Ачасемпе пĕрле: Прис! Прис! Прис!

– А-а-а, эсĕ шӳтлетĕн-и? Апла юрать. Ачасем, тепре итлер-и Кушак тус шӳтне?

Тепĕр хут вулать.

**3-мĕш калаçу**

**„Ларать, ларать, Миша ларать" вăйă**

*Кирлĕ материал*: пуканесем.

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене пуканесен вăййине сăнама чĕнет. Паллаканнисем, теттесен кĕтесĕнчен. Воспитатель ачасене икĕ-виçĕ пуканепе *Ларать, ларать, Миша ларать" вăййа кăтартать.* Кайран ачасене те выляма чĕнет.

Ку вăйăра эсир пĕр-пĕрне сасран мĕнле пĕлме пултарнине курăпăр. Уйăрайрăр-ши пĕр-пĕрин сассине?

Кам хайне тĕрĕслесе пăхасшăн?

Тух, Коля. Эсĕ ачасене çурăмпа ларăн, хăвна кам чĕннине пăхмасăр уйăрма тăрăшăн. Кольăна камăн чĕнмеллине алăпа тĕллесе кăтартăп.

*Ларать, ларать, Коля ларать*
*Шĕшкĕ тĕмĕ айĕнче.*
*Çиет, çиет, Коля çиет*
*Шĕшкĕн сарă мăйăрне.*
*Вăхăт çисен тăрас пулать*
*Ятне тĕрĕс калас пулать.*

Воспитатель кам çине алпа кăтартать, çавă арçын ача ятне калать.

– Коля, халĕ эсĕ тăр, пирĕн енне çаврăн. Кам чĕнчĕ сана?

Ар çын ача хăйне кам чĕннине пĕлсен, ăна чĕнекен ачи ун вырăнне тухать. Вăйă маллала тăсăлать.

Воспитатель ачасене вăйă сăввине пĕрле калама хавхалантарать.

### 4-мĕш калаçу

*Ĕç йĕрки.* Ку хутĕнче воспитатель малтан паллашнă вăййа урăхларах выляма сĕнет.

Вăйă картинче пĕр ача (Мишша) ларать. Ачасем карталанса юрласа çаврăнаççĕ:

*Ларать, ларать, Мишша ларать*
*Шĕшкĕ тĕмĕ айĕнче.*
*Çиет, çиет, Мишша çиет*
*Шĕшкĕн сарă мăйăрне.*
*Вăхăт çитсен тăрас пулать*
*Ятне тĕрĕс калас пулать.*

Юрласа пĕтерсен, çаврăнма чарăнаççĕ. Юрлакансенчен пĕри, хыçалтан пырса, Мишшан куçне хуплать. Кам хупланине пĕлсен, Мишша вăйă картине тăрать, куç хуплаканĕ карта варрине ларать.

### Пĕтĕмлетӳ занятийĕ

*Занятин тĕллевĕ:* паллашнă хайлавсене аса илесси, ачасене хайлавсен содержанийĕ тăрăх йĕркеленĕ вăйăсем выляттарма хавхалантарасси.

*Кирлӗ материал*: пукане, тетте-кушак, ӳкерчӗксем.

*Заняти йӗрки.* Воспитатель ачасене иртнинче паллаштарнӑ пуканене кӑтартать.

– Питӗ хитре ку пукане. Унӑн ҫӳҫӗ – ... (вӗҫленмен интонаципе усӑ курса воспитатель ачасене хӑй хыҫҫӑн калама хистет).

– Ҫапла, вӑрӑм, сарӑ тӗслӗ.

– Пуканен кӗпи – ...Мӗнле пуканен кӗпи? Ҫапла – кӑвак тӗслӗ, кӗсъеллӗ, вӑрӑм.

– Пуканен уринче – туфли. Питӗ капӑр пукане.

– Ачасем, аса илер, мӗнле вӑйӑ вылянӑччӗ иртнинче пукане пирӗнпе? Сӑввине ас тӑватӑр-и? Атьӑр пӗрле аса илер.

*– Пукани, пукани,*
*Ӑҫта каян, пукани?*
*– Тусӑм патне каятӑп.*
*– Унта мӗнле ҫитетӗн?*
*– Ташла-ташла ҫитетӗп.*
*– Тусу сана мӗн парать?*
*– Икӗ чӗрес пыл парать.*
*– Пылне ӑҫта хуратӑн?*
*– Шур кӗлетри ҫӳпҫене.*
*– Тата тусу мӗн парать?*
*– Икӗ алла сар чечек.*
*– Ӑна ӑҫта лартатӑн?*
*– Шурӑ пӳрте, сак ҫине.*
*– Эпӗ санпа вылям-и?*
*– Килех, атя выльӑпӑр...*

– Пукане пире тусӗ панӑ кучченеҫпе хӑналасшӑн. Мӗн панӑччӗ ӑна тусӗ, аса илӗр-ха?

– Ҫапла, икӗ чӗрес пыл. Эсир пыл юрататӑр-и? Ас тивсе пӑхӑр. (Выляса „ҫиеҫҫӗ").

– Пирӗн пата Кушак тус та ҫитнӗ иккен (Кӑтартать). Ӑна та хӑналар. („Ҫитерет").

– Кушак тус ӑҫта кайнӑччӗ, ас тӑватӑр-и? Аса илтерем. (Малтан паллашнӑ сӑвва калать).

*– Ӑҫта кайрӑн, кушак тус?*
*– Кукамай патне.*
*– Мӗн тума кайрӑн?*
*– Хӑнана кайрӑм.*

– *Кукаму мĕн çитерчĕ?*
– *Çуллă пăтă çитерчĕ.*
– *Мĕнле чашăкпа?*
– *Сăрлă чашăкпа.*
– *Мĕнле кашăкпа?*
– *Сăрлă кашăкпа.*
– *Мĕншĕн мана валли кӳмерĕн?*
– *Хама та сахал пулчĕ.*
– *Прис! Прис! Прис!*

Воспитатель кушакпа „пăшăлтатса" илет.

– Ачасем, Кушак тус: „Ан хăвалăр ĕнтĕ мана", - тет. Вăл çуллă пăтта сире те ас тивтересшĕн.

– Çисе пăхăпăр, Кушак тус. Çапла-и, ачасем? (Сăрлă кашăкпа сăрлă чашăкран воспитатель ачасене пăтă „çитерет").

– Тусĕ патне кайса килчĕ пукане, выляса-ташласа ĕшенчĕ. Çывăрма вырттарар ĕнтĕ ăна. Кушак тус та канса илтĕр. Пĕрле вырттарар. (Вырнаçтарать). Воспитатель ачасене сăпка юрри аса илме пулăшать. Юрласа çывратаççĕ.

– Халĕ, ачасем, атьăр, выляр! „Пĕчĕкçеç путене" вăййа ас тăватăр-и? Сăвви мĕнлеччĕ?

Воспитатель ачасене вăйă картине йĕркеленсе тăма пулăшать. Карта варринче Анюкпа Ванюк. Вăйă ачисем юралаççĕ

*Пĕчĕкçеç путене*
*Сарă тулă юратать.*
*Юратать, юратать,*
*Чăнахах та юратать.*
*Ай-хай ача Ванюк пур,*
*Çав Анюка юратать.*
*Юратать,юратать,*
*Чăнахах та юратать.*

Ванюкпа Анюк ташлаççĕ. Ташласан е тата урăх мĕн те пулин хушнине тусан вĕсем картаран хĕр ачапа арçын ачана суйлаççĕ. Суйланнисем карта варрине тухаççĕ, суйлакансем вĕсен вырăнне тăраççĕ. Юрра çĕнĕрен юрлаççĕ.

**Виççĕмĕш эрне. Килти чĕрчунсем çинчен сăвăсем**

Ку эрнере ачасене килти чĕрчунсем çинчен сăвăсем вулса паратпăр.

*Ĕç тĕллевĕ:* сăвва тимлесе итлеме, ăнланма вĕрентесси; сăввăн ритмне, кĕввине туйма хăнăхтарасси; харкăм шухăш-туйăмне сăнама вĕрентсе пырасси.

## 1-мĕш калаçу

Кушак çинчен хайланă сăвăсем

*Кирлĕ материал*: тетте-пулă е кушак ӳкерчĕкĕ.

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, ас тăватăр-и, эпир сирĕнпе Асамлă Çăмхапа паллашнăччĕ. Вăл çул çӳреве тухнăччĕ, çапла-и? Паян тата тепĕр çăмхапа паллашăпăр. Вăл эсир пĕлекен Асамлă Çăмхаран та урăхларах. Итлĕр, вуласа парам ун çинчен.

**Чĕрĕ çăмха**

*Хуп-хура çемçе çăмха*
*Ӳкрĕ урайне. —*
*Çыхас унран ăш чăлха,*
*Терĕ асанне.*
*Сикрĕ лешĕ каялла*
*Пĕчĕк мечĕк пек.*
*Хăй хӳрине тытмалла*
*Вăй вылять вăл тек.*
*— Чĕрĕ-çке ак, пăхăр-ха,*
*Кулать асанне. —*
*Çыхас мар санран чăлха,*
*Кил-ха ал çине.*(Н. Пăрчăкан)

– Сăвăра мĕнле çăмха çинчен калаçу пырать?

– Чухласа илтĕр, маттур! Кушак чăнах та çывăрма выртсан çăмхана аса илтерет – пĕтĕрĕнсе ларать те – чăн-чăн çăмха. Ку сăвă, юмах мар. Ăна Нина Пăрчăкан çырнă. Унăн ячĕ – „Чĕрĕ çăмха". Тепре итлĕр-ха сăвва. Чĕрĕ çăмха. Нина Пăрчăкан. (Тепре вулать).

– Эсир кушак çурин вăййисене курнă-и?

– Хăйĕн хӳрине тытасшăн мĕнлерех тăрмашать тата вăл? Туса кăтартсамăр.

– Чăн та сирĕн пекех çаврăнать те ĕнтĕ вăл хăй тавра.

– Ай, маттур, Коля. Чăн-чăн кушак çури. Эпĕ халь сăвăри асанне пулам-ха:

*Çыхас мар санран чӑлха,*

*Кил-ха ал çине.* (Воспитатель ачана юратса илет).

Сӑвӑçсем те пирӗн пекех чӗр чунсене юратаççӗ. Вӗсем çинчен нумай сӑвӑ-юрӑ хайлаççӗ. Акӑ тата тепӗр кушак çинчен сӑвӑ итлӗр. Ӑна Владимир Харитонов сӑвӑç çырнӑ.

**Мӑр-мӑр кушак**

*Кушак мӑр-мӑр мӑрлатать,*

*Хӳрине тек пӑтрататать.*

*Тӑрӑххӑн сикет – çитесшӗн,*

*Алӑри пулла çиесшӗн.*

*Парӑттӑм пулла ӑна –*

*Тухӗ тетӗп наяна.* (В. Харитонов)

– Ку кушакӗ те питӗ шухӑ пулмалла. Вӑл мӗн хӑтланать?

– Хуçи пуллине мӗншӗн памасть тата?

Воспитатель аллинче – тетте-пулӑ е ӳкерчӗк.

– Атьӑр çак сӑвва выляса кӑтартар. Эпӗ пуллине тытса тӑракканни пулатӑп, эсир вара – кушак çурисем. Хӑшӗ çитейӗ пулӑ патне? (Выляççӗ).

**2-мӗш калаçу**

Йытӑ çинчен хайланӑ сӑвӑсем

*Кирлӗ материал*: тетте-йытӑ е ӳкерчӗк.

*Ĕç йӗрки.*

– Ачасем, ку мӗн? (Воспитатель аллинче тетте-йытӑ е ӳкерчӗк).

– Лайӑх сӑнӑр та каласа парӑр тӑрӑшӑр мӗнлерех ку йытӑ: çӑмӗ мӗнле, хӑлхи, сӑмси, шӑлӗ, хӳри?

– Йытӑ хӑçан вӗрет? Мӗнлерех вӗрет? (ют çынна – вӗрет, тарӑхтарсан – хӑрлатать).

– Йытӑсен ячӗсене пӗлетӗр-и эсир?

– Халӗ Хураçка çинчен сӑвӑ итлӗр. Ӑна Петр Эйзин сӑвӑç çырнӑ.

**Хураçка**

*Нӑш-наш турткалать сӑмсине.*

*Вӑльт-вальт сиктерет хӑлхине.*

*Вăшт-вашт вылятать хӳрине.*
*Кăн-кан пăхкалать куçĕпе.*
*Лăп-лап пускалать тяппипе.*
*Хăр-хар тутарать сассипе*. (П. Эйзин)

– Мĕнле хавасла ку йытă! Сăмсине ... (ачасем малалла тăсаççĕ – турткалать), хăлхине ... (сиктерет), хӳрине ... (вылятать), куçĕпе ... (пăхкалать), тяппипе ... (пускалать), сассипе ... (хăр-хар тутарать).

– Мĕнле шутлатăр, ăна мĕншĕн Хураçка ят панă-ши?

– Эсир Хураçка пек хăтланма пултарайрăр-и?

– Воспитатель сăвă йĕркине пуçлать, ачасем вĕçлеççĕ, туса кăтартаççĕ. Педагог тетте е ӳкерчĕкпе пулăшса пырать.

Нăш-наш ... (турткалать сăмсине).
Вăльт-вальт ... (сиктерет хăлхине).
Вăшт-вашт ... (вылятать хӳрине).
Кăн-кан ... (пăхкалать куçĕпе).
Лăп-лап ... (пускалать тяппипе).
Хăр-хар ... (тутарать сассипе).

Воспитатель ачасене ларма ыйтать.

– Сирĕн Хураçкапа калаçас кăмăл çуралмарĕ-и? Александр Савельев-Сас сăвăçă акă мĕнлерех калаçать Хураçкапа.

**Хураçкапа калаçни**

*– Хура-хура Хураçкам,*
*Çурту ытла хитре сан.*
*Кам тунă ăна? Кам?*
*– Хам! Хам! Хам!*
*– Туп-туллиех валашка.*
*Çав апата, Хураçка,*
*Кам çинĕ-ха, каласам?*
*– Хам! Хам! Хам!*
*– Кашни кунах кăнтăрла*
*Выртатăн эс сăнчăрта.*
*Кам кăкарчĕ, Хураçкам?*
*– Хам! Хам! Хам!*
*– Хăш чух эсĕ, Хураçка,*
*Туртаса çӳрен çунашка.*
*Кам кӳлет-ши сана? Кам?*

– *Хам! Хам! Хам!* (А. Савельев-Сас)

– Ас туса юлтăр-и сăвăçă Хураçкаран мĕн-мĕн çинчен ыйтнине? (Аса илеççĕ).

– Çапла, Хураçкан çуртне кам тунине, валашкари апатне кам çисе янине, хăйне кам кăкарнине, кам кӳлсе ярăннине ыйтать.

– Хураçкан хуравĕсем мĕнле пулчĕç, ас туса юлтăр-и?

– Çапла çав, пĕртен пĕр хурав çеç пулчĕ Хураçкан.

– Эпĕ Хураçкаран пач урăххи çинчен ыйтасшăн: „Хураçка, сана кичем мар-и, сан тус-юлташ пур-и?" Тем, чĕнмест Хураçка.

– Атьăр ăна тус тупма пулăшăпăр. Ман шутпа вĕсем ак çак шап-шурă йытăпа туслашма пултарĕç пулĕ. Акă вăл мĕнлескер (кăтартать). Сăвă вулать:

**Пĕчĕк йыттăм пур**

*Пĕчĕк йыттăм пур,*
*Юр пекех шап-шур,*
*Çăмăл ун ури,*
*Çаврака хӳри.*

*Пăнчă пек сăмси.*
*Ян каять сасси.*
*Вăл манпа вылять,*
*Вăл мана сыхлать.* (А. Хум)

Пĕрле чух хаваслăрах, çапла вĕт, ачасем? Эпир вĕсене çакăнта пĕрле лартăпăр.

### 3-мĕш калаçу

Чăх-чĕп çинчен хайланă сăвăсем

*Кирлĕ материал:* автан ӳкерчĕкĕ.

*Ĕç йĕрки.*

– Эпир сирĕнпе паян чăх-чĕп кил картине кайăпăр.

– Тупмалли юмах парам-ха сире пĕлетĕр-и мĕн вăл:

*Пуçĕ – тура,*
*Хыçĕ – çурла.*

– Пăхăр-ха, мĕн ку? Автан.

– Автан хитре, капăр. Мĕн пур-ха автанăн? Автан мĕнле

авӑтать?

– Янраттарать (ҫӗнӗ сӑмах кӗртет), унӑн сасси ян каять. Автан янраттарса юрлать. Автан ҫинче сӑвӑ итлӗр:

**Ай, автан**

*Ай, автан, ылтӑн тура,*
*Вӗҫкӗн сухал, ҫуллӑ пуҫ!*
*Сӑмси пур – ӑйӑ пек,*
*Хӳри пур – качанлӑ.*
*Автан ҫӳрет килкартинче,*
*Чӗрнисемпе ҫӗре чавать,*
*Чӑх-чӗпсене йыхӑрать:*
*– Эй, чӑххӑмсем, чӗппӗмсем,*
*Ҫӗлӗк пуҫсем, тӗпеклисем,*
*Чӑпаррисем, саррисем,*
*Шуррисем, хурисем,*
*Кӑт-кӑт-кӑт, кӑт-кӑтик!*
*Пӗрчӗ тупрӑм,*
*Ылтӑн тупрӑм,*
*Килӗр кунта апата!* (В. Давыдов-Анатри)

– Автанӑн мухтанмалли мӗн пур? Унӑн сухалӗ еплерех, сӑмси, хӳри? (Воспитатель ачасене сӑвӑри сӑмахсемпе хуравлама хистет. Ӳкерчӗк ҫинче кӗлетке пайӗсене кӑтартса пырать)

Воспитатель сӑвва тепӗр хут каласа парать, ачасене пӗрле каласа пыма хистет.

Ҫитӗннӗ автансем кил хушшинче мӑнаҫлӑн, танлӑн ҫӳреҫҫӗ. Пӗчӗккисем вара урӑхларах тытаҫҫӗ хӑйсене. Мӗн каласси, ак итлӗр хӑвӑрах:

**Ик автан**

*Икӗ пӗчӗк сар автан*
*Тытӑннӑ вӑрҫма паян:*
*Эх, сӑхаҫҫӗ, эх, чаваҫҫӗ*
*Пӗр-пӗрне куҫран-пуҫран.*
*Илтӗм те патак – пӗрне*
*Хӑваларӑм кил енне... –*
*Мӗн пустуй ҫапӑҫмалла?*
*Тус-юлташлӑ пулмалла.* (А. Галкин)

Тем те пулса иртет картишĕнче. Питĕ тимлĕ пулмалла. Кунта тата мĕн сиксе тухнă?

**Пулăшу**

*Пысăк валашка ларать.*
*Шывне кам-ши хумхатать?*
*Кĕрсе ӳкнĕ чăх чĕппи,*
*Тухаймасть – çитмест тяппи!*

*Ун тавра кăт-кăтиклет,*
*Çаврăнать чĕп амăшĕ.*
*Çунатне усса çӳрет:*
*Эсĕ пулăшаймăн-ши?*

*Эп иртеттĕм çывăхран –*
*Чĕппе çăлтăм путасран* (В. Харитонов)

Чĕпсем ишме пĕлмеççĕ çав. Ачасем, астăватăр-и „Кăвакал чĕппипе Чăх чĕппи" юмаха? (Аса илеççĕ). Атьăр выляса пăхар çав юмаха.

**4-мĕш калаçу**
Н. Васанккан „Качака" сăвви

*Кирлĕ материал*: тетте-качака.
*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, пăхăр-ха пирĕн пата хăнана мĕн килнĕ. Паллаштарам сире. Ку – каччин-каччин качака. (Тетте-качака е ӳкерчĕк кăтартать, качака ячĕпе калаçма пулать).

– Мэ-э, эпĕ каччин-каччин качака, эсĕ кам пулатăн? (Педагог сассине улăштарса ачасемпе калаçма пуçлать).

– Сывлăх сунатăп, Маша. (Педагог ачана хирĕç хуравлама хистет – Эпĕ Маша. Ырă кун, каччин-каччин качака). (Малалла та çаплах).

– Пирĕн хăна питĕ илемлĕ вара. Пăхăр-ха, унăн сухалĕ мĕнлерех. Кĕнчеле вĕçĕ пек. Пăхăр-ха качака мĕн хăтланать? Вăрăм сухалне лăпăс-лăпăс суллать. Качакан

*Кĕнчеле вĕç сухалĕ*
*Лăпăс-лăпăс сулланать.*

Мăйракине сăнăр-ха тата, мĕнлерех вăл? – шĕп-шĕвĕр.

*Шĕп-шĕвĕркке мăйраки*
*Тăрăнассăн туйăнать.*

– Ачасем, эсир качака çинчен мĕн пĕлетĕр? Каласа парар хамăрăн хăнана.

– Çапла качака чарусăр та пулма пултарать. – Пахча алăкне хупмарăн пулсан качака купăстасăр хăварма пултарать. Тата мĕн юрататъ-ха вăл?

Никифор Ваçанккан „Качака" сăввине итлесе пĕлер çакна.

**Качака**

*Каччин-каччин качаки*
*Чарусăра пултарать:*
*Карта умĕн уткалать,*
*Хушăк витĕр пăхкалать*

*Кĕнчеле вĕç сухалли*
*Лăпăс-лăпăс сулланать.*
*Шĕп-шĕвĕркке мăйраки*
*Тăрăнассăн туйăнать.* (Н. Ваçанкка)

– Сире ку сăвă килĕшрĕ-и? Качакана та килĕшрĕ пулас – тимлĕ итлерĕ.

Педагог сăвва тепĕр хут калать, хайлав содержанийĕ майăн качакапа выляса пырать (карта умĕн пынине кăтартать, пăхкаланă пек тăвать...).

– Атьăр эпир качакана хамăр теттесен кĕтесне илсе кайса кăтартар. Карта тăвар-ха ун валли. (Тăваççĕ). Вăт çакăнта çӳреме пултарать каччин-каччин качака.

Педагог вылянă май сăвва тепре калать, ачасене йĕркесене каласа пĕтерме хистет

*Каччин-каччин ...(*ачасем вĕçлеççĕ - *качаки)*
*Чарусăра ... (пултарать)*
*Карта умĕн ... (уткалать)*
*Хушăк витĕр ...*

*Кĕнчеле вĕç сухалли ........*
*Шĕп-шĕвĕркке ...*
*Тăрăнассăн ... .*

Кăшт вылятăр-ха качака сирĕнпе. Воспитатель теттене ачасене парать. Вĕсем унпа вылянине сăнать.

### Пĕтĕмлетӳ занятийĕ
Чĕрчунсем çинчен çырнă сăвăсем

*Кирлĕ материал*: тетте автан, чĕрĕп, мулкач; куç кĕски, чĕр чунсем ӳкернĕ картинăсем.

*Заняти йĕрки.*

– Ачасем, пăхăр-ха манăн мĕнле картинăсем пур. Атьăр пĕрле пăхăпăр, ӳкерчĕкре мĕнсене ӳкернĕ, паллатăр-и?

– Кунта мĕн? Тĕрĕс, кушак çури. Ачасем, сирĕн килĕрсенче кушак çури пур-и? Лена, сирĕн кушак мĕн тĕслĕ? Кунта ӳкернĕ кушак çури мĕн тĕслĕ?

– Кушак çури пĕчĕк. Паллах, апат лайăх çисен вăл хăвăрт ӳсĕ. Кушаксем мĕн юратаççĕ, кам пĕлет?

– Эсир килте кушаксене мĕнле пăхатăр?

– Ачасем, кушак çури çинчен сăвă итлĕр-ха. Сăвă „Кушак çури" ятлă:

**Кушак çури**

*Кушак çури макăрса*
*Хăй выççине пĕлтерет*
*Ăна Верук васкаса*
*Тутлă яшка çитерет* (Ф. Иванов)

– Эпир чăрмантармăпăр кушак çурине, вăл тутлă яшка çитĕрех (воспитатель кушак çури тетти умне пĕчĕк турилкке лартса парать). Мĕнле ят парăпăр-ха эпир ăна?

– Юрĕ Мăркка пултăр, хитре ят. Мăркка çинчен сăвва тепĕр хут итлĕр. (Сăвва тепĕр хут вулать).

– Ай-уй, мĕн пулчĕ пирĕн кушак çурине? Тем, кайса пытанчĕ пирĕн пĕчĕк тус (теттене пытарать).

Ăнлантăм, ăнлантăм, пăхăр-ха мĕн килчĕ пирĕн пата?

– Йытă. Эпĕ ку йытта паллатăп. Вăл Кампур ятлă. Кампуртан хăрарĕ иккен пирĕн кушак çури. Ачасем, эсир пĕлетĕр-и, йытăсем ăçта пурăнаççĕ?

– Итлĕр-ха эпĕ сире Кампур çинчен сăвă вуласа парăп. Сăвă „Хам" ятлă, ăна Николай Карай çырнă.

**Хам**

*Виçĕм кун эп Кампура:*
*– Ку хитре хăма çуртра*
*Пурăнать-ши, – терĕм, –*
*Кам?*
*Вăл мана:*
*– Хам! – терĕ – хам* (Н. Карай).

– Килĕшрĕ-и сире, ачасем сăвă? Мĕнле ыйту пачĕ Николай Карай йытта?

– Йытă хуравĕ çинчен мĕн калăр?

– Урăхла та хуравлама пултарнă пулĕччĕ-ши вăл?

– Ку сăвă йăл кулă çуратать, çапла-и? Унпа ыттисене те паллаштарас килет.

– Ачасем, айтăр-ха кушак çурине каялла чĕнĕпĕр. Кампуртан хăрама кирлĕ мар. Вăл ырă йытă.

– Пĕç-пĕç-пĕç, Мăрккка, тух, на хăра. (Ачасем чĕнеççĕ).

– Акă вăл, пĕчĕк Мăркка.

– Чĕр чунсен тĕнчи çавăн пек вăл, ачасем. Пĕчĕккисем, пысăккисенчен сыхланаççĕ.

– Ачасем эсир мĕнле шутлатăр, кушакран мĕн те пулин хăрать-и? Эпĕ сире тепĕр сăвă вуласа паратăп. Тимлĕ итлĕр. Ăна Петр Эйзин çырнă.

*Шăши хăрать кушакран,*
*Кушак хăрать йытăран,*
*Йытă хăрать кашкăртан,*
*Кашкăр хăрать упаран.*
*Упа-упа, утаман,*
*Хăрамасть вăл никамран.* (П. Эйзин)

– Упа – пирĕн вăрмансенчи чи пысăк чĕр чунсенчен пĕри. Мĕн каланă ун çинчен сăвăра? Воспитатель ачасене аса илме пулăшать:

*Упа-упа, утаман,*
*Хăрамасть вăл никамран.*

– Мĕнле терĕн-ха, Коля? (Уйрăмшарăн калаттарать).

– Ку сăвă питĕ хăвăрт асра юлать. Эпĕ сире картинăсем кăтартăп. Эсир вара сăвă йĕркисене аса илсе каласа пырăр. (Воспитатель шăши, кушак йытă, кашкăр, упа ӳкернĕ картинăсене

черечĕпе пĕрин хыççăн теприне кăларса пырать: иккĕмĕшне кăларсан малтанхине „тартать").

– Маттур, питĕ хăвăрт астуса юлтăр. Эсир „Упа патĕнче вăрманта" вăййа пĕлетĕр-и? (У медведя во бору) Атьăр вылятпăр.

*Упа тухрĕ вăрамана*
*Çырла-мăйăр пуçтарма,*
*Хуртсен пылне вăралама.*
*Хускалмасăр ан юлăр,*
*Атту эсир тытăнăр! –*
*Ак ун пылĕ,*
*Ак çырли,*
*Акă шĕшкĕ мăйăрри.*
Ачасем выляççĕ.

### Тăваттăмĕш эрне. Ачасем çинчен çырнă калавсем

Ку эрнере ачасем çинчен çырнă калавсемпе паллаштаратпăр.

*Ĕç тĕллевĕ:* ачасене А. Ыхран калавĕсемпе паллаштарасси; вĕсене ăнланма пулăшасси; хайлавсен содержанийĕ тăрăх йĕркеленĕ калаçăва хутшăнма, харкам шухăшне палăртма вĕрентесси.

#### 1-мĕш калаçу

А. Ыхран „Ева садике каять" калавĕ

*Ĕç йĕрки.*

– Паян эпĕ сире пĕр хĕр ачапа паллаштаратăп. Вăл Ева ятлă. Ева пĕчĕк-ха. Унпа мĕн пулса иртнине ашшĕ каласа парать. Эпир паян Ева садике çÿреме пуçлани çинчен пĕлĕпĕр. Калав „Ева садике каять" ятлă.

#### Ева садике каять

*Хĕрĕм виççĕ тултарчĕ. Ана паян ача садне ăсататпăр. Ашшĕ — сулахай аллинчен, амăшĕ сылтăмминчен çавăтнă.*

*Ача сачĕн алăкĕ çине урлă хăлхаллă Чебурашкăна ÿкерсе хунă.*

*Ева сасси ахрăм пек илтĕнет:*

*– Сывă-и, Чебурашка?*

*Картишĕнчи пĕчĕк кăна хула башни тăррин сап-сарă шăвăç автан ларать. «Ки-лĕ-рех!» — тесе кăшкăрать.*

*– Сывă-и, Автан тус?*

*– Сывă-и, Ева?*

*Хĕрĕм воспитательница аллине куçать. Унпа пĕрле амăшĕ те юлать. Хĕрĕм кусĕнче куççуль. Хам та хурланатăп.*

*Пĕчĕкскер ашшĕне лăплантарать:*

*– Эс ан макăр, каçхине килех пыратăп.*

*Вăл мана алăкран, кайран кантăкран алă сулса ăсатса ярать.*

*Эпĕ те алă сулатăп.*

*– Эс ан макăр, каçхине килех пыратăп...* (А. Ыхра)

– Ачасем, сире Ева килĕшрĕ-и?

– Ева сăпайлă хĕр ача-и?

– Çакă мĕнрен курăнать?

– Çапла, Ева Чебурашкăна та, хула башни тăрринчи сап-сарă шăвăç автана та сывлăх сунать.

– Ашшĕпе уйрăлнă чух мĕн пулчĕ тата?

– Çапла, Ева хурланчĕ, ун куçĕ куççулленчĕ.

– Анчах та ашшĕ те хурланнине курсан Ева хăйне хытарчĕ. Ăна лăплантарма пикенчĕ. Мĕн терĕ Ева ашшĕне?

– Тĕрĕс, „*Эс ан макăр, каçхине килех пыратăп*", – терĕ Ева.

– Мĕнле маттур хĕр ача Ева. Унăн никама та пăшăрхантарас килмест.

– Ачасем, эсир мĕнле шутлатăр, садикре кама та пулин кўрентерĕ-ши Ева?

– Эпĕ те çаплах шутлатăп. Ева пуринпе те туслашĕ, кăмăллă вылĕ. Вăл кăмăллă хĕр ача.

Воспитатель ачасене хăй мĕнле пĕрремĕш хут садике кайнине „аса илсе" каласа парсан аван. Ачасене те аса илме ыйтать. Тен ушкăнра садике çўреме тин çеç çўреме пуçланисем пур. Вĕсене хăйсем мĕн туйнине калаттарсан аван.

– Çапла, çăмăл мар аннепе аттерен вăхăтлăха пулсан та уйрăлма. Садикре эпир туслă , пĕр-пĕрне кўрентермесĕр пурăнăпăр. Вăйă-кулăра, ĕçре вăхăт сисĕнмесĕрех иртет. Каçхине вара каллех хамăр çывăх тăвансемпе пĕрле пулăпăр. Халĕ сире выляма чĕнетĕп.

**2-мĕш калаçу**

А. Ыхран „Автобус, Ева тата дыня" калавĕ

*Ĕç йĕрки.* Ачасем, сирĕн мĕн те пулин питĕ туянасси килсен

эсир мĕн тăватăр? Çапла, паллах атте-аннерен ыйтма пулать. Вĕсем сире мĕн кирлине веçех илсе пама хатĕр. Анчах та аслисем те яланах мĕн ыйтнине тивĕçтерме пултараймаççĕ. Укçа-тенкĕ енчен хĕсĕкрех чухне çапла пулма пултарать. Пĕлетĕр-и, ыйтнă япалана илеймесен сирĕн кăмăл мĕнле хуçăлать, аслисем те çавăн пекех кулянаççĕ. Вĕсем сире питĕ юратаççĕ вĕт. Эпĕ пĕр ачана пĕлетĕп. Вăл нихăçан та анне, мана çакна илсе пар-ха, çакна туян-ха тесе йăлăнмасть. „Çакна илсен аван та, анне, укçа пулсан туянăпăр, юрать-и", – тесе çеç калать. Эпĕ Ева пирки калатăп. Эпир унпа ĕнер паллашрăмăр. Ас тăватăр пулĕ? Ева сăпайлă, кăмăллă хĕр ача. Паян сирĕнпе ун çинчен малалла вуласа пĕлĕпĕр. Калавĕ „Автобус, Ева тата дыня" ятлă.

### Автобус, Ева тата дыня

*Çур сехет ытла автобус кĕтсе тăратпăр. Автобус çук та çук. Шăнса кӳтсе каймалла – юрать, вунă-вун пилĕк утăмра дыня сутаççĕ. Ева, кăкарса хунă пек, тек çавăнталла йăкăртатать:*

*– Атте, атя дыня кайса куратпăр.*

*Курса таврăнатпăр та – вăл каллех сутуçă патнелле çаврăнать:*

*– Атя тепре дыня кайса куратпăр...*

*Тин çитсе чарăннă автобуса хăрах алăпа – Евăна, тепринпе дыня йăтса кĕретĕп...* (А. Ыхра)

– Ачасем, эсир мĕнле шутлатăр – мĕншĕн Ева кăкарса хунă пек дыня патне *йăкăртатать*? Чăнах та пăхса тăранаймасть-ши ĕнтĕ?

– Мана та çавăн пек туйăнать. Евăн дыня тутанса пăхасси килнĕ пуль. Туянма ыйтма хăяйман ĕнтĕ сăпайлă хĕр ача. Питĕ килĕшет мана Ева. Нимĕнле йăлăнтарас кăмăл та çук ун. Эсир мĕнле те, эпĕ йăлăнтармăшсене юратмастăп. Акă сире пĕр сăвă вуласа парам-ха. Вăл „Юнтармăш" ятлă. (Сăвăри *Владик* ята *ачам* сăмахпа улăштарнă)

*Мĕн çитмест сана паян,*
*Тутуна тăсса тăран?*
*Пĕремĕк патăм –Эс илмерĕн,*
*„Ачам", - терĕм. Эс чĕнмерĕн.*

*Ах юнтармăш! Хăрататăп*

*Тетӗн-и-ха? Эп пӗлмен.*

*Ачам эс халех капла та...*

*Кам пулать санран ӳссен?*

– Ачасем, пирӗн ушкӑнра ҫакӑн пек юнтармӑшсем ҫуккишӗн эпӗ питӗ савӑнатӑп. Ева ҫинчен вара эпир татах вулӑпӑр.

**3-мӗш калаҫу**

А. Ыхран „Ҫерҫи ҫумӑрӗ" калавӗ

Ёҫ йӗрки:

– Ачасем, эсир мӗнле-мӗнле ҫумӑр пӗлетӗр?

– Вӑт ыйту тӑк ыйту ку. Куратӑп-ха шухӑша путрӑр. Ҫумӑр ҫумӑрах ӗнтӗ вӑл, йӗпе ҫумӑр, шывлӑ ҫумӑр. Эпӗ ахаль ыйтмарӑм, ачасем. Эпир паллакан Ева хӗр ача ҫерҫи ҫумӑрне пӗлет.

– Интереслӗ-и, сире? Мана та. Айтӑр-ха хӑвӑртрах вулар. Мӗнле ҫерҫи ҫумӑрӗ ҫинчен калаҫу пырать ку калавра? Анатолий Ыхра. Ҫерҫи ҫумӑрӗ.

**Ҫерҫи ҫумӑрӗ**

*Тулта хӗвел пӑхать. Ҫенӗк тӑрринче вара, хӗҫтимӗр ҫинче, — шӑпӑр-шӑпӑр, шӑпӑр-шӑпӑр!..*

*Ҫумӑр пуль тесе кил картине чупса тухатпӑр. Ҫерҫисем-мӗн. Чӑлтти-чалтти, чӑлтти-чалтти сикеҫҫӗ.*

*Ева пирӗн хыҫранах тухнӑ.*

*- Ҫерҫи ҫумӑрӗ, — тет.*

*Ҫакна илтнипе ҫерҫисем тата хытӑрах хӗпӗртеҫҫӗ: чӑлтти-чалтти, чӑлтти-чалтти сикеҫҫӗ.* (А. Ыхра)

– Вӑт мыскара! Пӗлтӗр-и Ева мӗне ҫерҫи ҫумӑрӗ тет?

– Мӗншӗн-ха ҫерҫисем хӗҫтимӗр ҫинче чӑлтти-чалтти сикнине Ева ҫерҫи ҫумӑрӗ тет?

– Ҫапла, ҫумӑр пӗрчисем хӗҫтимӗр ҫине шӑпах ҫерҫисен ташшин шавӗ евӗрлӗ шӑпӑртатаҫҫӗ.

– Куратӑр, Ева хушӑран култарса илет. Ҫерҫи ҫумӑрӗ тени ҫерҫисене те килӗшрӗ вӗт. Ҫакна мӗнле кӑтартрӗс вӗсем.

– Ҫапла, „*Ҫакна илтнипе ҫерҫисем тата хытӑрах хӗпӗртеҫҫӗ: чӑлтти-чалтти, чӑлтти-чалтти сикеҫҫӗ*", – тенӗ калавра.

Ҫерҫисем ҫинчен эсир мӗн пӗлетӗр? Ҫерҫи пулса тӑрар мар-и,

çерçи çумăрне çутарар мар-и?

### 4-мĕш калаçу

А. Ыхран „Ай, ÿкетĕп!" калавĕ

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене Ева çинчен малалла итлеме сĕнет. Паянхи калав „Ай, ÿкетĕп!" ятлă.

– Ачасем, сирĕн шутпа ку калав мĕн çинчен пулĕ? Итлĕр.

### Ай, ÿкетĕп!

*Ева пукан çине хăпарса тăрать те аллисемпе сулкаласа:*

*– Ай, ÿкетĕп! Ай, ÿкетĕп! – тет.*

*Манăн ăна тытса урайне ямалла. Хĕрĕм каллех çÿле хăпарса тăрать те:*

*– Ай, ÿкетĕп! Ай, ÿкетĕп! – тет.*

*Кайăк чĕпписем вĕçме çапла вĕренеççĕ пуль.* (А. Ыхра)

– Ева паян мĕн тăвать-ха?

– Атьăр Ева пулса вăл мĕн тунине туса кăтартар. Эпĕ вара ун ашшĕ пулăп.

Выляççĕ.

### Пĕтĕмлетÿ занятийĕ

*Заняти тĕллевĕ*: паллашнă хайлавсене аса илесси, ачасене хайлавсен содержани тăрăх йĕркеленĕ вăйăсем выляттарма хавхалантарасси.

*Кирлĕ материал:* пукане, тетте-кушак, ÿкерчĕксем.

*Заняти йĕрки.* Воспитатель ачасене эрне хушшинче вуланă калавсене аса илтерет. Ытларах килĕшнисем çинче чарăнса тăрать. Çав калавсен содержанийĕ тăрăх ÿкерме-сăрлама чĕнет. Ачасен пултарулăхне кура маларах сăрламалли эскизсем хатĕрлесе хурсан аван. Тĕслĕхрен çерçисем ÿкернĕ хут (ачасем çерçисен ташшине вĕсен ура йĕррисене палăртса ÿкереççĕ), е автобус чарăнăвĕпе юнашар – киоск сентри – унта ачасем дыня „купаласа" хураççĕ, е тата пĕрремĕш калав тăрăх чебурашкăн урлă хăлхисене ÿкереççĕ.

## ДЕКАБРЬ

### Пĕрремĕш эрне. Хĕле сăнлакан сăвăсем

*Ĕç тĕллевĕ:* ачасене сăвă йĕркисенче пытаннă сăнара курма пулăшасси, поэзи туйăмне аталантарасси, калаçăва хутшăнас пултарулăха амалантарасси.

### 1-мĕш калаçу

В. Эктелĕн „Юр" сăввипе паллашатарасси

*Ĕç йĕрки.* Сăвва урамра уçăлса çӳренĕ чух, юр çунине сăнаса тăнă май каласан аван. Сăвă ятне, ун авторне калама манмалла мар: „Ачасем, халĕ эпĕ сире Василий Эктел çырнă „Юр" сăввине каласа парăп" (воспитателĕн сăвва ăссăн пĕлсен аван).

**Юр**

*Вĕлтĕр-вĕлтĕр*
*Вĕлкĕшеççĕ*
*Лĕпĕшсем.*

*Шурă чĕнтĕр*
*Пĕркенеççĕ*
*Урамсем.*

*Ушкăн лĕпĕш*
*Анса ларчĕ*
*Ал çине.*

*Сивĕ сĕлкĕш*
*Пулса тарчĕ*
*Çĕр çине.*

*Лĕпĕш мар-мĕн,*
*Вĕлтĕр-вĕлтĕр*
*Юр çăвать.*

*Эп тытарăм –*
*Шăллăм пĕлтĕр:*

*Хĕл ларать* (В. Эктел)

– Юр пĕрчисене *лĕпĕшсем* тенĕ сăвăра. Сăвăç мĕншĕн çапла каланă-ши?

– Лĕпĕшсем пекех çав ĕнтĕ. Çавăн пекех вĕлтĕртетсе, сывлăшра çăмăллăн вĕçеççĕ. Лĕпĕшсем пекех хитре тата, çапла вĕт, ачасем? Эпир сăнарăмăр ĕнтĕ вĕсене. – Хитре.

*Ушкăн лĕпĕш*
*Анса ларчĕ*
*Ал çине.*

– Анчах та эпир юр пĕрчисене мĕншĕн лĕпĕшсем тесе калаймастпăр?

Мĕн тенĕ сăвăра, аса илĕр?
*Ушкăн лĕпĕш*
*Анса ларчĕ*
*Ал çине.*

*Сивĕ сĕлкĕш*
*Пулса тарчĕ*
*Çĕр çине.*

– Лĕпĕш ал çине ларсан сивĕ сĕлкĕш пулса çĕр çине тармасть. Юр, юр çăвать! Хĕл ларать...
*Шурă чĕнтĕр*
*Пĕркенеççĕ*
*Урамсем.*

– Хитре урамра. Шурă чĕнтĕрне сирсен мĕн курма пулать? Воспитатель ачасемпе тĕпчев ĕçне пуçарса ярать. Урама тухсан юра сирсе мĕн улшăннине сăнаççĕ. Хурт-кăпшанкă шыраççĕ.

## 2-мĕш калаçу

Александр Галкинăн „Çитрĕç сивĕсем", Н. Шелепин „Юр" сăввисем

*Кирлĕ материал*: хĕл çинчен ӳкерчĕксем, мамăк ӳкерчĕкĕ, çип çине тыттарнă хутран (салфеткăран) касса кăларнă юр пĕрчисем (е вата).

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене хĕле сăнлакан ӳкерчĕке (ӳкерчĕксене) пăхма чĕнет.

Ӳкерчĕк тăрăх, педагог ыйтăвĕсене хуравласа ачасем хĕл ҫитнине ҫирĕплетеҫҫĕ, хĕл паллисене палăртаҫҫĕ.

Воспитатель ҫапла пĕтĕмлетет:

– Ҫапла, ачасем. Хĕл ларчĕ. Ҫанталăк сивĕтрĕ. Мĕнле каланăччĕ В. Эктелĕн сăввинче?

*Вĕлтĕр-вĕлтĕр*
*Вĕлкĕшеҫҫĕ*
*Лĕпĕшсем.*

*Шурă чĕнтĕр*
*Пĕркенеҫҫĕ*
*Урамсем.*

Воспитатель шухăша малалла тăсса: Йывăҫем ҫара. Пĕтĕм тавралăх шап-шур юр айĕнче. Ачасем, эпĕ сире Александр Галкин сăвăҫăн „Ҫитрĕҫ сăвăсем" ятлă сăввине каласа парас тетĕп.

**Ҫитрĕҫ сивĕсем**
*Ҫитрĕҫ сивĕсем,*
*Шăнчĕҫ пĕвесем.*
*Мамăк пек шап-шур*
*Ӳкрĕ кăпăш юр.*

*Выртрĕ ҫĕр вара*
*Сывăрма тинех,*
*Сивĕ ҫапасран*
*Тăлăп витĕнсех.* (А. Галкин)

– Ачасем, сăвăра юр ҫинчен мĕнле каланă? (Мамăк пек шап-шур, кăпăш юр). Мамăк, акă ҫак вата пек. Ăна кăнтăрта, ăшă ҫĕрте ҫитĕнтереҫҫĕ. Кăтартам-ха сире (Ҫак ӳкерчĕке кăтартать).

– Ачасем, ҫак йĕркесене тепре итлĕр-ха:
*Выртрĕ ҫĕр вара*
*Сывăрма тинех,*
*Сивĕ ҫапасран*
*Тăлăп витĕнсех.*

– Сире нимĕн те тĕлĕнтермерĕ-и? Ҫапла, ҫĕр – чĕрĕ ҫын пекех, „сывăрма" выртать. Утиялĕ мĕн-ши тата, сивĕ ҫапасран ҫĕр мĕнпе витĕннĕ? Тăлăп тесе мĕне каланă кунта?

– Ачасем, чăнах та вĕт: шурă юр шурă тăлăп пекех витсе

хурать çĕре. Çывăрать ĕнтĕ вăл халь çуркуннеччен шурă юр айĕнче. Юр пĕрчи вăл пĕчĕк. Акă пăхăр эпĕ мĕнлине. (Салфеткăран касса кăларма пулать, е вата усă курма пулать).

– Çакăн пек юр пĕрчисем пĕтĕм таврана хуплама пултарнă! Нумаййăн çав вĕсем! Çăмăл юр пĕрчи, çил ăçта хăвалать – çавăнта вĕçет. Вĕлтĕртетет, çаврăнать. – ташлать тейĕн. Итлĕр эпĕ сире юр çинчен сăвă вуласа парам:

**Юр**

*Эпир, юрсем, пит çăмăл,*
*Çил вĕрнине итлетпĕр,*
*Вĕлтĕртетсе, çаврăнса,*
*Сиксе, вĕçсе çӳретпĕр.*

*Çил-тăвăлтан хăраса*
*Таçта-таçта çитетпĕр.*
*Ăçта çитнĕ, вăл тĕле*
*Шурă чаршав витетпĕр.*

*Пирĕн ĕмĕр вăрăм мар,*
*Ăна лайăх пĕлетпĕр.*
*Хĕвел хĕрте пуçласан*
*Эпир часах пĕтетпĕр.* (Н. Шелепи)

Воспитатель пĕр строфине анчах вулама пултарать.

Ачасене ташлама чĕнет. Кашнине юр пĕрчи çыхнă çип парать. Сăввăн пĕрремĕш строфине вулать, ачасем ташлаççĕ. Илемлĕ кĕвĕ ярсан аван.

Ачасен кăмăлне, хайсене мĕнле туйнине кура Наталья Сарманаевăн „Эпĕ юр пĕрчи пултăм" хайлавăн сыпăкне аса илме пулать.

**Эпĕ юр пĕрчи пултăм**

*... Мана (Хĕл мучи) урама илсе тухрĕ те эпĕ хам пĕчĕкленнине сисрĕм, пĕчĕкленнĕçемĕн пĕчĕкленсе пыратăп, юр пĕрчи пысăкăш çеç тăрса юлтăм. Тав тума та ĕлкĕреймерĕм, вăйлă çил тухрĕ те мана вĕçтере пуçларĕ. Вĕçетĕп-çаврăнатăп, ытти юр пĕрчисемпе çапăнатăп, çапах вĕçетĕп. Вĕçе-вĕçе тăван киле çитрĕм. Кушак пӳрте чупса кĕретчĕ, шăпах ун хӳри çине ӳкрĕм, вăл нимĕн те сисмерĕ, малалла чупса кайрĕ. Хаяр йытă сăмси çине лартăм та,*

*сăмсинчен чĕпĕтсе илтĕм, ыратнипе нăйкăшсах ячĕ, урипе хыçса илчĕ.*

*Будильник шăнкăртатрĕ, эпĕ вăрантăм. Шел, тĕлĕкре çеç юр пĕрчи пулса вĕçме пулать-мĕн. Манăн вара чăннипех юр пĕрчи пулса тĕнче курса çаврăнас килет.* (Н. Сарманаева)

Ачасене хăйсен туйăмĕсене ӳкерсе кăтарма ыйтма юрать. Тĕрлĕ материал сĕнсен аван (гуашь, фломастер).

**3-мĕш калаçу**

Ю. Мишшин „Хăрамастăп сивĕрен” сăвви

*Кирлĕ материал:* ачасен вăййисене сăнлакан ӳкерчĕксем.

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене ӳкерчĕксене сăнама сĕнет. Унта ачасен çулталăкăн тĕрлĕ вăхăтĕнчи (хĕлле, çуркунне, кĕркунне, çулла) вăййисене ӳкернĕ. Воспитатель ачасемпе ӳкерчĕксенче мĕн ӳкерни çинчен калаçать.

– Ачасем, итлĕр-ха, эпĕ сире сăвă вуласа парăп. Сăвăра каланине хăш ӳкерчĕкре сăнланă, сăнанăр-и?

**Хăрамастăп сивĕрен**

*Сивĕрен те хăрамастăп,*
*Урама тухса чупатăп.*
*Эп текех пĕчĕк мар,*
*Эп хăравçă та мар.*

*Хĕл Мучи пите-куçа*
*Чĕпĕтет те чĕпĕтет.*
*Кĕрĕк аркине уçать,*
*Пилĕкне шăнтам-ха тет.*

*Хăрамастăп сивĕрен*
*Пурпĕрех.*
*Ярăнатăп сăрт çинчен*
*Пурпĕрех.*
*Çунашка çине ларатăп,*
*Çил пек вĕçтерсе анатăп.*
*Çил ачи хăлхаран*
*Шăхăрать.*

*Пит-куçран та майран*
*Тăрмалать.*
*Пĕр-пĕччен пулсассăн та,*
*Çав тери шăнсассăн та*
*Урамран тарса халех*
*Эп кĕместĕп пурпĕрех.* (Ю. Мишши).

– Хăш ӳкерчĕкри сюжет çак сăвă содержанипе пĕр килет?

– Мĕншĕн çапла тесе шутлатăр?

– Ачасем, вуланă сăвăри харсăр ача хĕр ача, е ар çын ача пек туйăнать сире?

– Тем, хам та иккĕленетĕп. Сăввине вара Юхма Мишши çырнă. Вăл „Хăрамастăп сивĕрен” ятлă. Темле пулсан та чăнах та харсăр, чăтăмлă ача вăл. Вăл чăтăмли мĕнрен курăнать? Тепре итлĕр-ха:

*Хĕл Мучи пите-куçа*
*Чĕпĕтет те чĕпĕтет.*
*Кĕрĕк аркине уçать,*
*Пилĕкне шăнтам-ха тет.*

– Çук, ача сивĕрен хăрамасть. Çилĕ тата мĕн хăтланать!:

*Çил ачи хăлхаран*
*Шăхăрать.*
*Пит-куçран та майран*
*Тăрмалать.*

– Эсир хĕлле мĕнле выляма юрататăр?

Ачасене хăйсен хĕллехи вăййисем çинчен каластарать. Юлашкинчен сăвва тепĕр хут вулать.

## 4-мĕш калаçу

З. Александрован „Савăнăçлăн чыслатпăр” сăвви

*Кирлĕ материал:* чăрăш ӳкерчĕкĕ, ăна илемлетмелли ерешсене тетте.

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене Çĕнĕ çул çывхарни çинчен аса илтерет, чăрăш илемлетме чĕнет. Пысăк хут çине чăрăш ӳкерсе хунă. (Ăна мольберт çине вырнаçтарсан аван). Кашнин валли чăрăша илемлетмеллисене каснă: ялавсем, хăмпăсем, тĕрлĕ тетте, çăлтăр. Ĕçе аппликаци туса пурнăçлама пулать – ачасем чăрăша илемлетсе ун çине теттесем çыпăçтараççĕ. Чăрăшĕ çине касса

шăтăксем тусан теттесене тăхăнтара-тăхăнтара лартма пулать. Ачасем ӳкерме хавас пулсан ӳкерсе те илемлетме сĕнме пулать.

Ĕçе пĕтерсен воспитатель ачасен илемлĕ чăрăшсемпе киленет:

*Теттесем тем чухлĕ*
*Туратсем çинче.*
*Ялкăшать çут çăлтăр*
*Йывăç тăрринче.*

Воспитатель чăрăш çинчен сăвă итлеме сĕнет (юрласа парсан та аван).

**Савăнăçлăн чыслатпăр**

*Пĕчĕкçĕ чăрăша*
*Сивĕ пуль хĕлле?*
*Çавăтса килтĕмĕр*
*Вăрмантан киле.*
*Мăн зала лартрăмăр*
*Ешĕл чăрăша.*
*Йăлт капăрлатрăмăр*
*Пурте тăрăшса.*
*Теттесем тем чухлĕ*
*Туратсем çинче.*
*Ялкăшать çут çăлтăр*
*Йывăç тăрринче.*
*Ун тавра утатпăр,*
*Ай юрла-юрла.*
*Савнăçлăн чыслатпăр*
*Ырă Çĕн çула.* (З. Александрова)

– Ачасем, мĕн турăмăр эпир чăрăша?

– Йăлт капăрлатрăмăр, çапла-и? Калаттарать:

*Йăлт капăрлатрăмăр*
*Пурте тăрăшса.*

– Мĕнле халь пирĕн чăрăш? (Теттисем мĕнлине, мĕн хыççăн мĕн çакăнса тăнине каласа – аялти туратсенчен пуçласа çӳле çити сăнлама пулать.) Юлашкинчен пĕтĕмлетсе калать, ачасене те калаттарать:

*Теттесем тем чухлĕ*
*Туратсем çинче.*
*Ялкăшать çут çăлтăр*

*Йывăç тăрринче.*

Чăрăш тавра утма чĕнет („Чăрăша" пĕчĕк сĕтел е пукан çине вырнаçтарма пулать). Сăвва-юрра тепĕр хут вулать (юрлать), ачасем пулăшаççĕ.

**Пĕтĕмлетÿ занятийĕ**

*Заняти тĕллевĕ:* Ачасене хĕле сăнлакан сăвăсене аса илме пулăшасси, „Хĕл мучи" сăвва асра хăварма пулăшасси.

*Кирлĕ материал:* хĕле сăнлакан ÿкерчĕксем.

*Заняти йĕрки.* Ачасен умĕнче хĕле сăнлакан тĕрлĕ ÿкерчĕк.

– Ачасем, сăнăр-ха епле илемлĕ ÿкерчĕксем! Пăхатăп та вĕсем çине сăвă йĕркисем аса килеççĕ: (воспитатель Николай Теветкелĕн сăввин сыпăкне аса илет)

*Вăрмансем çаралчĕç,*
***Уй-хирсем хура,*** (интоципе уйăрса калать)
*Кайăк-хур саланчĕ*
*Ăшă кăнтăра.*

Воспитатель ачасем çине пăхса:

– Тем, тĕрĕс мар каларăм-им эпĕ? Ăнланаймарăм-ха – çулталăкăн хăш вăхăтне сăнлаççĕ вара ку ÿкерчĕксем? Çапла – хĕле. Эпĕ те хĕл çинчен калакан сăвва вуларăм-çке?

– Мĕнле тимлĕ эсир, ачасем, маттур. Чăнах та тĕрĕс пулмарĕ-çке ман. Урăх сăвă аса илмеллеччĕ. Николай Симунов сăввине итлĕр. Сивĕ.

**Сивĕ**

*Урамра шап-шурă, сивĕ*
*Чĕпĕтет пите-куçа.*
*Пăр айне пытанчĕ шывĕ,*
*Тинех тупрĕ канăçа.*

*Хĕрхенсе пăхса тăратăп*
*Урамри йыт çурине.*
*Çăматта тухса паратăп,*
*Тек ан шăнттăр урине.* (Н. Симунов)

– Ачасем, эпир хĕлле мĕнле тум тăхăнатпăр?

– Çапла, ăшă калпак, кĕрĕк, хулăн йĕм-колготки, чăлха-нуски,

çăм ată тăхăнатпăр. Мĕншĕн урама халь çÿхе кĕпепе тухма çук?

– Тĕрĕс, *сивĕ чĕпĕтет пите куçа.* Сăвăра каланă урамри йытă питех аптрамĕ пулĕ? Сăвăри ача мĕн тухса парасшăн ăна?

– Çăматă кирлех-ши йытта?

– Çапла, йытă хулăн çăмпа витĕннĕ. Унăн вити йĕркеллĕ пулсан, хырăмĕ тутă пулсан, йытă сивĕре те аптрамĕ. Пире вара сивĕ самаях чĕпĕтет. Ачасем, сире сивĕн ĕçĕсем çинчен тепĕр сăвă вуласа парăп. Тимлĕ итлĕр.

**Хĕл Мучи**

*Пăрланатарчĕ шывсене,*
*Шăнтса лартрĕ çулсене.*
*Мамăк юр вăл çутарать,*
*Çил-тăман та кăларать.*

*Тытса пăхрĕ сăмсана,*
*Хыпашларĕ хăлхана,*
*Чĕпĕтесшĕн пÿрнене,*
*Кăтартасшăн хăватне.*
*Туслă унпа çил ачи,*
*Ячĕ унăн – ...* (воспитатель малалла калама тăхтаса тăрать, ачасем вĕçлессе кĕтет) *Хĕл Мучи.* (Н. Пăрчăкан).

– Ку сăвăра сивве Хĕл Мучи тенĕ.

– Хĕл Мучи тата мĕн турĕ? Воспитатель хăй пуçласа ачасене вĕçлеттерет: Шывсене ... (пăрлантарчĕ), çулсене ... (шăнтса лартрĕ).

– Тата мĕн тăвать Хĕл Мучи? Мамăк юр вăл ... (çутарать), çил-тăман та ... (кăларать).

– Мĕн тунине калăр. Тытса пăхрĕ ... (сăмсана), хыпашларĕ ... (хăлхана).

– Мĕн тăвасшăн аса илĕр. Чĕпĕтесшĕн ... (пÿрнене).

Ку сăвва Нина Пăрчăкан сăвăç çырнă. Вăл Хĕл Мучи ятлă. Эпĕ сире сăвва тепĕр хут вуласа парăп.

Сăввăн кашни йĕркине хусканусемпе çыхăнтарма пулать. Çакă сăвва хăвăрт ас туса юлма пулăшĕ.

| | |
|---|---|
| *Пăрланатарчĕ шывсене,* | Аллисене умнелле тÿп-тÿрĕ (пăр) тытаççĕ, унтан хумсем (шыв) вылятса илеççĕ. |
| *Шăнтса лартрĕ çулсене.* | Сылтăм чышкине сулахай ал |

| | |
|---|---|
| | тупанне çапаççĕ, алă тӳрчĕсем çӳлелле тытса умра пĕрлешеççĕ. |
| *Мамăк юр вăл çутарать,* | Пӳрнисене вылятса аллисене çӳлтен аялалла антараççĕ. |
| *Çил-тăман та кăларать.* | Пӳрнисене сарса вылятса илеççĕ. |
| *Тытса пăхрĕ сăмсана,* | Сăмсине тытса пăхаççĕ. |
| *Хыпашларĕ хăлхана,* | Хăлхисене хыпашлаççĕ. |
| *Чĕпĕтесшĕн пӳрнене,* | Пĕр ал пӳрнисемпе теприн пӳрнисене чĕпĕтеççĕ. |
| *Кăтартасшăн хăватне.* | Ал мускулĕсене кăтартаççĕ. |
| *Туслă унпа çил ачи,* | Алăсем пĕр-пĕрне ыталаса илеççĕ. |
| *Ячĕ унăн – Хĕл Мучи.* | Алăсене ик еннеле сараççĕ. |

## Иккĕмĕш эрне. Ю. Силэм хайлавĕсем

### 1-мĕш калаçу

Ю. Силэмĕн „Кантăка кам тĕрленĕ?” калавĕ

*Ĕç йĕрки.*

– Эпир паян сирĕнпе ирхине кантăк çинчи тĕлĕнмелли тĕрĕсене сăнарăмăр. Мĕн кăна асăрхамарăмăр унта! Аса илер-ха.

– Çапла, тĕрлĕ чечек нумайччĕ, нихçан курман чĕр чунсем.

– Юлия Силэм çырнă калаври пĕчĕк Марине те кантăк çинчи ӳкерчĕксене курсан питĕ тĕлĕннĕ. Унăн çак эрешсене кам тунине пĕлес килнĕ. Итлес килет-и сирĕн çакăн çинчен? Калав ячĕ те çавăн пекех – „Кантăка кам тĕрленĕ?” Ăна Юлия Силэм çырнă. Итлĕр.

### Кантăка кам тĕрленĕ?

*– Асатте, асатте, пăх-ха, каçхине пирĕн кантăк çине такам тĕрĕ тĕрлесе хăварнă. Ĕнер çеç нимĕн те çукчĕ. Йăмрасем, пахчари улмуççисем ӳкернĕ, – тĕлĕнчĕ пĕр ирхине чӳрече умĕнче тăракан пĕчĕк Марине.*

*– Аçта-ха, ăçта? – мăнукĕ патне пырса пăхрĕ аслашшĕ. – Кам хăтланнă-ха ăна? Епле тĕлĕнтермĕш! Атя урама тухса пăхар. Хĕл Мучирен ыйтăпăр.*

*Сивĕ сывлăшра Маринен пичĕ часах хĕрелчĕ.*

*– Ай, сивĕ, – аслашшĕ çумнерех пăчăртанчĕ хĕрача. – Кантăка кам тĕрленине Хĕл Мучирен хăвăртрах ыйт-ха.*

*– Юрать, юрать. Халĕ пӳрте кĕрĕпĕр, – терĕ аслашшĕ*

*лăпкăн, ним пулман пекех.*

*– Халĕ ху çине тĕкĕр витĕр пăхса ил, – сĕнчĕ аслашшĕ мăнукне. – Сана та хĕрлĕ сăрăпа сăрласа янă авă. Хĕл Мучин ĕçĕ вăл. Кантăка та вăлах илемлетнĕ.* (Ю. Силэм)

– Ачасем, сире ку калав килĕшрĕ-и?

– Марине кантăк çинче ирхине мĕн курчĕ?

– Çапла, такам тĕрлесе хăварнă тĕрĕре Марина йăмрасем, пахчари улмуççисем асăрхарĕ.

– Марине тĕрĕçе пĕлме пултарчĕ-и? Ăна кам пулăшрĕ?

– Маринен аслашшĕ мĕн турĕ?

– Кантăка кам илемлетнĕ тĕрĕпе? Маринен питне кам хĕретнĕ?

– Çапла, Хĕл Мучи.

– Тĕрĕсем тĕрленисĕр пуçне тата мĕн тăвать Хĕл Мучи? Воспитатель ачасене Н. Пăрчăкан çырнă сăвва аса илме пулăшать.

*Пăрланатарчĕ шывсене,*
*Шăнтса лартрĕ çулсене.*
*Мамăк юр вăл çутарать,*
*Çил-тăман та кăларать.*

*Тытса пăхрĕ сăмсана,*
*Хыпашларĕ хăлхана,*
*Чĕпĕтесшĕн пӳрнене,*
*Кăтартасшăн хăватне.*
*Туслă унпа çил ачи,*
*Ячĕ унăн – Хĕл Мучи.*

– Пĕчĕк Марине те эсир пĕлнине пĕлет ĕнтĕ – Хĕл Мучи камне, вăл мĕн тунине. Халĕ эпĕ предложенисем пуçлăп, эсир вĕçлĕр: Хĕл Мучи шывсене ... (пăрлантарать), çулсене ... (шăнтса лартать), мамăк юра ... (çутарать), çил-тăман ... (кăларать), сăмсана ... (тытса пăхать), хăлхана ... (хыпашлать), пурнене ... (чĕпĕтет), пите ... (хĕретет), кантăк çине ... (ӳкерет, тĕрлет).

Воспитатель ачасене выляма сĕнет.

– Эпĕ Хĕл Мучи пулăп. Эсир – ачасем çакăнта пурăнатăр (пӳлĕм пĕр енне кăтартса). – урама тухасшăн, хăнана çитесшĕн (тепĕр „килĕ” пӳлĕмĕн тепĕр енĕ). Анчах та эпĕ сире шăнтса яма

пултаратăп.

Ачасем пӳлĕм пĕр енне тăраççĕ. Пӳлĕм варринче – воспитатель. Ачасен „килне" – пӳлĕмĕн тепĕр енне чупмалла. Воспитатель – Хĕл Мучи ачасене шăнтасшăн (тытасшăн).

Вăл ачасем енне çаврăнса калать:

*Эп хавасла Хĕл Мучи,*
*Манпа тусла Çил ачи*
*Юрататăп выляма,*
*Пурте тухăр урама*

Кама Хĕл Мучи „шăнтма" ĕлкĕрет – вăл вăйăран тухать.

Каярахпа вăййа анлăлатма, йывăрлатма пулать. Ачасем чупса кайиччен çак сăмахсене калама пултараççĕ.

*Пурте харăссăн калар:*
*Çук, эпир хăравçă мар*. (Чупаççĕ).

Тытнисем хăйсене ăçта чарнă çавăнта тăрса юлаççĕ. Аллисене сарса тăрса юлнисене чупса каçма чăрмантараççĕ. Шăнтнисем нумайланса кайсан вăййа çĕнĕрен пуçламалла. Кама пĕрре те шăнтман – вăл çĕнтерет.

Ачасем чӳрече çинчи тĕрĕсемпе кăсăкланса кайсан воспитатель çак сăвва та итлеме сĕнме пултарать:

**Чӳрече юмахĕ**

*Юр пĕрчи асăрхануллăн,*
*Кулюкка чĕпти пекех,*
*Çĕр çине пусать. Салхуллăн*
*Чĕтренет çăка инке...*

*Хĕл Мучийĕ эрешленĕ*
*Кĕмĕлленнĕ кантăка:*
*Купăста унта ӳкернĕ,*
*Юнашар - выç куç така.*

*Пăх-ха, кашкăр-кашаманĕ*
*Шăл хăйрать ав, пит çиллес.*
*Такана çиме хăтланĕ...*
*Пулă пур, ăна чĕнес!*

*– Эй, итле-ха, ылтăн пулă,*
*Санпала тăвар йĕрке.*
*Эс, тархасшăн, кил-ха, пулăш,*
*Такана яр ирĕке!..*

*Куçпала мăч-мач тăвайрăм –*
*Кашаманĕ виç уран*
*Сиккелет аран-аран.*
*Тав туса пулла пуç тайрăм,*

*Такине çапла каларăм:*
*– Кай килне халь, асăрхан*
*Кашкăрпа тĕл пуласран.*
*Кăмака ăшăтнăран*
*Юмах тарчĕ кантăкран.*
*Хĕл Мучи ним тăваймарĕ,*
*Çиллине шăнараймарĕ,*
*Юр вĕçтерчĕ çĕрĕпе...*
*Ыйха путрăм ерипе.* (Иван Чермаков)

**2-мĕш калаçу**
Ю. Силэмĕн „Кăвак сурăх" калавĕ

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, эсир кăвак сурăх çинчен илтнĕ-и?

– Çук çав, шурă та мар, хура та мар. Шурă, хура сурăхсем сирĕн килте пуррине пĕлетĕп-ха. Эпĕ кăвак сурăх çинчен ыйтатăп.

– Пĕлместĕр апла. Çапах та эсир ăна кашниех курма пултарнă. Тен, эсир çак калаври Илюш пек тимлех пулман. Çавăнпа асăрхаман. Каласа парас-и, Илюш кăвак сурăха мĕнле курма пултарни çичен. Ну, итлĕр апла. Калавĕ „Кăвак сурăх" ятлă. Авторĕ – Юлия Силэм.

**Кăвак сурăх**

*Тулта сивĕ хĕл кунĕ. Пĕчĕк Илюш алăка яриех уçса ячĕ те пӳлĕме кĕрсе тăчĕ.*

*– Уй, мĕн чухлĕ «кăвак» сурăх илсе кĕтĕн эсĕ хăвăнпа пĕрле, – терĕ çакна асăрханă ашшĕ.*

*– Ăçта? Мĕнле сурăхсем? – ăнланаймарĕ Илюш.*

*– Авӑ эсӗ куриччен тӗпелелле иртрӗç, – ытарлӑн кулчӗ ашшӗ. Тӗлӗннӗ Илюш унталла-кунталла пӑхкаларӗ, анчах нимӗн те асӑрхамарӗ.*

*– Санпа пӗрле пӳрте кӗнӗ сивӗ сывлӑш пирки калатӑп эпӗ, – ӑнлантарчӗ ашшӗ. – Тимлӗрех, сӑнарах пӑхсам.*

*Чӑнах та, сивӗ сывлӑш кӑвак сурӑх пекех курӑнать иккен. Пӳртре ункӑн-ункӑн явкаланса малалла куçать.* (Ю. Силэм)

– Мӗнле, ачасем, курнӑ пек-и эсир кӑвак сурӑха?

– Чӑнах та кӑвак сурӑх пек-и тултан ӑшӑ пӳрте кӗрекен сивӗ сывлӑш?

– Тимлӗ пулсан тем те асӑрхама пулать иккен.

Кирлӗ сӑмахсем тупса пуçланӑ предложенисене вӗçлеме пулӑшсамӑр мана:

– Тулта сивӗ сывлӑш. Пӳртре вара –... . Тӗрӗс ӑшӑ.

– Сивӗ – хӗлле, ӑшӑ –... . Тӗрӗс, çулла.

– Хӗлле шывсем пӑрланаççӗ, ӑшӑтсан вара –... . Çапла, ирӗлеççӗ.

– Хӗлле юр çӑвать, çулла – ... . Тӗрӗс, çумӑр.

Ачасен кӑмӑлне кура хӑнӑхтарӑва малалла та тӑсма юрать: уçса ячӗ – хупса хучӗ, кӗчӗ –тухрӗ, тӑчӗ – ларчӗ, каларӗ – чӗнмерӗ.

### 3-мӗш калаçу

Ю. Силэмӗн „Шак-шак-шак" калавӗ

*Ĕç йӗрки.* Юлия Силэм çырнӑ тепӗр калав вулар-ха паян. Вӑл „Шак-шак-шак" ятлӑ. Мӗн çинчен-ши ку калав? Кам мӗнле шутлать?

### Шак-шак-шак

*Верукпа Манюк – тантӑшсем. Кирек ӑçта та пӗрле вӗсем. Мӗнле кӑна вӑйӑ пӗлмеççӗ пулӗ тата: пытанмалла та, куç хупмалла та, кушакпа шӑшилле те... Пӗр вӑйӑ теприне улшӑнать.*

*Паян та иртеннех пӗрле икӗ тантӑш. Хӑналла выляма шутларӗç вӗсем. Часах хӑма татӑкӗсенчен икӗ „пӳрт" пулса та ларчӗ, мӑрйи те тухрӗ.*

*Пурне те йӗркелесе çитерсен Манюк тантӑшне хӑнана чӗнме кайрӗ. Верук пурӑнакан „çурт алӑкӗ" патне пычӗ те сасӑпа: „Шак-шак-шак!" – терӗ.*

*Çакна илтсен тантăшĕ кулсах ячĕ.*

*– Сасăпа шак-шак темеççĕ, Манюк. Алăка пӳрнесемпе е алăпа шакаççĕ. Хăнана вара хаваспах пыратăп эпĕ.* (Ю. Силэм)

– Тантăшсем мĕн ятлă?

– Вĕсем вылякан вăйăсене эсир пурне те пĕлетĕр-и?

– Пытанмалла та, куç хупмалла та, кушакпа шăшилле те пĕлетĕр апла. Хăшне выльăпăр-ха? (Суйласа илсе выляççĕ).

**4-мĕш калаçу**

Ю. Силэмĕн „Килнĕ чухне илĕпĕр" калавĕ

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, Ю. Силэмĕн ачасем çинчен çырнă калавсем татах та пур. Паян ак ун тепĕр калавне вулăпăр. Ю. Силэм. Килнĕ чухне илĕпĕр.

**Килнĕ чухне илĕпĕр**

*Ленăпа асламăшĕ кӳршĕ яла каяççĕ. Асламăшĕ йăтнă çĕклем самаях пысăк. Темиçе хутчен те вĕсем канса илкелерĕç. Çапах та çул ывăнтаратех.*

*Асламăшне тем пекех пулăшĕччĕ Ленук, анчах пĕчĕк-çке вăл. Çĕклеме йăтса пăхрĕ те вырăнтан та хускатаймарĕ. Пурпĕрех асламăшне пулăшмалли мел шутласа тупрех хĕр ача.*

*– Асанне, атя ку япаласене çул çине лартса хăварар. Таврăннă чухне илĕпĕр, – хĕпĕртесе пĕлтерчĕ вăл.* (Ю. Силэм)

– Кам çинчен ку калав?

–Ленукпа асламăшĕ ăçта каяççĕ?

– Ленука мĕн канăç памасть?

– Асламăшне пулăшмалли мĕнле мел шутласа тупрĕ хĕр ача?

– Асламăшĕ хĕр ача сĕннине турĕ-ши?

– Лена асламăшне юрататать-и?

**Пĕтĕмлетӳ занятийĕ**

*Заняти тĕллевĕ:* итленĕ хайлавсене аса илтересси.

*Кирлĕ материал:* Ю. Силэм калавĕсене сăнлакан иллюстрацисем („Кăвак сурăх", „Кантăка кам тĕрленĕ?"), „Килнĕ

чухне илĕпĕр” калава выляса илмелли теттесем, кашни ача валли кантăк евĕр касса кăларнă таса хут.

*Заняти йĕрки:*

– Ачасем, тупмалли юмах парас тетĕп сире. Пĕлеетĕр-ши тупсăмне? *Пÿрте шур сурăх кĕртсе ятăм, пăхса тăрсах çухатрăм.* Мĕн-ши ку?

– Тĕрĕс, сивĕ пăс.

– Шурă сурăх тени сире мĕне аса илтерет?

– Çапла, эпир нумай пулмасть пĕчĕк Илюш çинчен вуланăччĕ. Шăпах вăл шыратчĕ те пÿртре кăвак сурăхсене.

– Çак ÿкерчĕксенчен хăшĕ Ю. Силэмĕн „Кăвак сурăх” калавне аса илтерет?

Воспитатель ачасене „Килнĕ чухне илĕпĕр” калав сюжетне пуканесемпе выляса парать.

Пĕчĕк хĕр ача сассипе воспитатель: *Эпĕ Лена ятлă. Асаннепе кÿршĕ яла каятпăр. Акă ман асанне*. (Воспитатель Лена патне тепĕр пукане шуçтарса пырать).

Асламăшĕ: Каяр пуль, Лена.

Лена: Кайрăмăр, кайрăмăр, асанне.

Асламăшĕ: Халех, çак çĕклеме çавăрса хурам та.

Воспитатель: Утрĕç мăнукĕпе асламăшĕ кÿршĕ яла.

Асламăшĕ: Тем, ывăнтарчĕ, ларса канар пуль мăнукăм?

Лена: Юрать, асанне.

Воспитатель: Утрĕç вĕсем малалла.

Асламăшĕ: Тепре канса илер-ха.

Лена: Юрать, асанне. Хăйпе калаçнă пек: Асаненне мĕнле пулăшас-ши? Хам йăтам-ха ку çĕклеме (йăтасшăн). Çук, пултараймастăп, ытла та йывăр. Эх, мĕнле пулăшмалла-ши ĕнтĕ? (шутлать). Савăнса кайса: Асанне, атя ку япаласене çул çине лартса хăварар. Таврăннă чухне илĕпĕр.

Асламăшĕ: Эх, ачам, маттурскерĕм эсĕ ман!

Воспитатель: Кайрĕç тăвансем малалла.

– Аса илтĕр-и? Мĕнле калавран пулчĕç Ленăпа ун асламăшĕ?

– Ку ÿкерчĕк тата мĕнле калава аса илтерет?

Воспитатель „Кантăка кам тĕрленĕ?” калаври иллюстрацине кăтартать. Ачасем калава аса илсе каласа параççĕ.

Ачасем, эпир те хĕл мучисем пулар-и? Çак кантăксем çине ÿкерер мар-и?

## Виççĕмĕш эрне. Ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсем

Виççĕмĕш эрнере ачасене чăваш ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсемпе паллаштаратпăр.

*Ĕç тĕллевĕ*: ачасене чăваш ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсемпе малалла паллаштарасси, вĕсене итлес кăмăла аталантарасси, хăйсен вăйййисенче усă курма хăнăхтараса пырасси.

### 1-мĕш калаçу
Мулкач юрри

*Кирлĕ материал:* тетте-мулкач (е ÿкерчĕк).

*Ĕç йĕрки.*

– Çулла сăрă, хĕлле – шурă. Кам пĕлет, мĕн ку?

Воспитатель ачасене тетте-мулкач (ÿкерчĕк) кăтартать. (Мулкач ачасене сывлăх сунать).

Воспитатель ачасене мулкача сăнама хистет.

– Мулкач тус, меллĕрех лар-ха, ачасем сана лайăхрах курса юлччĕр.

– Мулкачăн хăлхисем мĕнле?

– Çапла, вăрăм, питĕ сисĕмлĕ.

Мулкач та калаçăва хутшăнать: Эпĕ сас-чĕве аякранах илтетĕп.

– Мулкачăн тути мĕнле?

– Çапла, мулкача катăк тута теççĕ.

Мулкач: Çапла çав.

– Мулкачăн куçĕ мĕнле?

– Тĕрĕс, мулкачăн куçĕ пысăк, чармак.

Мулкач: Эсир тата ман урасем çинчен калама мантăр.

– Ачасем, мулкачăн урисем мĕнле?

– Çапла, малти урисем мулкачăн кĕске.

Мулкач: Тĕп-тĕрĕс Эпĕ сире мĕншĕн çапла пулнине те каласа пама пултаратăп.

Хаваспах итлĕпĕр. Çапла вĕт, ачасем?

**Мулкач юрри**

*Шăн пăр çине тапа-тапа*
*Урам кĕске пулчĕ.*
*Йывăç хуппи кăшла-кăшла*
*Тутам катăк пулчĕ.*

*Сут ҫăлтăра сăва-сăва*
*Куҫăм чармак пулчĕ.*

Воспитатель ачасене карталанса тăма ыйтать, мулкачĕ (воспитатель ăна хăй аллине илет) – карта варрине кĕрсе ларать. Ачасем ун тавра ҫаврăнаççĕ, алă ҫупса юрлаççĕ:

*Мулкач, уя тух* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, уя тух* (2 хут)
(Мулкач тухать)
*Мулкач, сада кĕр* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, сада кĕр* (2 хут)
(Мулкач кĕрет)
*Мулкач, купăста ҫи* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, купăста ҫи* (2 хут)
(Мулкач ҫиет)
*Мулкач, алпа ҫуп* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, алпа ҫуп* (2 хут)
(Мулкач ҫупать)
*Мулкач, шывне ĕҫ* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, шывне ĕҫ* (2 хут)
(Мулкач ĕҫет)
*Мулкач, таша яр* (2 хут)
*Вăт-вăт-вăт, таша яр* (2 хут)
(Мулкач ташлать).
Черечĕпе тепри тухать.

Занятие вĕҫĕнче мулкач хăйĕн юррине тепре юрласа парать.

**2-мĕш калаҫу**

„Вĕшлепе куянла" вăйă

*Кирлĕ материал:* тетте-мулкач (ҫук пулсан мулкач ĕмĕлкине кассан та юрать), тетте-йытă.

*Ĕҫ йĕрки.* Ачасем патне паллакан мулкач килет.

Мулкач: Палларăр-и мана? Иртнинче мана сирĕнпе выляма питĕ килĕшрĕ. Акă татах килтĕм.

– Питĕ аван Мулкач тус. Тен, хăвăн юрруна юрласа савăнтарăн?

Мулкач: Хаваспах (юрлать):

*Шăн пăр ҫине тапа-тапа*

*Урам кӗске пулчӗ.*
*Йывăç хуппи кăшла-кăшла*
*Тутам катăк пулчӗ.*
*Çут çăлтăра сăва-сăва*
*Куçăм чармак пулчӗ.*

Мулкач: Ай-ай-ай! (мулкач „тарса" пытанать).

– Мӗн пулчӗ Мулкач тусăмăра? Мӗнрен хăраса кайрӗ вăл?

Воспитатель сӗтел çине тетте-йытă кăларать.

Йытă: Салам, ачасем! Эсир мӗн тăватăр кунта?

– Мулкач туспа калаçаттăмăр та.

Йытă: Ăçта вара вăл сирӗн Мулкач тусăн? Тем, курмастăп ăна.

– Вăл санран хăраса пытанчӗ.

Йытă: Ахалех! Эпӗ хуçан кил-çуртне сыхланă чух çеç хаяр пек курăнатăп. Пӗччен сăнчăрта ларса ывăнтăм, кичем. Сирӗнпе пӗрле выляса-кулса савăнма май пулсан тем пекехчӗ.

– Апла, ачасем, мулкача чӗнер. Ун юррине юрласа парар-и? Мулкач илтӗ те кунта хăрушлăх çуккине ăнланса таврăнӗ. Юрлаççӗ, мулкач тухать.

– Мулкач тус, ан хăра. Ку йытă ырă. Вăл прӗнпе вылясшăн. Тен, иксӗр выляма пуçлăр?

Диалога йытă пуçлать.

*– Эсӗ кам?*
*– Эпӗ хам.*
*– Эсӗ хăвне пӗлетӗп,*
*анчах ятна пӗлместӗп.*
*– Ятпа чӗнсен – ятлăскер,*
*калама çук хаклăскер.*
*– Апла пулсан – тытатăп,*
*тытатăп та сутатăп.*
*– Тытаймастăн, эп – куян,*
*вăрманалла таракан.*
*– Эпӗ вӗшле пулатăп,*
*сан хыçăнтан чупатăп.*
*– Вӗшле пулсан – вӗшле пул,*
*ман хӳрене курса юл!* (Вӗшлепе куянла)

Куян тарать, вӗшле хăвалать.

Воспитатель теттесене ачасене парать. Малалла теттесен ячӗпе

ачасем калаҫаҫҫӗ, выляҫҫӗ.

### 3-мӗш калаҫу

Хӗвел ӑҫта ҫывӑрать?

*Кирлӗ материал*: „Мӗн ӑҫта пурӑнать” дидактика вӑййи, фланеграф валли ӳкерчӗксем: хӗвел, тӳпе, пӗлӗт, Ҫил мучи.

*Ӗҫ йӗрки.* Воспитатель ачасене „Мӗн ӑҫта пурӑнать” дидактика вӑййи сӗнет. Ачасемпе пӗрле мӗн ӑҫта пурӑннине палӑртаҫҫӗ: йытӑ ӳкерчӗкне йытӑ ӳпли ӳкерчӗкӗпе, кайӑка ун йӑвипе,чӑхха – витипе, лашана лаша витипе, кашкӑра кашкӑр йӑвипе, тилле – шӑтӑкпа (йӗнӗпе) ҫыхӑнтараҫҫӗ.

– Ачасем, куратӑр-и кашнинех хӑйӗн ҫурчӗ, ҫывӑрмалли кӗтес пур.

Мӗнле шутлатӑр, хӗвел ӑҫта ҫывӑрать-ши?

Эпӗ сире ҫакӑн ҫинчен сӑвӑ каласа парӑп, итлӗр.

*– Хӗвел ӑҫта ҫывӑрать?*
*– Кукамӑшпе юнашар.*
*– Кам-ха ун кукамӑшӗ?*
*– Ҫӳллӗ те кӑвак тӳпе.*
*– Вӑл мӗскерпе витӗнет?*
*– Ҫӑм пек ҫемҫе пӗлӗтпе.*
*– Кам ӑна витсе ярать?*
*– Ун аслашшӗ – Ҫил мучи.*

– Сире, сӑвӑ килӗшрӗ-и?

– Мана та кӑмӑла кайрӗ. Хӗвел кампа юнашар ҫывӑрать?

– Мӗнпе витӗнет?

– Витекенӗ вара кам?

– Тепре вуласа парам-ха. Итлӗр. (Калать, фланеграф ҫине кӑларса пырать).

– Ачасем, Ҫил мучи выляса кайрӗ. Пӗлӗт хӗвеле хуплаймасть. Хамӑр пулӑшар ӑна, витсе ярар.

Воспитатель ачасене ҫил пек вӗрме ыйтать. Ача вӗрнӗ май „пӗлӗт” кирлӗ ҫӗре „куҫать”.

**4-мĕш калаçу**

Вăрманпа ту хыçĕнчен...

*Кирлĕ материал:* такмак сюжетне, çынсем тĕрлĕ транспорт çинче пынине сăнлакан ӳкерчĕксем.

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене çынсем тĕрлĕ транспорт çинче пынине сăнлакан ӳкерчĕксене сăнама сĕнет.

– Мĕнпе кăна çитме май çук кирлĕ çĕре!

Воспитатель ачасем пулăшнипе пĕтĕмлетет: шоссепе ...(ачасем хутшăнаççĕ): çăмăл машинăпа кайăпăр); тинĕсре ... (карапппа ишетпĕр), çӳллĕ ту леш енне ... (самолетпа çитĕпĕр) тата ытти те.

Воспитатель тепĕр ӳкерчĕке пăхма сĕнет. Хăй ăшшăн кулать, ачасене тимлĕн итлеме ыйтать:

*Вăрманпа ту хыçĕнчен*
*Якуркка килет иккен:*
*Хăй пырать лаша çинче,*
*Арăмĕ – ĕне çинче,*
*Ачисем – пăру çинче,*
*Мăнуксем – путек çинче.*

– Килĕшрĕ-и, ачасем сăвă?

– Эсир мĕнрен кулатăр?

– Яккурка килет тенĕ. Ăçта кайнă-ши вăл?

– Мана сăвва аса илме пулăшсамăр. Ачасем ӳкерчĕк çине пăхса вĕçлеме пулăшаççĕ:

*Вăрманпа ту хыçĕнчен*
*Якуркка килет иккен:*
*Хăй пырать ... (лаша çинче),*
*Арăмĕ ...( ĕне çинче)*
*Ачисем ... ( пăру çинче)*
*Мăнуксем ...(путек çинче).*

**Пĕтĕмлетӳ занятийĕ**

*Занятий тĕллевĕ:* итленĕ хайлавсене аса илтересси, „Михетерĕн качакин ...” йăпатмалли сăвăпа паллаштарасси.

*Кирлĕ материал:* мулкач тата йытă медальонĕсем (пуç кăшăлĕ пек тусан та аван), çут çанталăк пулăмĕсене (хĕвел, пĕлĕт, тӳпе)

сăнлакан ўкерчĕк.

*Заняти йĕрки.*

– Ачасем, тупмалли юмах шутлаттарасшăн эпĕ сире.

*Асатте хапхи уçăлчĕ*

*Асанне çăмхи курăнчĕ.*

– Мĕн ку? Тупсăмĕ ўкерчĕк çинче пур.

– Тĕрĕс, хĕвел. Мĕнле пĕлтĕр?

– Хĕвел тўпене тухса пире кашни кун хăйĕн ăшшипе, çутипе савăнтарать. Çанталăк хĕвеллĕ – эпир те телейлĕ.

– Эпир хĕвел çинчен мĕнле сăвă пĕлетпĕр?

Паян эпĕ ку сăвва аласемпе каласа парăп.

| | |
|---|---|
| *– Хĕвел ăçта сывăрать?* | Пўрнесене сарса икĕ алла хĕреслет. Хулпуççисене çўллеле çĕклесе илет. Аллипе пуçелĕк туса пуçĕ айне тытать. |
| *– Кукамăшпе юнашар.* | Кăкăр умĕнче аллисене пĕрлештерет. |
| *– Кам-ха ун кукамăшĕ?* | Хулпуççисене çўллеле çĕклесе илет. |
| *– Çўллĕ те кăвак тўпе.* | Аллисене пуç тăрринче пĕрлештерет. |
| *– Вăл мĕскерпе витĕнет?* | Хулпуççисене çўллеле çĕклесе илет. |
| *– Çăм пек çемçе пĕлĕтпе.* | Мамăк тытнă пек тăвать. |
| *– Кам ăна витсе ярать?* | Хулпуççисене çўллеле çĕклесе илет. |
| *– Ун аслашшĕ – Çил мучи.* | Витнĕ пек ачашласа илет. |

Воспитатель ачасене хусканусене пĕрле туса пыма сĕнет.

– Халĕ выляса илер. Воспитатель ачасене „Вĕшлепе куянла" вылямa сĕнет. Шут сăввипе мулкачпа вĕшлене палăртаççĕ:

*Эп Гагарин, эс – Титов,*

*Вăл – Валерий Соколов.*

*Андриан пекех матур*

*Кам пуласшăн?*

*Тух Якур!*

Вăййа 2-3 хут выляса илеççĕ.

– Туслă вылятпăр, пĕр-пĕрне кўрентерместпĕр. Пирĕн кунта йăлăнтармăшсем те çук. Апла Михетерĕн качакинчен хăрамастпăр.

– Мĕнле Михетерĕн качаки тетĕр-и? Каласа паманччĕ-и эп сире ун çинчен? Апла пулсан итлĕр:

*Михетерĕн качакин*

*Шăлтăр-шăлтăр мăйраки*

*Икĕ юплĕ сенĕк пек.*
*Вăрăм сухалне сиплет.*
*Йăлăнтармăш çук-и тет,*
*Кам итлемест, мук!тăвап тет.*

Юлашки йĕркене вуланă май воспитатель кирлĕ хусканусене тăвать.

**Тăваттăмĕш эрне. Тĕрлĕ халăх юмахĕсем**

Ку эрнере тĕрлĕ халăх юмахĕсемпе паллаштаратпăр.

*Ĕç тĕллевĕ*: юмахсене ăнланма пулăшасси, содержанийĕ тăрăх панă ыйтусене хуравлас хăнăхăва аталантарасси.

**1- мĕш калаçу**

Кутăн качакасем (узбек халăх юмахĕ)

*Кирлĕ материал*: фланелеграф

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, эсир „кутăн ача" тенине илтмен-и?

– Мĕнле ачана çапла калаççĕ?

– Пирĕн хушăра ун пеккисем çук пуль?

– Эпир юнтарма та, йăлăнтарма та юратмастпăр. Эпир кутăн мар.

– Ачасем, эпĕ икĕ кутăн качака çинчен юмах пĕлетĕп. Итлес килет-и, сирĕн çак качакасем çинчен? Каласа парам апла. (Воспитатель юмаха каласа, кăтартса пырать).

**Кутăн качакасем (узбек халăх юмахĕ)**

*Пурăннă тет тĕрлĕ ялта икĕ качака: пĕри шурă, тепри хура. Иккĕшĕ те вĕсем кутăн пулнă тет.*

*Пĕррехинче качакасем курăк çиме кайрĕç тет: шурри – хăйĕн çаранĕ çине, хури – хăйĕн çаранĕ çине.*

*Каçхине хĕвел аннă чухне хайхисем ялĕсене утрĕç тет. Пĕр çинçе каçă çинче пĕр-пĕрне тĕл пулчĕç тет çаксем. Каçмине вара тарăн арык ( А р ы к –шăвармалли канав) урлă хунă тет.*

*Качакисен каçă çинче пĕр-пĕринчен ниепле те иртме çук тет. Хашĕн те пулин çул памалла.*

*– Эй, хураскер, пăрăн, çул пар мана! – кăшкăрса ячĕ тет шур качаки.*

*– Ак тата! Çул парăп-и сана! – кăшкăрчĕ тет хирĕç хури. – Хав мана çул пар!*

*– Çĕр каçипе тăрсан та памастăп! – тет шурри.*

*– Ирччен тăрăп – вырăнтан хускалмăп! – тет хури. Нумайччен тавлашрĕç тет кутăн качакасем. Вара сухалĕсене силлесе илчĕç те урисемпе тăпăртатма пуçларĕç – çапăçма тытăнчĕç тет. Унтан виçшер утăм каялла чакрĕç тет те мăйракаллă пуçĕсене усса пĕр-пĕрин çинелле ыткăнчĕç тет. Çамкисемпе çапăнчĕç, мăйракисемпе çыхланчĕç, вара иккĕшĕ те арыка ÿкрĕç тет.*

– Ну, мĕнле пек сире кутăн качакасем? Эх-ха-хай, шел ку качакасене. Хăйсен кутăнне пула инкеке çакланчĕç. Мĕнле тухĕç ĕнтĕ вĕсем тарăн канавран?

– Юмах мĕнле сăмахсемпе пуçланать? *Пурăннă тет тĕрлĕ ялта икĕ качака: пĕри шурă, тепри хура. Иккĕшĕ те вĕсем* <u>*кутăн*</u> *пулнă тет.*

– Качакасем кутăн пулни мĕнрен курăнчĕ?

– Итлĕр-ха вĕсем пĕр пĕринпе мĕнле хирĕлеççĕ:

*– Эй, хураскер, пăрăн, çул пар мана! – кăшкăрса ячĕ тет шур качаки.*

*– Ак тата! Çул парăп-и сана! – кăшкăрчĕ тет хирĕç хури. – Хав мана çул пар!*

*– Çĕр каçипе тăрсан та памастăп! – тет шурри.*

*– Ирччен тăрăп – вырăнтан хускалмăп! – тет хури.*

**2-мĕш калаçу**

Кутăн качакасем (узбек халăх юмахĕ)

*Ĕç йĕрки.* Воспитатель ачасене „Кутăн качакасем' юмаха аса илтерет. Выляма сĕнет.

– Мăнтарăн качакисем... Хăйсен çаранĕсем çине кашни кунах çÿреççĕ ĕнтĕ. Апла, çакăн пек каçма çинче тĕл пуласси татах та пулĕ-ха вĕсен...

– Ачасем, тен ку качакасем пĕр-пĕринпе мĕнле хутшăнмаллине пĕлсех каймаççĕ? Пĕр-пĕрне кÿрентермесĕр, хирĕлмесĕр каçма пулатчĕ-ши вĕсен каçма тăрăх? Атьăр шутласа пăхар. Тен, эпир качакасене пулăшайăпăр?

Воспитатель ачасене юмаха вĕçлемелли ытти вариантсене

тупма пулăшать.

**3-мĕш калаçу**

Кушак мĕншĕн апат хыççăн çăвăнать? (Литва халăх юмахĕ)

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, эпир сирĕнпе çăвăнмасăр апата лармастпăр. Мĕнле шутлатăр, чĕр чунсен çак йăла пур-ши?

– Эсир асăрханă-и, кушаксем апат çинĕ хыççăн тасалма пуçлаççĕ. Эп каласа парас тенĕ юмахра вĕсем мĕншĕн çапла тунине ăнлантарса панă. Ку литва халăх юмахĕ.Ячĕ – „Кушак мĕншĕн апат хыççăн çăвăнать?"

**Кушак мĕншĕн апат хыççăн çăвăнать?**
**(Литва халăх юмахĕ)**

*Пĕррехинче хресчен килкартине çерçи вĕçсе кĕнĕ те тырă сăхма тытăннă.*

*Çерçи курăк çийĕн сиккеленĕ, пĕрчĕ хыççăн пĕрчĕ хыпнă. Кил хуçи кушакĕ ăна кĕтесрен вăрттăн сăнаса тăнă. Сасартăк вăл çерçи çине кап! кăна сикнĕ. Ана çунатĕнчен ярса илнĕ.*

*– Паян ман ирхи апат япăхах пулмасть, – мăрлатнă вăл.*

*– Чимĕр-ха, чимĕр, кушакăм! – чĕвĕлтетнĕ çерçи. – Нивушлĕ эсир мана çиесшĕн?*

*– Çимесен мĕн тăвас-ха санпа? – тенĕ хаяррăн кушак. Хăй çерçин пуçне халь-халь çыртса татас пек пăхнă.*

*– Намăса пĕлĕр-ха, кушакăм, – каллех чĕвĕлтетнĕ çерçи. – Эсир çăвăнма маннă пулас. Пĕлместĕр-им, сирĕн хуçăр та, хуçа майри те, çавăн пекех ытти çынсем те малтан çăвăнаççĕ, кайран ирхи апат çиеççĕ.*

*– Тĕрĕс калатăн пуль! – тенĕ те кушак питне-куçне, тути-çăварне лайăххах сăтăрас тесе тяппине тăснă.*

*Çерçийĕ нумай шухăшласа тăман, аяккалла вăшт! сикнĕ. Çунаттисемпе сулласа илнĕ те вĕçсе кайнă.*

*Кушак çав тери çилленнĕ.*

*– Ну, çу-ук, текех мана улталаймĕç! – тенĕ. – Çынсем хăйсене майлă туччăр. Эпĕ вара малтан апатланăп, кайран çăвăнăп.*

*Çавăнтанпа кушаксем апат хыççăн тин çăвăнаççĕ.*

– Сире юмах килĕшрĕ-и?

Воспитатель ачасене тытмалла выляма сĕнет. Тытаканĕ – кушак, тараканĕсем – çерçисем.

Çерçисем пурăнакан вырăна палăртать, тепĕр 5 метрта кушак пÿрчĕ. Унта воспитатель-кушак. Вăл „сывăрать".

Çерçисем, кушак çывăрать. Вĕçсе тухăр!

Ачасем „вĕçсе" тухаççĕ, алă-çунатсемпе суллаççĕ.

Воспитатель: «Кушак килет!..» – тет. Çак самахсем хыççăн çерçисем килнелле вĕçеççĕ, кушак вĕсене тытма пуçлать.

Тытнă çерçие кушак хăйĕн пÿртне илсе каять, вăйă малалла пырать.

Çерçисен çурчĕ вырăнне сак та, çĕр çине ÿкернĕ çаврака та пулма пултарать.

## 4-мĕш калаçу

Тилĕпе тăрна (вырăс халăх юмахĕ)

*Ĕç йĕрки.*

– Ачасем, ваттисем *„Çăкăр-тăвар хире-хирĕç"* тенине эсир илтнĕ-и? Çак ваттисен сăмахне эсир мĕнле ăнланатăр?

– Акă эпĕ сире хам сăнинчен каласа парам. Ĕнер Катя сĕтел хушшинче кĕнекери ÿкерчĕксене пăхса ларатчĕ. Ун патне Лена пычĕ. Вăл та Катьăпа пĕрле пăхасшăнччĕ... Анчах та Катя Ленăна хапăл тумарĕ. Лена вара паллах пăшăрханчĕ, килтен илсе килнĕ пуканипе выляма пуçларĕ. Кăшт вăхăт иртсен куратăп –Катя Лена еннелле пăхать. Кĕнекене хăварса вăл Лена пычĕ, анчах халĕ Лена ăна хăйĕн вăййине илме васкамарĕ. Катя хăйĕн йăнăшне ăнланса илчĕ те: Лена, каçар, кĕнекене пĕрле пăхма килĕшменшĕн, – терĕ. Туссем вара малалла чиперех пĕрле вылярĕç.

Паян эпĕ сире „Тилĕпе тăрна" ятлă вырăс халăх юмахне вуласа парăп. Вăл шăпах çак ваттисен сăмахĕпе килĕшÿллĕ.

### Тилĕпе тăрна (вырăс халăх юмахĕ)

*Тилĕпе тăрна туслă пулнă тет. Пĕррехинче вăл тăрнана хăна тума шутлать. Ăна хăй патне чĕнме каять:*

*– Тăрна тус, пыр ман пата хăнана! Эп сана пит шеп хăна туса ярăп, – тет.*

*Çитет тăрна тилĕ патне хăнана. Ăна кĕтсе тилли шĕвĕ пăтă пĕçернĕ тет. Вăл пăттине ăшăх турилкке çине сĕркелесе тăрна умне лартса парать.*

*– Çиех, тăрна тус, çи, тусăм! Хам пĕçертĕм, – сăйлать вăл.*

*Тăрна вăрăм сăмсипе турилле çинчи пăтта тăк-так, тăк-так тутарать – çăварне нимĕн те кĕмест. Тилли çав хушăра пăтта чĕлхипе йăшт та йăшт, йăшт та йăшт çулать.*

*Çисе ячĕ те калать:*

*– Ан айăпла, тусăм! Мĕн пурри, урăх нимĕн те çук, – терĕ тет.*

*– Тавтапуç, тилĕ тус. Ĕнтĕ пит аван хăна пултăм. Халь ман пата пыр, – тет тăрна.*

– Пит аван хăна пултăм тет-ха тăрна. Ачасем, вăл чăнах та пит аван хăна пулчĕ-и?

– Тăрна мĕншĕн хăналанаймарĕ?

– Чее тилĕ хăнана лайăх пăхса ячĕ-и?

– Тăрна сăпайлă. Хăйĕн чăн кăмăлне палăртмарĕ. Хăнана çеç чĕнсе хăварчĕ. Ачасем, сирĕн тилле вĕрентсе илес килмест-и? Вăл питĕ лайăх мар хăтланчĕ вĕт.

– Мĕнле шутлатăр, тăрна мĕнле хăналаса ярĕ-ши тилле?

– Малалла вуласа пĕлĕпĕр.

*Тепĕр кунне тилĕ тăрна патне хăнана çитет. Тăрна яшка пĕçерет те ăна тилĕ умне вăрăм мăйлă кăкшăма ярса лартать.*

*– Çиех, тусăм, çи! Ан айăпла, хăналама урăх нимĕн те çук, – тет хăй.*

*Тилĕ кăкшăм тавра кускалама тапратать. Кăкшăм хĕррине çулласа та илет, нăш-нăш шăршласа та пăхать – сĕлеке юхать, çăвара яшки пĕр тумлам та кĕмест. Тăрна хăйĕн вăрăм мăйне кăкшăма чиксе ячĕ тет те пĕтĕмпех çисе ячĕ тет.*

*– Айăп ан ту ĕнтĕ, тусăм, мĕн пуррипе кăмăлтан хăналарăм, – тесе ăсатать тăрна тилле.*

*Çакăнтан вара тилĕпе тăрна туслашман тет.*

– Мĕн пулса тухрĕ хальхинче? Тăрна мĕн пĕçерсе ăçта янине аса илĕр.

– Ачасем, тилĕ халĕ хăй тăрна вырăнĕнчех пулнине туйса илчĕ-ши?

– Юмах мĕнле сăмахсемпе вĕçленчĕ? (*Çакăнтан вара тилĕпе тăрна туслашман тет*).

– Мĕнле шутлатăр, тилĕпе тăрна туслă юлма пултаратчĕç-ши?

Вĕсен сирĕн шутпа мĕн тумаллаччĕ? Халĕ вĕсем мĕн тума пултарĕç?

**Пĕтĕмлетӳ занятийĕ**

*Заняти тĕллевĕ:* итленĕ хайлавсене аса илтересси,

*Кирлĕ материал:* „Кутăн качакасем" юмахри шурă тата хура тĕслĕ качакасен ĕмĕлкисем, карçинккапа кушак, „Тилĕпе тăрна" юмахри ӳкерчĕк, тилĕ тата тăрна маскисем.

*Заняти йĕрки.*

– Ачасем, паян сирĕнпе итленĕ юмахсене аса илĕпĕр.

– Камсем кăшкăрашаççĕ? (Воспитатель качака ĕмĕлкисене кăларса вĕсемпе выляса калаçать).

– *Эй, хураскер, пăрăн, çул пар мана!*

– *Ак тата! Çул парăп-и сана!*

– *Çĕр каçипе тăрсан та памастăп!*

– *Ирччен тăрăп – вырăнтан хускалмăп!*

– Аса илтĕр-и?

– „Кутăн качакасем" ятлă ку юмах.

– Мĕн çинченччĕ юмах?

– Ачасем, пĕлес килет-и мĕн ку карçинккара? (Карçинккана тутăрпа витнĕ). Çак сăмахсене кам калать: *„Сынсем хăйсене майлă туччăр. Эпĕ вара малтан апатланăп, кайран çăвăнăп"*.

– Тĕрĕс, Кушак. Кушак тусăмăр, тух-ха кунта.

– Кушак мĕншĕн çапла каланăччĕ? Юмаха аса илсемĕр.

– Халĕ çак ӳкерчĕк çине пăхсамăр. („Тилĕпе тăрна" юмахри иллюстраци).

–Мĕнле юмах аса килчĕ?

Воспитатель ачасене юмаха выляса кăтарма сĕнет. Маскăсене парать, пулăшса пырать.

## Усă курмалли хайлавсем

| Уйăхсем | Эрнесем | Тема | Хайлавсен ячĕсем |
|---|---|---|---|
| Сентябрь | 1 | Чăваш ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсем | Сăпка юррисем: „Нянине-паппине", „Ачине паппине" |
| | | | „Ултă кăвакал улăхра" |
| | | | Ыйхăран вăрансан каламаллисем: „Пысăк пул", „Каçа, каçа..." |
| | | | Илĕртмелли сăвă-такмак |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ: кăтăк такмакĕ, „Мулкач уя тух" |
| | 2 | А. Барто сăввисем | „Мишка" |
| | | | „Лаша" |
| | | | „Качака таки" |
| | | | „Мечĕк" |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ |
| | 3 | Юмахсем | „Çарăк" вырăс халăх юмахĕ |
| | | | „Çарăк" вырăс халăх юмахĕ |
| | | | „Сармантей" чăваш халăх юмахĕ |
| | | | „Сармантей" чăваш халăх юмахĕ |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ |
| | 4 | И. Я. Яковлев калавĕсем | „Автан" |
| | | | „Чакак" |
| | | | „Йăлăнтарни" |
| | | | „Эпĕ ӳкĕнни" |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ |
| Октябрь | 1 | Юмахсем | „Йăва" вырăс халăх юмахĕ |
| | | | „Кермен" вырăс халăх юмахĕ |
| | | | „Упапа хĕр ача" вырăс халăх юмахĕ |
| | | | „Тилĕ тус" чăваш халăх юмахĕ |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ |
| | 2 | Кĕркунне çинчен сăвăсем | „Çитрĕ сарă кĕркунне" Н. Пăрчăкан |
| | | | „Çулçăсем" В. Эктел |
| | | | „Кĕр парни" Л. Николаева |
| | | | „Кăмпара" Л. Николаева |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ („Ума вĕçсе ӳкрĕ" |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | Н. Теветкел, „Ылтăн кĕркунне" Н. Силпи) |
| | 3 | Н. Калинина, В. Сухомлинский, Я. Тайц калавĕсем | „Вася пулă тытни" Н. Калинина |
| | | | „Автан Васук çăкăрне вăрлани" Н. Калинина |
| | | | „Вăрманта" Н. Калинина |
| | | | „Панулми" В. Сухомлинский |
| | | | „Кăранташ" Я. Тайц |
| | 4 | Йăпатмалли сăвăсем, тупмалли юмахсем | Тупмалли юмахсем |
| | | | „Кушак тусăн кĕрĕкĕ" |
| | | | Тупмалли юмахсем |
| | | | Йăпатмалли сăвăсем |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ |
| Ноябрь | 1 | Авторсен юмахĕсем | „Çăмха" Н. Васильев |
| | | | „Çăмха" Н. Васильев |
| | | | „Кунтăк", Н. Васильев |
| | | | „Кунтăк" Н. Васильев |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ („Чăх чĕппипе кăвакал чĕппи" В. Сутеев) |
| | 2 | Ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсем | „Пукани, пукани", „Пĕчĕкçеç путене" |
| | | | „Ăçта кайрăн кушак тус?" |
| | | | „Ларать, ларать Мишша ларать" |
| | | | „Ларать, ларать Мишша ларать" |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ |
| | 3 | Чĕрчунсем çинчен сăвăсем | „Чĕрĕ çăмха" Н. Пăрчăкан, „Мăр-мăр кушак" В. Харитонов |
| | | | „Хураçка" П. Эйзин, „Хураçкапа калаçни" А. Савельев-Сас, „Пĕчĕк йыттăм пур" А. Хум |
| | | | „Ай, автан" В. Давыдов-Анатри, „Икĕ автан" А. Галкин, „Пулăшу" В. Харитонов |
| | | | „Качака" Н. Васанкка |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ („Кушак çури" Ф. Иванов, „Хам" Н. Карай, „Шăши хăрать кушакран" П. Эйзин) |
| | 4 | А. Ыхран калавĕсем | „Ева садике каять" |
| | | | „Автобус, Ева тата дыня", „Юнтармăш", Николай Карай |
| | | | „Çерçи çумăрĕ" |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | „Ай, ўкетĕп!" |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ |
| Декабрь | 1 | Хĕле сăнлакан сăвăсем | „Юр" В. Эктел |
| | | | „Çитрĕç сивĕсем" А. Галкин, „Юр" Н. Шелепи |
| | | | „Хăрамастăп сивĕрен" Ю. Мишши |
| | | | „Савăнăçлăн чыслатпăр" З. Александрова |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ („Сивĕ" Н. Симунов) |
| | 2 | Ю. Силэм калавĕсем | „Кантăка кам тĕрленĕ?" |
| | | | „Кăвак сурăх" |
| | | | „Шак-шак-шак" |
| | | | „Килнĕ чухне илĕпĕр" |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ |
| | 3 | Ача-пăча сăмахлăхĕн хайлавĕсем | „Мулкач юрри" |
| | | | „Вĕшлепе куянла" |
| | | | „Хĕвел ăçта çывăрать" |
| | | | „Вăрманпа ту çысĕнчен" |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ |
| | 4 | Тĕрлĕ халăх юмахĕсем | „Кутăн качакасем" узбек халăх юмахĕ |
| | | | „Кутăн качакасем" узбек халăх юмахĕ |
| | | | „Кушак мĕншĕн апат хыççăн çăвăнать?" литва халăх юмахĕ |
| | | | „Тилĕпе тăрна" вырăс халăх юмахĕ |
| | | | Пĕтĕмлетӳ занятийĕ |

Тупмалли

Умĕн калани........................................................................ 3

Ачасен литература аталăнăвне тĕрĕслесси.................................... 4

Кĕçĕн çулхи ачасене литературăпа паллашатарас меслетлĕх...... 7

Конспектсен тĕслĕхĕсем............................................................ 18

сентябрь.......................................................... 18

октябрь.......................................................... 50

ноябрь.......................................................... 85

декабрь.......................................................... 112

Усă курмалли хайлавсем............................................................ 140

Учебное издание

Артемьева Тамара Васильевна
Михайлова Светлана Георгиевна

Литературное образование детей четвертого года жизни
в чувашском национальном детском саду

Учебно-методическое пособие

Подписано в печать 29.11.13. Формат 60×84/16.
Бумага писчая. Печать оперативная.
Усл. печ. л. 5,4. Тираж 100 экз. Заказ № 1669.

Согласно Федеральному закону «О защите детей от информации, причиняющей вред их здоровью и развитию» от 29 декабря 2010 года № 436-ФЗ данная продукция не подлежит маркировке

ФГБОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано в отделе полиграфии
ФГБОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

50.00